Т. ШЕВЧЕНКО

# КОБЗАРЬ

ЧАВАШГОСИЗДАТ 1954

От братских чувашских писателей — музею великого украинского кобзаря Тараса Шевченко —

переводчик поэмы «Гайдамаки» на чувашский язык и редактор книги Александр Алга

и переводчик поэмы «Катерина» — Георгий Ефимов

г. Чебоксары, 7 мая 1957 г.

перекладач кількох віршів поета —

Петро Хузангай

Київ, травень 1957р.

Т. ШЕВЧЕНКО

# КОБЗАРЬ

Чăваш АССР
Государство издательстви
Шупашкар
1954


Т Шевченко 1860

## *ТАРАС ШЕВЧЕНКО*

### 1

Чечеклĕ Украинăри колхозлă ялсен шутĕнче Украина аслă поэчĕ Тарас Григорьевич Шевченко ячĕпе хисепленекен пысăк та илемлĕ ял пур.

Сарлака та тӳп-турĕ урамсем, сад ăшĕнче ларакан çутă та илемлĕ çуртсем, вунă çул вĕренмелли шкул, техникум, библиотекăсем, музей — çаксем пурте ялăн пуян та культурăллă пурнăçĕ çинчен калаççĕ.

Тарас Григорьевич Шевченко хаяррăн та хурланса çырса кăтартнă Украина хресченĕн асаплă, йывăр пурнăçĕ ĕмĕрлĕхех çухалчĕ:

Епле хăрушă!
Эп ачаран ӳснĕ ялта,
Мĕн пурĕ юхăннă йăлтах.
Çынсем пуçне чиксе çӳреççĕ,
Çĕр тĕсĕ çапнă питсене;
Садсем çаралнă, ешермеççĕ,
Çил тайăлтарнă пӳртсене,
Мăк, курăк пуснă кӳлсене.
Ял çуннă, çунса кайнă, тейĕн...

Çак йĕркесене поэт çĕр çула яхăн каялла, хăй ача чухне пурăннă Кирилловка (халĕ Шевченко) ялĕ çинчен çырнă.

Тарас Григорьевич Шевченко 1814 çулхи март уйăхĕн 9-мĕшĕнче Киев кĕпĕрнинчи, Звенигород уездĕнчи Моринцы ятлă ялта çуралнă. Шевченко ашшĕ-амăшĕсем тата вĕсен пĕтĕм килйышĕ Энгельгардт помещикĕн крепостной хресченĕсем пулнă, питĕ пысăк нушалăхра пурăннă. Тарас виçĕ çул тултарсан, вĕсем çав помещик аллинчех тăракан Кирилловка ятлă яла куçнă. Ки-

рилловка хресченĕсен пĕчĕк çĕр татăкĕсем çеç пулнă, анчах вĕсем çак çĕр çинче те лайăх ĕçлеймен: помещик патĕнче пĕтĕм вăя хума тивнĕ. Хĕн-хурпа асапа, помещикăн тискерлĕхне Тарас çамрăклах пĕлсе çитнĕ. Тăхăр çула кайсан унăн амăшĕ вилнĕ. Тепĕр икĕ çултан вара ашшĕ те вилсе выртнă. Тăлăха тăрса юлнă хыççăн Тарас хăйне хĕрхеннипе çеç усракан ют çынсем патĕнче пурăнма пуçланă.

Вĕренесси вăл ĕçке ернĕ тиечуксем патĕнче вĕреннĕ. Унăн малтанхи кĕнекисем псалтырьпе часослав пулнă. Хăйне вĕрентнĕшĕн тата пĕр татăк çăкăршăн Тараса питĕ йывăр ĕçсем хушнă. Бугорский тиечук ачана хăйĕн тарçи туса хунă: Тарас шыв йăтнă, шкул çуртне тасатнă. Ĕçшĕн тав тăвас вырăнне ăна час-часах хĕненĕ. Çавăнпа та Тарас унтан тухса тарма тата хăйне пусмăрлакана тавăрма шут тытнă. Пĕррехинче вăл тиечук ӳсĕр выртнине курнă. Вара унăн ьухайккипех тиечука мĕн вăй çитнĕ таран хĕненĕ, унăн пĕтĕм тискерлĕхĕшĕн тавăрнă.

Пĕчĕк Тарас Бугорский тиечук патĕнчен тухса тарнă. Вара вăл пуп патĕнче кĕтӳçре пурăннă, малярсем патĕнче вĕреннĕ.

Яла час-часах иртен-çӳрен юрăççем: кобзарьсемпе лирниксем пыра-пыра кайнă. Вĕсем Украинăн иртнĕ пурнăçĕ çинчен тата ирĕклĕ казаксен тăшманĕсемпе—Польша панĕсемпе, тутарсемпе, тĕрĕксемпе хăюллăн çапăçни çинчен халăх юррисене юрланă. Итлекенсен куç умне гайдамаксем, хресчен-повстанецсен геройла ĕçсем туха-туха тăнă. Халăх ĕçĕшĕн çапăçнă кĕрешӳре вĕсем паттăрла та хăюллă пулнăшăн Тарас çав тери савăннă.

Ача, хăй ашшĕ çуртĕнче пурăннă вăхăтрах, Иван аслашшĕ хĕллехи вăрăм каçсенче ăна Украина казакĕсем Польша шляхтине хăйсен çĕрĕ çинчен мĕнле хăваласа яни çинчен кала-кала панă. Вăл Украина гетманĕсем Петр Сагайдачнăйпа Богдан Хмельницкий тата XVIII ĕмĕрте хресченсен восстанине ертсе пынă Гонтапа Железняк çинчен каласа кăтартнă. Ун чухнех ачан ăс-тăнĕнче пулас поэтăн «Гайдамаки» ятлă пысăк поэмăн сăнарĕсем çуралма пуçланă.

Тарас вунпилĕк çул тултарсан, Энгельгардт помещикăн управляющийĕ пултарулла ачана кил тавращĕнчи тарçă-тĕрçĕсен списокне кĕртнĕ.

Кунта вара Шевченко пусмăр айĕнче асаплă та йывăр пурнăçа уйрăммăнах туйса илнĕ. Малтан вăл кунта кухньăра повара пулăшнă, кайран «казачок»—помещик пӳлĕмĕнчи тарçă пулнă. Кашни пушă самантрах картинăсем ӳкерме ларнă, вăл çак ĕçе питĕ юратнă. Хăратнипе хĕненине пăхмасăрах, вăл хăй

мĕн курнине кăранташпа, кăмрăкпа, пурăпа—алла мĕн лекнĕ çавăнпа сăрласа ӳкерчĕксем тунă.

Хăйĕн панĕпе пĕрле Шевченко Киевпа Вильнора та пулнă. Иртен-çӳренсем кĕрсе выртмалли çурта чарăнсан, вăл Кутузов тата 1812 çулхи Отечественнăй вăрçă геройĕ Платов казакăн сăнĕсене ӳкернĕ картинăсенчен хăй ӳкерчĕксем туса илнĕ.

Помещик çуртĕнче нимĕн тумасăр пурăнни Шевченкона уйрăмах йăлăхтарса çитернĕ. Унăн малти пӳлĕмре, пĕр хускалмасăр, чĕнмесĕр, кунĕ-кунĕпе лармалла пулнă. Энгельгардт пĕрре чĕнсенех вара вăл ун пӳлĕмне чупса кĕнĕ, ăна е чăпăк илсе пынă, е ăссăр помещика хăйĕн сăмси айĕнчех ларакан графинран стаканпа шыв тултарса панă.

Ача хăй юратнă Украина халăхĕн юррисене шăппăн юрланă, Энгельгардтăн пуян хваттерĕнчи стенасем çинче çакăнса тăракан картинăсене вăрттăн ӳкере-ӳкере илнĕ.

Пĕррехинче—ку вăл 1829 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче Вильнăра пулнă — Энгельгардт дворянсен собранийĕн традицилле балне тухса кайнă. Пĕччен юлнă Шевченко-«казачок» çурта çутнă та лубочнăй картинăран Платов сĕнне ӳкерсе илме пуçланă. Пуç илми ĕçлесе ларнă пирки вăл хăйĕн панĕ килсе кĕнине те сисмен. Çамрăк художника Энгельгардт хăлхаран тăпăлтарнă, тепĕр кунне вара, улпут хушнипе, Сидорка кучер Тараса витере питĕ хытă хĕненĕ.

Энгельгардт Тарасран тарçă пулас çуккине курнă. Вара вăл ăна хăйĕн çуртĕнчи живописец тума шутланă.

## 2

1831 çул пуçламăшĕнче Энгельгардт çуртĕнчи ытти тарçăсемпе пĕрле Шевченко Петербурга çитнĕ.

Тепĕр çултан Энгельгардт Тараса Ширяев живописец патне вĕренме вырнаçтарнă.

Çапла вара, вунсакăр çула çитнĕ Тарас живописец ĕçне вĕренме май илет. Ширяев пуян та хыткукар предприниматель, хаяр чунлă çын пулнă. Хăй патĕнче вăл, вĕренекенсем тесе, тикран çĕленĕ халат тăхăннă икĕ-виçĕ е унтан та ытларах сăрлакан çынсем тытса пурăннă. Вĕсем уйрăм çынсен çурчĕсене тата Петербургри театрсен маччисемпе стенисене сăрласа илемлетнĕ çĕрте ĕçленĕ.

Живописец патĕнче тăватă çул вĕренни Шевченкона пысăк

усă кўнĕ. Çак вăхăтра вăл искусствăн тĕлĕнмелле чаплă произведенийĕсене — гравюра, картинăсемпе скульптурăсене нумай курнă.

Ĕç кунĕ пĕтсен, Шевченко Çуллахи сада, авалхи статуя кĕлеткисене курма тухса чупнă. Қаçсерен тата Петербургăн шурă каçĕсенче Шевченко статуйăсене ўкере-ўкере илнĕ.

Çуллахи садрах Шевченко хăй землякĕпе—Сошенко художникпа тĕл пулнă. Аллейăпа иртсе пынă чух, Сошенко Сатурн статуйине ўкерсе илекен, тикран çĕленĕ таса мар халат тăхăннă çамрăка курнă. Сошенко ўкерчĕк тăвакан патне пырса тăнă та унăн картини çине пăхма пуçланă, вара вăл Тарасăн пысăк ăсталăх пуррине асăрханă.

Художник-портретист Иван Максимович Сошенко ырă кăмăллă çын пулнă. Вăл çамрăк крепостнойăн пурнăçне çăмăллатма хĕрўллĕн пулăшнă. Ăна живописец ĕçĕнчи питĕ чаплă мастерпа, художество Академийĕн профессорĕпе Брюлловпа, паллă поэт Жуковскипе, украина писателĕ Е. Гребĕнкăпа паллаштарнă. Шевченкона вĕсем художество Академине вĕренме яма шутланă, анчах та ăна, вăл крепостной пулнă пирки, унта кĕме май пулман. Малтан ăна крепостла тыткăнлăхран хăтармалла пулнă.

Венецианов художник Энгельгардт помещик патне Тараса ирĕке кăларма ыйтма пынă.

Ăс-тăнсăр помещик, ватă çынна, Академи профессорне, Венецианова, хăйĕн малти пўлĕмĕнче пĕр сехете яхăн тытнă, Венецианов филантропи çинчен калаçма пуçласан, вăл хыттăн кăшкăрса пăрахнă: «Мĕне кирлĕ кунта филантропи? Укçа, урăх нимĕн те кирлĕ мар!»—тенĕ.

Помещик вара хăйĕн художникне ирĕке кăларма икĕ пин çурă укçа ыйтнă.

Çак укçана тупма Брюллов Жуковский портретне ўкернĕ, унпа вара лотерея вылявĕ туса ирттернĕ.

1838 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнче Шевченко помещик аллинчен хăтăлнă.

3

Тарас Григорьевич Шевченко художество Академийĕн студенчĕ пулса тăнă. Унăн умĕнче искусствăн анлă тĕнчин алăкĕсем уçăлнă. Вăл «Аслă Қарл» тесе чĕннĕ чаплă художник Қарл Брюллов патĕнче вĕреннĕ. Шевченко тĕрлĕрен наука кĕнекисем нумай вуланă: вăл поэзипе истори, физикăпа медицина, фило-

софипе искусство историйĕсемпе питĕ интересленнĕ. Вăл Пушкинпа Гоголе, Лермонтовпа Жуковские, Гомерпа Дантене, Шиллерпа Вальтер-Скотта питĕ юратса вуланă. Шевченко физиологи, зоологипе физика наукисем çинчен лекцисем итлеме тăрăшса çӳренĕ, француз чĕлхине вĕреннĕ, театрсемпе выставкăсене кайса курнă, чи чаплă музыкантсен концерчĕсенче пулнă.

Культурăна питĕ хăвăрт та тарăн ăнланса илме пултарнипе Шевченко часах хăйпе çывăх пысăк пĕлӳллĕ çынсемпе танлашать. Брюллов хăйĕн ученикĕшĕн çав тери тăрăшнă, вăл ăна авалхи искусствăри сăнарсемпе ĕçлеме вĕрентнĕ. Шевченкона халăх сăнарĕсемпе халăх пурнăçне кăтартса паракан картинăсем ытларах килĕшнĕ. Ун умне тăван çĕршывăн пуласлăхĕ тухса тăнă, çакна вара вăл кăранташпа та кистĕкпе ӳкерсе кăнамар, сăмахпа та каласа парасшăн çуннă.

Хăй пĕлтернĕ тăрăх, чи малтанхи хут вăл 1837 çулхи çуллахи уйăхсен çутă каçĕсенче çырма пуçланă.

Шевченкон «Кобзарь» ятлă малтанхи сăвă кĕнеки 1840 çулта пичетленсе тухнă.

Кĕнеке ячĕ хăех ĕнтĕ Шевченко Украина халăх творчествине, кобзарьсен шухăш-кăмăлне, юррисене çывăх пулнине кăтартса парать. Шевченко сăввисенче поэт ырă пурнăçа тивĕçлĕ хăйĕн халăхне хĕрӳллĕн юратни курăнать.

Шухăшсем, пĕр вĕççĕр шухăш...
Хурлăх çеç кӳретĕр!
Мĕншĕн-ха эсир салхуллăн
Хут çине ӳкетĕр?
Ма сив çил сире тусан пек
Вĕçтерсе каймарĕ?
Ма çĕрле ачана пăвнăн,
Типĕ шар пăвмарĕ?...

Тарас Шевченко хăйĕн кĕнекине, Украина халăхĕн шăпи çинчен юрлама, çак шухăшсемпе уçнă. Унăн чĕререн тухакан сăмахĕсем хресченсен чӳречесенче янăраччăр тесе, вăл пĕтĕм шухăш-ĕмĕтне Украинăна халалланă.

Ялтан яла çӳрекен суккăр та ватă Перебендя кобзарь сăнарне Шевченко чуна хумхантармалла ыррăн кăтартса панă. Çав кобзарĕн кашни çын валлиех, хăйне май, чĕрене кĕрсе вырнаçакан юрă пулнă.

Шевченкона хăйне вара Украинăн иртнĕ пурнăçĕ çинчен юрлани уйрăмах хумхантарнă. Украина халăхĕн иртнĕ пурнăçне

сӑнласа кӑтартса, ҫав вӑхӑтра Шевченко иртнине ытла та пысӑка хуни те пулнӑ. Днепр айлӑмӗсенче XVIII ӗмӗрччен тытӑнса тӑнӑ Украинӑри казаксен организацийӗ, Запорожецри Сечь, ӑна ирӗклӗ республика пек туйӑннӑ. Унӑн геройӗсем Польша шляхтипе тата тӗрӗксемпе ҫапӑҫнӑ паттӑр казак-запорожецсем пулнӑ. Ун чухне вӑл казаксен ҫар пуҫлӑхӗсем—гетмансем халӑха пӗрре кӑна мар улталанине, сутнине, запорожецсем хушшинче аслӑрах правасемпе усӑ куракансем те, ҫав хушӑрах крепостнойсенчен тухнӑ салтаксем те пулнине ӑнланман-ха.

Ҫавӑн пек ӑнланманлӑхран Шевченко часах кӑтӑлнӑ. Вара хӑйӗн малтанхи произведенийӗсенчех, иртнине сӑнласа парса, укран паянхи куншӑн урок тума чӗнсе, хӑй вӑхӑтӗнчи ҫынсене ҫапла каланӑ: «Пӑхӑр-ха, сирӗн аҫӑрсемпе аслаҫӑрсем ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑхшӑн мӗнле ҫапӑҫнине—эсир те вӗсем пек пулӑр!»—тенӗ.

Шевченкоччен литературӑра палӑрнӑ Котляревский, Квитка-Основьяненко, Гребӗнка тата ытти Украина писателӗсем помещиксен ачисем пулнӑ. Вӗсем хӑйсен творчествинче халӑхӑн асаплӑ пурнӑҫне ҫиелтен ҫеҫ кӑтартса панӑ, крепостла пусмӑрлӑхпа лӑпкӑнах килӗшнӗ. Хӑшпӗр чухне ҫеҫ вӗсем крепостник-помещиксен тискӗрлӗхне тата хресченсене асаплантарнине хирӗҫ критикленӗ, анчах та вӗсем самодержавипе крепостла йӗркене хирӗҫ пыман.

Халӑх хушшинчен тухнӑ Шевченко вара Украина литературине чи малтан ҫӗнӗ идейӑсемпе темӑсем кӗртнӗ, вӑл крепостла хресченсен йывӑр пурнӑҫне, вӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсемпе туйӑмӗсене кӑтартса панӑ.

Ҫамрӑк поэтӑн малтанхи кӗнекине тӗрлӗ критиксем тӗрлӗрен йышӑннӑ. «Отечественные записки» сӑвӑсене мухтанӑ, «Литературная газета» Шевченко поэзинче «хӗрӳлӗх тата тарӑн туйӑм нумай, сӑвӑсенче кашнинчех тӑван ҫӗршыва юратни курӑнать, вӗсенчи картинӑсем чӑнлӑхпа, чӑн-чӑн пурнӑҫпа, чӗре сӑрпа йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ»,—тесе ҫырнӑ.

Хӑшпӗр реакцилле критиксем поэта «мужикле» ҫырать тесе хурланӑ.

«Ан тив мужикле пултӑр, анчах та поэт пулам. Мана урӑх нимӗн те кирлӗ мар!»—тесе ҫырнӑ Шевченко.

Шевченкон малтанхи сӑввисем—романтикӑлла балладӑсем, лирикӑлла элегисем, юрӑсем: «Порченая», «Ветер буйный», «Течет вода в сине море» тата ыттисем те. Вӗсенче поэт, кобзарьсен традицине малалла илсе пырса, вӗсен кӗвӗллӗ стильне,

поэтикăллă образĕсене йышăнать: сарлака та шавлă Днепр, ун ҫине ҫумăр пĕлĕчĕсенчен тухнă шупка уйăх пăхать; юханшыв хумĕсенче вутăшсем шăмпăртатаҫҫĕ; инҫете, ют ҫĕрсене тухса кайнă юратнă каччишĕн тунсăхлакан хĕр; ирĕк ҫеҫенхир, унта ҫӳлĕ тĕмесем, мухтавлă казаксен вилтăприйĕ, вĕсем ҫийĕпе шухă ҫил вĕрет; суккăр кобзарь ĕлĕкхи ҫинчен—ирĕклĕхпе тĕрĕслĕхшĕн пынă ҫапăҫусем ҫинчен юрлать.

Шевченко ҫинчен каланă чух, Горький уйрăмах поэт шухăш-туйăмĕ халăх шухăш-туйăмĕпе уйрăлми тачă ҫыхăнса тăнине палăртнă. «Унăн хăйĕн пурнăҫĕ ҫине ӳпкелешсе каланинче пĕтĕм Малороссии ӳпкелешни илтĕнет, унăн казаксен ирĕклĕхĕ ҫинчен аса илнинче эсир пĕтĕм халăх аса илĕвне туятăр»—тенĕ вăл.

Шевченкон ҫак произведенийĕсенчи поэтикăлла сăнарсенче, чĕлхинче, содержанийĕнче те, революцилле-демократилле шухăш вĕресе тăрать. Шевченко крепостла йĕркене хаяррăн питлет.

«Катерина» поэмăра Шевченко патша ҫарĕн офицерĕ, улпут ывăлĕ, улталаса мăшкăл тунă хресчен хĕрĕн тӳсме ҫук телейсĕр шăпи ҫинчен каласа парать. Поэма вулакансене пурнăҫри чăнлăхпа хумхантарнă тата вĕсен чĕрисенче ҫын вĕлерен-пансене хирĕҫ курайманлăх ҫуратнă. Кун хыҫҫăн та Шевченко хĕрарăм юратăвĕнчен мăшкăллакан ҫынсене питлекен темăпа пайтах сăвăсем ҫырнă. Катерина пек мăшкăл тӳснĕ телейсĕр хĕрсене поэт чунти пĕтĕм ачашлăхпа сăнласа панă.

«Гайдамаки» поэма, ăна цензорсем пичетлеме чарса нумай вăхăт хушши тытса тăнă хыҫҫăн, 1841 ҫулта тин тухнă.

Поэт хăйĕн произведенийĕнче XVIII ĕмĕрте Украинăн аслă ҫĕрĕсем ҫинче хуҫа пулнă Польша панĕсене хирĕҫ хăйсен пикамă пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешнĕ Украина халăхне кăтартса парать.

Польшăн пуян магначĕсем Украина хресченĕсене тӳсме ҫук пусмăрласа пурăннă. Социаллă пусмăрпа пĕрлех тата тĕн пусмăрĕ те пулнă: XVI ĕмĕртех, ăна Брест унийĕ тенĕ, Украинăн православнăй чиркĕвне католиксен чиркĕвĕпе Римски папăна пăхăнтарнă. Униатскипе католически духовенство Польша шляхтин интересĕсемшĕн тăнă, украинецсене пăхăнма, килĕшме чĕннĕ.

Ҫав вăхăтра хресченсен восстанийĕсем пĕрре ҫеҫ мар сикесике тухнă, анчах вĕсене Польша панĕсем хаяррăн путара-путара лартнă.

XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш ҫурринче шляхтичсем тытса тăнă

Польша политики хавшама пуҫланӑ. Престолра Станислав Понятовский ларнӑ, вӑл Екатерина майра-патшан шанчӑклӑ ҫынни пулнӑ. Станислав Понятовские хирӗҫ шляхтсен пӗр пайӗ ҫӗкленнӗ, вара 1768 ҫулта, Пулавский ертсе пынипе, Барская конфедераци текен ҫар союзӗ туса хунӑ. Конфедератсен эшкерӗ Украинӑна ҫаратса, ҫӗмӗрсе пынӑ, халӑхсене тӳсме ҫук мӑшкӑллланӑ.

Шляхтӑна хирӗҫ «Колиивщина» ятлӑ, историне кӗрсе юлнӑ халӑх восстанийӗ ҫӗкленнӗ. «Гайдамаки» поэмӑра ҫак восстани ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ та ӗнтӗ Шевченко. Хресченсен революцилле анлӑ юхӑмӗ поэта ҫав тери интересслентернӗ. Нумай ҫулсем иртнӗ хыҫҫӑн хӑйӗн пӗр произведенийӗнче Шевченко ҫапла ҫырнӑ: «... Ҫапӑҫура хӑйсен пуҫӗсене хунӑ манӑн земляксем Европӑри пӗр халӑхран та начар пулмарӗҫ. 1768 ҫулта вара... французсен пӗрремӗш революцийӗнчен те ытларах та чаплӑ тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ».

«Гайдамаки» поэмӑра Шевченко стихийӑлла, анчах та чӑнлӑхпа ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫава тухнӑ хресченсен кӗрешӗвне анлӑн сӑнласа кӑтартнӑ.

Восстание Максим Железняк пуҫарса янӑ. Унӑн гайдамакӗсем Польша шляхтине ҫӗмӗреҫҫӗ, помещиксен кил-ҫурчӗсене чӗрте-чӗрте ҫунтараҫҫӗ. Восстани Чигирин районӗнче пуҫланать; Железняк, Неживый тата ыттисем—повстанецсен пуҫлӑхӗсем—хӑйсен отрячӗсене ҫакӑнтан илсе тухнӑ. Иван Гонта ертсе пыракан казаксем Железнякпа пӗрлешеҫҫӗ. Повстанецсем Умань хулине илсе ӑна виҫӗ уйӑх хушши хӑйсен аллинче тытса тӑнӑ. Кӗтмен ҫӗртен сиксе тухнӑ хресченсен пӑлханӑвӗнчен хӑраса ӳкнӗ патша правительстви, Польша шляхтине хӑтарма хӑйӗн ҫарӗсене ярать. Восстание путарса лартнӑ, Железняка Ҫӗпӗре пуҫ янӑ, Гонтӑна, нумай асаплантарнӑ хыҫҫӑн, вӗлернӗ.

Шевченко хӑйӗн поэминче 1768 ҫулхи событие реализмла сӑнласа ҫеҫ паман—унта патша стройне хирӗҫ восстание ҫӗкленме уҫҫӑнах чӗнни те вӑйлӑн янӑраса тӑрать.

Шевченко Польша шляхтин йӗксӗкӗсене хирӗҫ хаяррӑн тухнӑ Ярема батрак сӑнарне питӗ лайӑх кӑтартса парать. Ана кӗрешӗве ӑсатса яракан Оксанӑна — унӑн юратнӑ савнине — поэт чунтан савса сӑнласа кӑтартать. Суккӑр кабзарӗн характерлӑ сӑн-сӑпачӗ, казаксен пуҫлӑхӗсен сӑнарӗсем—ҫаксем пурте «таса шыв сапнӑ ҫӗҫӗсемпе ҫӳренӗ гайдамаксем» ятлӑ тапхӑра кӗнӗ хастар ҫынсем пулнӑ.

«Гайдамаки» поэмăна хăвăрт сутса пĕтернĕ. Украинăри прогрессивлă çынсем ăна хапăлласах йышăннă. Аслă патриот Шевченко «Гайдамаки» поэмăра Украина халăхĕн хаяр тăшманĕсене хирĕç нумай ĕмĕрсем хушши кĕрешнĕ паттăрсем çинчен юрлать. Поэма сăвăсен ритмисем пуян пулнипе, хумхантаракан сăнарсемпе, таса лирикăпа тата эпикăлла çырса кăтартнипе тĕлĕнтерет. Кунта, чăн-чăн искусствăн кашни произведенийĕнчи пекех, идейăлла тарăн содержанийĕ нацилле формăпа çыхăнса тăрать.

Ахальтен мар ĕнтĕ вырăссен аслă критикĕ Добролюбов «Гайдамаки» поэмăна пысăк хак парса: «Халăх шухăш-туйăмне тĕрлĕ енлĕ те тĕрĕс кăтартакан, тапса тăракан çăлкуç пек вăйлă, тĕлĕнмелле произведени»,— тенĕ.

«Гайдамаки» поэма—Шевченкон историлле поэмисенчен чи пысăкки пулнă. Поэт унта авалхи пурнăçран илсе çырнă сăнарсене хăй вăхăтĕнчи пурнăçĕпе çыхăнтарать.

«Гайдамаки» поэма пичетленсе тухнă хыççăн Канев уездĕнчи дворянсен предводителĕ аслă чиновниксене çапла пĕлтернĕ: «Гайдамаки» поэма дворянсемшĕн тата обществăри мĕнпур сословисемшĕн те сиенлĕ, мĕншĕн тесен халăх, ку поэмăра юн юхтарнине, тавăру хаярлăхне чаплăн кăтартса панипе хавхаланса, хăй те çапла тума пултарать».

4

Шевченко сăввисем халăх хушшинче анлăн саралнă. «Кобзаре» çĕтĕлсе пĕтичченех вуланă. Нумай çулсем иртнĕ хыççăн, 1843 çулта поэт тăван çĕршывне таврăннă, унта вăл хресченсемпе кобзарьсем хăйĕн сăввисемпе юррисене юрланине илтнĕ.

Шевченко Украинăри хăйне çывăх вырăнсенче пулнă, çак таранччен çĕр улпучĕсем патĕнче асапланса пурăнакан тăванĕсемпе тĕл пулнă. «Пур çĕрте те пултăм, нумай йĕтĕм,— тесе çырнă поэт хăйĕн тусĕ патне,—пирĕн Украинăна пĕтĕмпех юхăнтарса янă».

Помещиксен кил-çурчĕсенче Шевченкона кăмăллăн йышăннă. Вăл Украинăри ятлă интеллигентсем хушшинче те пулнă. Анчах та улпутсен çуталса ларакан çурчĕсем поэта крепостник-тăванĕсем, çаралса пĕтнĕ ялсем, хресченсен чăтма çук йывăр пурнăçĕ çинчен шухăшлама чарайман.

Юхăнса кайнă ялсене, помещиксем патĕнче асапланса пурăнакан хресченсен пурнăçне курса çӳренĕ хыççăн, поэт революци туйăмĕпе çулăмлансах çынă.

Халăха чунтан юратакан Шевченко Украинăри каппайчăк пансем умĕнче хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене пытарса тăман. Вĕсен пиме тăман либерализмне тĕрĕс хак панă. Шевченко вĕсемпе сайра хутра çеç мар тавлашса илнĕ. «Ăçта пăхатăн унта, çынсем мар, çĕленсем. Мĕншĕн-ха эпĕ кунта, мĕн тумалла манăн вĕсем хушшинче!»—тесе çырнă Шевченко.

1844 çулхи февральте Шевченко Петербурга тухса кайнă. Художество Академийĕнчен часрах вĕренсе тухса Украинăна пурăнма куçма шутланă вăл. Украинăра курса çӳренĕ чухне вăл «Живописная Украина» серипе картинăсем пичетлесе кăларма шутланă. Петербургра пурăннă вăхăтра Шевченкона çак серисен—Украинăн иртнĕ пурнăçне, йăлисене кăтартакан картинăсенчен ултă офорт çеç кăларма май килнĕ.

1844 çулхи июнь уйăхĕнче Шевченко «Тĕлĕк» ятлă сатирăллă поэма çырнă. Ку поэмăра Шевченко пусмăрçăсене уççăн та çивĕччĕн питленĕ. Вăл I-мĕш Николай вăхăтĕнчи Россия пурнăçне тата помещиксен тискерлĕхне сăнласа панă. Вăл халăх шăммисем çинче туса лартнă Питĕр хулине, патша вельможисене, мăн хырăмлă улпутсене, халăха асаплантаракан тискер палач — «атте-патшана» витĕмлĕ питленĕ.

«Кавказ» поэмăра (1845) поэт I-мĕш Николайăн империне тĕрме пек хакласа çапла калать:

Молдавансем-и е финсем—
Сăмах чĕнмеççĕ хăйсемле...

Поэт, асапра пурăнакан халăха восстание чĕнсе, ăна çак сăмахсемпе хавхалантарать:

Тĕрĕслĕх—сирте, эсир мухтавлă,
Таса ирĕклĕх те сирĕн!

Паттăр та хăюллă Прометей сăнарне Шевченко вăйлăн сăнласа кăтартать: Прометей чĕрине ăмăрткайăк сăхать, анчах та улăпа çĕнтерме пултараймасть, мĕншĕн тесен Прометей—халăх—вилĕмсĕр.

«Пехил» («Завещание») ятлă сăвăра вара хĕçпăшаллă восстание уççăнах чĕнни янăраса тăрать:

...Хускалăр,
Сăнчăрсене татăр,
Ирĕке усал тăшманăн
Юнĕпе шăварăр.

Шевченкон революцилле чĕнĕвне халăх хĕрӳллĕн йышăнна. Хăй вăхăтĕнчи нумай çынсем каланă тăрăх, хăйĕн произведенийĕсене поэт хресченсемпе чухăнсене хăй вуласа пана. Вăл вĕсемпе Украинăн иртнĕ ĕмĕрĕ çинчен, помещиксемпе чиновниксене, патша стройне пĕтерсе тăкма кирли çинчен калаçна.

5

1845 çулхи март уйăхĕнче Тарас Шевченко ирĕклĕ художник ячĕпе художество Академийĕнчен вĕренсе тухни çинчен калакан диплом илнĕ.

Вăл вара каллех Украинăна тухса кайнă. Археологи комиссийĕ хушнă тăрăх, Украинăн авалхи пурнăçне кăтартакан памятниксене ӳкерсе илсе çӳренĕ. Украина ялĕсенче хресченсем хушшинче пулса, вĕсене крепостла стройпа самодержавие хирĕç çапăçăва тухма чĕнекен хăйĕн политикăлла сăввисемпе поэмисене вуласа панă. Шевченко ячĕ халăх хушшинче ӳссех пынă. Украина тăрăх çӳрени поэт-художникшĕн питĕ усăллă пулнă: вăл халăх творчествин пуянлăхĕсене пухнă. Шевченко халăхăн пуян чĕлхине çав тери юратнă, вăл халăх юмахĕсене, юррисене, легендисене çыра-çыра илнĕ.

1845—1846 çулсем Шевченкошăн творчество ӳссе чечекленнĕ çулсем пулнă. Çак çулсенче вăл «Еретик», «Батрачка», «Ведьма», «Слепой» («Невольник») ятлă поэмăсемпе лирикăлла илемлĕ сăвăсем нумай çырнă.

1846 çулта Киевра Шевченко Украинăри либералла интеллигентсен ушкăнĕнчи çамрăк историкпе—Костомаровпа паллашса çывăхланнă. Поэт славян халăхĕсен федерацине тума ĕмĕтленнĕ Костомаровпа пĕр шухăшлă çынсемпе тата унăн тусĕсемпе паллашнă.

Вĕсем хушшинче пĕр шухăшлăх пулман. Костомаровпа Кулиш ертсе пынă либералсем революциреи хăранă, çĕршыва мирлĕ майпах улăштарма пулать тесе шаннă. Обществăн Гулак майлă пыракан членĕсем хресченсене хĕçпăшаллă восстани туса ирĕке кăларассишĕн тăнă. Вĕсене хавхалантаракан Шевченко пулнă. Шевченко Гулак хваттерĕнче пулакан вăрттăн пухусене çӳренĕ. Поэт çак пухусенче хăйĕн революцилле сăввисене вуланă тата час-часах вĕсем ытлашши нумай калаçнишĕн, сахал ĕç тунăшăн общество членĕсене ӳпкелесе хĕрӳллĕн тухса калана.

Çав вăхăтра Шевченко нумай çырнă. Унăн поэт ячĕ ӳссе сарăлсах пынă. Унăн сăввисем халăх хушшинче анлăн сарăлна.

Вăрттăн полици—III-мĕш Отделени—Шевченко хыççăн куç илмесĕр йĕрленĕ.

6

1847 çулхи март уйăхĕнче Туслăх обществи пурри çинчен патшана пĕлтернĕ. Вара вăрттăн обществăна çĕмĕрсе тăкнă, унăн членĕсене—Костомарова, Гулака тата ыттисене—арестленĕ. Патшана пĕлтернинче, вăрттăн обществăн пухăвĕсенче патшана хирĕç хăюллăн калакан Шевченко сăввисене вуланине те кăтартса панă.

Çав вăхăтра Шевченко Украина тăрăх çӳренĕ. Киева таврăнсан, Днепр урлă каçнă чухне, ăна арестленĕ. Унпа пĕрле хăрушă багаж: унăн сăввисем, вăл шутра «Тĕлĕк» ятлă поэми те пулнă.

Шевченкона Петербурга, III-мĕш Отделение илсе кайнă, кунта Кирилло-Мефодиевский туслăх ĕçĕ пирки следстви пынă. Шевченкон сăввисене те III-мĕш Отделение панă.

Туслăх членĕсем хăйсем вырăс патши ертсе пынипе славян халăхĕсене пĕрлештерме шутланă тесе, жандармсене çăмăллăнах ĕнентернĕ. Вара вĕсене хытă айăпламан.

Шевченкона вара унăн творчествишĕн хыттăн айăпланă. Ирĕклĕхе юратакан çирĕп Шевченко допросра хăй революциллĕ сăвăсем çырнине тӳрех йышăннă.

Шевченкона Оренбургри линейнăй батальонăн салтакĕ туса ссылкăна янă. Вăл нимĕнле сăвăсем те ан çыртăр тесе, поэта питĕ хытă сыхлакан надзор аллине панă.

Приговор çине I-мĕш Николай хăй аллипе çапла çырса хунă: «Çырма тата сăрлама ан пултартăр тесе хыттăн сыхламалла».

Вунă çул хушши хаяр пуçлăхсем асаплантарса мăшкăлланине тӳснипе, Шевченко патша стройне тата ытларах курайми пулнă.

Хаярлăхпа мăшкăллăх Шевченкон çирĕплĕхне, туйăмне, этеме ĕненнине тата унăн пуласлăхне шанса тăнине хуçма пултарайман.

«Асапланатăп, тертленетĕп, анчах та кунăн шеллеместĕп»—çапла каланă Шевченко хăй асапланса пурăннă çулсем çинчен.

Темле хăратни те Шевченкона çырма чарма пултарайман. Петербургри III-мĕш Отделени касаматĕнче ларнă чухне те вăл сăвăсем çырнă; нумай вăхăт ссылкăра пурăннă чухне те сăрланă, çырнă вăл. Тăван çĕршыв шăпи ăна хăй шăпиничен ытларах хумхантарнă.

Орск крепоçĕнче пурăннă вăхăтра (Оренбурграи 200 километрта) крепость айлăмĕнче пытанса ларса, пĕчĕк хут татăкĕсем çине кăранташпа картинăсем тунă вăл, ухтарнă вăхăтра тупма ан пултарччăр тесе, хăйĕн произведенийĕсене атă кунчи ăшне пытарнă.

Çак йывăр тыткăнра Шевченкон шăпи пĕтĕмпех унăн пуçлăхĕсен кăмăлĕнчен килнĕ. Хăшпĕр чухне вăл ырă вăхăтсемпе усă курма та пултарнă. 1848 çулта Арал тинĕс хĕррисене тĕпчекен экспедици начальникĕ Бутанов Шевченкона хăйпе пĕрле сăрлама илсе кайнă. Вĕсене шывсăр вырăнсемпе, никам çук пушхирсемпе кайма, шанчăксăр Арал тинĕсĕ çинче силленине тÿсме, Кос-Арал утравĕ çинче хĕл касма тивнĕ. Анчах ку çапах та салтакăн казармăри асаплă пурнăçĕнчен темиçе хут лайăхрах пулнă.

Кос-Аралра пурăннă вăхăтра вăл нумай илемлĕ сăвăсем çырнă. Кунта Шевченко лирикăлла юрăсем: хурлăхлă, савăнăçлă юрăсем, ташă кĕввисем çырнă. Кунтах вăл, ача чухнехипе çамрăклăх кунĕсене аса илсе, автобиографилле сăвăсем те кĕвĕленĕ.

1849 çулхи кĕркунне экспедици Оренбурга таврăннă. Ссыльнăя кăштах çăмăллăх пама ыйтса, Шевченкон Арал тинĕсĕн сăнĕсене кăтартакан картинисене пуçлăхсем патне ярса панă. Анчах урăхла пулса тухнă. Петербургран Шевченко салтакăн пурнăçне татах та йывăрлатмалли приказ килнĕ. I-мĕш Николай çапла тума хăй тăрăшнă. Поэта Каспи тинĕсĕн çурçĕр-хĕвелтухăç хĕррисенче аякра ларакан Новопетровское укрепленине ăсатнă. Кунта вара Шевченко хыççăн тата хытăрах йĕрленĕ, çырма, сăрлама икĕ хут ытларах чарнă.

Анчах поэт парăнман. Хăйĕн пурнăçне шеллемесĕрех вăл ĕçленĕ. Тусĕсем патне çырнă çырусенче вăл хăй тунсăхлакан Лермонтов, Кольцов, Гоголь çырнă кĕнекесене ярса пама ыйтнă. Гоголе вăл ăшă туйăмпа аса илнĕ, 1844 çулта вăл ăна чысласа сăвă та çырнă.

Новопетровскри крепоçре Шевченко вырăсла темиçе повесть çырать. Вĕсем хушшинче «Художники», «Музыкант», «Княгиня», « Прогулка с удовольствием и не без морали» тата ыттисем те. Ку повестьсем автобиографилле материалпа пуян пулнă. Кунта Шевченко хăйĕн ача чухнехи пурнăçне, хăйĕн тусĕсемпе тăшманĕсене тĕрĕссĕн кăтартса парать.

Шевченко мораль енĕпе питĕ вăйлă пулнă. 1857 çулта ăна ирĕке кăларнă, ссылкăри йывăр асапа сирсе пăрахса, поэт ха-

васланнă. «Мана хам вунă çул каялла пулнă пекех туйăнать. Ман ăшри туйăмсем нимĕн чухлĕ те улшăнмарĕç. Лайăх-ши ку? Лайăх...» тесе çырнă вăл.

7

1857 çулта çулла Шевченко Новопетровское укреплениничен тухса кайнă. Каспи тинĕсĕ урлă кимĕпе ишсе каçса вăл Астрахане пырса çитнĕ. Кунтан вăл «Князь Пожарский» ятлă пăрахутпа Атăл тăрăх хăпарнă.

1857—1858 ç.ç. хăй çул çӳренĕ чухнехи пĕчĕк е пысăк событисене поэт хăйĕн «Дневникне» çыра-çыра хунă. Вырăс чĕлхипе çырса пынă çак «Дневник»—«чĕререн юратакан туссем валли иртнĕ кунсене аса илсе»,—пусмăрта асапланакан халăха хĕрӳллĕ юратакан тата патша Российине курайманлăхпа çунакан çирĕп те парăнман революционер-демократ поэтăн сăн-сăпатне кăтартса парать. I-мĕш Николай уншăн—чи хаяр тăшман, ăна вăл е «алла вĕрентнĕ упа, е тата чи аслă палач» тесе чĕннĕ.

Патшапа унăн хӳрешкисене вăл чĕререн курайман, вырăс халăхĕпе историне тата унăн геройĕсене чунтан юратнă. Вăл, «чаплă рыцарь Степан Разин» çинчен хунă юмахсене çырса илет, Астраханьри, Саратоври, Хусанти, Чулхулари историлле памятниксемпе интересленет. «Дневникĕнче» Шевченко музыкăпа живопись, литературăпа философи, наукăпа политика çинчен тарăн шухăшсем çырса хăварать.

Ссылкăран таврăннă хыççăн вăл вырăссен демократилле литературине нумай вулать, анчах кĕнекесем тупма ăна çăмăл пулман. Пăрахутпа пынă чухне Кишкин капитан патĕнче патша цензури чарнă, вулама юраман литература кĕнекине тупнă. Вăл Рылеев çырнă кĕнекесене, уйрăмах тата Салтыков-Щедрин произведенийĕсене юратса вуланă.

Шевченко яланах революцилле кĕрешӳ çинчен шухăшланă. «Русский инвалид» ятлă хаçата палуба çине илсе хăпарса, Шевченко Нанкин хулине штурмлас умĕн Китай повстанецĕсене çар пуçĕ Гонг чĕнсе каланине вуласа панă. Хăйĕн сăмахĕсенче Гонг мандаринсене (Китайăн аслă чиновникĕсене) хирĕç çапăçава тухма хавхалантарнă. Мандаринсене вăл «пусма чĕртнĕ вырăхсем» тесе чĕннĕ. Шевченко Гонг сăмахне «Дневник» çине çырса хунă та хăйĕнчен çапла хушнă: «Хăçан вырăс улпучĕсем çинчен пĕтĕм тĕнче илтмелле çапла каламалла пулать-ши?»

Пĕр ял çывăхĕнчен иртсе кайнă чухне Шевченко хресченсем помещик тыррине тĕртсе çунтарни çинчен пĕлнĕ. Вăл крепостниксене тарăхакан халăх вăйне туйса илнĕ, вара «Дневникне» «пулса иртнĕ савăнăçлă ĕç» тесе çырса хунă.

Чулхулана пырса çитсен Шевченкона патша столицине кĕме чарни çинчен пĕлтернĕ. Çур çула яхăн вара ăна Чулхулара пурăнма тивнĕ.

«Халĕ эпĕ ирĕкре... Сăнчăрти йытă пек, ирĕкре»,—тесе çырнă Шевченко Чулхуларан хăйĕн тусĕ, паллă артист М. С. Щепкин патне.

Çитмĕл çула çитнĕ Щепкин 1857 çулхи хаяр хĕле пăхмасăрах темиçе кунлăха Шевченко поэт патне пынă.

Чулхулара çырнă «Неофиты» ятлă поэмине Шевченко хăйĕн шанчăклă тусне, чаплă артиста—Щепкина халалланă.

Поэт I-мĕш Николай сăнарне илсе авалхи Римри Нерон патшан кун-çулне кăтартса панă. Вăл хăй вăхăтĕнчи крепостла, самодержавилле Российăна тата, неофитсем пек (малтанхи христиансем) туса, «ирĕклĕхшĕн асапланакансене»—декабристсене кăтартса панă. Шевченко декабристсене хытă юратнă, вĕсем çинчен вăл «ирĕклĕх çинчен пĕлтерекен чи малтанхи вырăссем» тесе кăмăллăн каланă.

## 8

1858 çулхи февраль уйăхĕнче Шевченко хăйне Петербурга кĕме ирĕк пани çинчен савăнăçлă хыпар илнĕ.

Март уйăхĕн пуçламăшĕнче вăл вара, хăйĕн хаклă тусĕ Щепкинпа тата ытти тусĕсемпе тепре курса калаçас тесе, малтан Мускава тухса кайнă.

Мускавра вăл маларах та, Петербургран Украинăна кайнă чухне те пулнă. Анчах ку тахçанах пулнă, Мускава вăл 1848 çултанпах курман.

Поэт хăйĕн тусĕ Щепкин патĕнче чарăннă, ватă артист Шевченкона пысăк хаваслăхпа йышăннă.

Мартăн 25-мĕшĕнче Шевченко Мускавран Петербурга тухса кайнă.

Тарас Григорьевича Петербургри прогрессивлă çынсем хаваслăн кĕтсе илнĕ. Ун умĕнче литература ушкăнĕнчи алăк уçă пулнă, халĕ ĕнтĕ вăл вырăс культурин паллă деятелĕсем хушшинче пулнă.

«Тарас пуçĕ тăрне çĕнĕ, çутă çăлтăр хăпарчĕ... Петербург

халĕ ĕнтĕ ăна ăçта лартса, мĕнле хăналамаллине те пĕлмест»,— тенĕ Чернышевский.

Шевченко кунта Чернышевскипе, Добролюбовпа тата революцилле демократин органĕпе «Современник» редакцийĕпе çывăхланать. Помещиксемпе патша чиновникĕсен хаяр тăшманĕ, ссылкăсенче пиçĕхнĕ Тарас Шевченко, революцилле демократсен тусĕпе соратникĕ пулса тăрать. Чернышевскипе Добролюбов Шевченкона Украинăн аслă поэчĕ тесе йышăннă. Вĕсем ăна революцилле çулăмлăх пурришĕн хакланă, пусмăра питлекен поэт тесе çӳле çĕкленĕ. Герценпа тата Чернышевскипе пĕрле Шевченко Российăри хресченсен ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама май çуккине палăртнă.

Пуртă тытма чĕннĕ Шевченко хăйĕн сăввисенче. Ун чухне Петербургра пурăннă унăн землякĕсем—буржуалла либералсем, Костомаровпа Кулиш тата ыттисем те, II-мĕш Александр хресченсене ирĕке кăларать тесе шаннă. Анчах Шевченко патша сăмахĕ мĕне пĕлтернине питĕ лайăх ăнланнă. Вăл çапла каланă:

...Ыррине ан кĕт—
Кăлăхах кĕтетпĕр ирĕк,
Микулай пусарчĕ,
Ирĕклĕх илес тесессĕн,
Чухăнсем хăйраччăр
Пуртине.

Çак вăхăтра Шевченкон политикăлла сăввисем уйрăмах çивчĕ пулнă. Вăл вăхăтри çынсенчен пĕри çапла çырнă: «Тарас питлленине тытса чарма çук; вăл çапать те салатать; вăл çапса çĕмĕрекен темле шухă çулăмпа çунать». Политика позицийĕ çинчи пĕрлĕх çеç мар Шевченкона революцилле вырăс демокрачĕсен çулпуçĕсемпе çыхăнтарнă. Философипе эстетика тата этика облаçĕсенче те Шевченко Чернышевскипе Добролюбов майлă тăнă. Искусствăпа литературăна вăл обществăн пысăк вăйĕ, халăха крепостла йĕркерен ирĕке кăлармалли хĕçпăшал тесе шутланă.

Шевченкон пĕтĕм пурнăçĕпе ĕçĕнче чăнлăхпа тĕрĕслĕх, идейăпа мораль тĕлĕшĕнчен çӳлĕ выранта тăракан искусство патне туртăнни курăнать. Çакă вăл уншăн — çыннăн пуласлăхĕшĕн кĕрешес çĕрте тĕп вырăн йышăннă.

1859 çулта Шевченко юлашки хут Украинăра пулнă. Вăл, хăй çуралнă вырăнта пулса, пĕр, татăк çăкăршăн асапланса

пуранакан таванесемпе тĕл пулнă. Қунта та ăна полици хытă йĕрленĕ. Вăл хресчĕнсемпе калаçнине жандармсемпе сыщиксем итлесе çӳренĕ. Вара каллех ăна арестленĕ.

Полицейскисен донесенийĕсенче Шевченко турра хирĕç сăмахсем каланине пĕлтернĕ, вăл «патша та, пупсем те, улпутсем те кирлĕ мар» тесе каланине палăртнă.

Ирĕке тухассишĕн поэтăн нумай вăй хума тивнĕ. Ăна Украинăра пурăнма чарнă та Петербурга ăсатнă. Вăл вара, каллех художество Академийĕн антресольне вырнаçса, гравер искусствипе ĕçлеме тытăннă.

Шевченко офортпа гравюра ĕçĕнче пысăк ӳсĕмсем тунă. Чаплă ĕçсемшĕн вăл 1860 çулта гравюра академикĕн хисеплĕ ятне илет. Çав çулах тата çĕнĕрен «Кобзарь» пичетленсе тухать. Поэтăн «Тĕлĕк», «Қавказ», «Еретик», «Пехил» ятлă революцилле сăввисене патша цензури ку издание кӳртмен пулмалла.

«Кобзарĕн» çĕнĕ изданийĕ пичетленсе тухнă кун Шевченко çапла çырнă: «Цензура паян хăйĕн чĕрнисем витĕр манăн юрăсене кĕскетсе кăларнă та, эпĕ вĕсене, манăн пепкемсене, аран-аран палласа илтĕм».

Поэт халăх çĕнтерессе, çапла вара унăн çĕршывĕнче çеç мар, пĕтĕм çĕршывра çĕнĕ пурнăç пуçланас вăхăта кĕтнĕ.

Цензурăна улталас тесе, Шевченко час-часах библипе евангелирен илнĕ темăсемпе, сюжетсемпе усă курнă. Хăй çав вăхăтра патшапа пупсене хирĕç кĕрешĕве чĕннĕ.

Шевченкон пичетлемен революцилле нумай сăввисем халăх хушшине саланнă. Поэт тусĕ Қурочкин тата ыттисем те унăн сăввисене вырăслана куçарнă. Мухтавлă кобзарĕн чапĕ пĕтĕм çĕршыв тăрăх саралнă. Грузинсен паллă писателĕ Алексей Церетели, ун чухне Петербург университечĕн студенчĕ пулнăскер, Шевченкопа тĕл пулнă. Вăл Украина поэтне грузи халăхĕн пурнăçĕ çинчен каласа панă. Церетелие итленĕ хыççăн Шевченко ассăн сывласа çапла каланă: «Сирĕн халăхпа Украина халăхĕ хушшинче мĕн чухлĕ иккен пĕр пекки!»

Пĕр-пĕр халăх тепĕр халăха хисеплеменни Шевченкошăн ют пулнă. Пĕтĕм ĕçхалăхĕ, вĕсем мĕнле наци пулнине пăхмасăр, пусмăрçăсене хирĕç пыракан кĕрешӳре унăн соратникĕсем пулнă. Негрсен паллă трагикĕ Айра Олдридж час-часах Шевченко мастерскойне пырса çӳренĕ. Тарас Григорьевич унăн портретне ӳкернĕ вăхăтра украина халăх юррисене юрланă. Олдридж ăна негр халăх юррисене юрласа панă. Çапла вара

вёсем пĕр-пĕрне сăмахсăрах ăнланнă. Нумай йывăрлăхсем витĕр тухнă Украина поэтне Олдридж артист хăйĕн тăван çĕршывĕн сценисем çинче выляйманнишĕн чунтан тарăхни çинчен каласа панă. Америкăра негрсемшĕн сцена алăкĕ хупă пулнă, артистăн ирĕксĕрех вара Европа тăрăх çӳремелле пулнă.

Шевченкон творчествăллă планĕсем пысăкланнă: вăл Украина хресченĕсем валли «Букварь» пичетлесе кăларма хатĕрленĕ, çĕнĕ сăвăсемпе поэмăсем çырма, Украина ялĕн сăн-сăпатне тата казарма пурнăçне кăтартакан офортсем тума шутланă.

Чернышевский ертсе пыракан вырăс литераторĕсем крепостниксем патĕнче асапланакан Шевченко тăванĕсене çăмăллăх парассишĕн тăрăшнă. Шевченко тусĕсем унăн тăванĕсене ирĕке кăларма ыйтса помещик патне çапла çырса янă: «Тарасăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене шута илсе, литературăна хисеплесе те пулсан ирĕке кăларма ыйтатпăр»,—тенĕ.

Помещик поэтăн тăванĕсене, вăл шутра унăн юратнă Ярина аппăшне, ирĕке кăларма килĕшнĕ, вĕсене çĕр памă килĕшмен. Ку вара выçă вилессипе хăратса тăнă.

Шевченко хăйĕн тăванĕсем ирĕке тухнине курман. Унăн тăванĕсем поэт вилнĕ хыççăн—1861 çулхи патша манифесчĕ хыççăн çеç ирĕкре пулнă.

Салтак пурнăçĕпе тĕрмесенче, ссылкăсенче асапланса пĕтнĕ поэт хăй çав тери юратнă, нумай юрă панă. Украинăна пурăнма куçма шутланă. Анчах хăй шухăшланă пек пулман. Вăл йывăр чирпе—водянкăпа чирлесе ӳкнĕ. Вара 1861 çулхи мартăн 10-мĕшĕнче ирхине вилсе выртнă. Вăл хĕрĕх çичĕ çулта çеç пулнă-ха.

Хăй виличчен нумай малтанах поэт çапла çырса хăварнă:

Эп вилсессĕн—çеçенхирĕн  
Варрине пытарăр,  
Чун юратнă Украинăн  
Тăприпе хуплайăр.  
Тĕмескем çинчен çĕршывăм  
Курăнса выртинччĕ,  
Вăтă Днепр ахăрни те  
Уççăн илтĕнинччĕ.

Поэт шухăшлани часах пурнăçланман. Малтан ăна Петербургра пытарнă, вăхăт иртнĕ хыççăн тин вара унăн ӳтне Украинăна илсе кайма ирĕк панă. Украина юрăçине—Шевченкона,

хӑй пурӑнма кӑҫма ӗмӗтленнӗ, Канев хулинчен инҫех мар вырӑна, Днепр сӑмсахӗ ҫине пытарнӑ.

Шевченко вилӗмӗ халӑх манифестацийӗсен юхӑмне пуҫласа янӑ. Поэт вилтӑпри ҫине халӑх пырсах тӑнӑ. Виле шӑтӑкне хӗҫпӑшалсем пытарнӑ, кирлӗ самантра ҫав хӗҫпӑшала хресченповстанецсем алла илӗҫ те патшапа улпутсене хирӗҫ ҫапӑҫава тухӗҫ текен юмахсем ҫуралса тухнӑ.

Шевченко ячӗ хӑй вилнӗ хыҫҫӑн та патша влаҫне хӑратса тӑнӑ. Унӑн произведенийӗсене цензура пӑсса кӑларнӑ, вулама чарнӑ. 1914 ҫулта поэт ҫурални ҫӗр ҫул ҫитнине те асӑнма паман.

---

Октябрьти социализмла Аслӑ революци ирӗке кӑларнӑ тӑванла совет халӑхӗсем 1939 ҫулта Украина аслӑ поэчӗ ҫуралнӑранпа ҫӗр ҫирӗм пилӗк ҫул тултарнине анлӑн паллӑ турӗҫ. Канев хули ҫывӑхӗнчи Чернечье сӑрчӗ ҫинчи Шевченко вилтӑпри ҫине пысӑк палӑк туса лартнӑ. Украина халӑх юрӑҫин бронзӑран тунӑ кӗлетки Днепрӑн сарлака тӳремлӗхӗсем, Украинӑн улӑх-ҫаранӗсемпе уй-хирӗсем урлӑ курӑнса тӑрать.

Юбилей кунӗ, 1939 ҫулхи чечеклӗ ҫуркунне, Совет Союзӗнчи халӑхсен поэчӗсем Шевченко вилтӑпри ҫинче унӑн «Пехил» ятлӑ сӑввине — кашниех тӑван чӗлхипе вуланӑ. Ҫакӑ вӑл, поэт пӗтӗм чунхавалӗпе ӗмӗтленнӗ, совет халӑхӗн никам аркатайми пӗрлӗхне кӑтартса панӑ.

Совет влаҫӗн ҫулӗсенче Тарас Шевченко произведенийӗсене пирӗн ҫӗршывра вӑтӑр пилӗк халӑх чӗлхипе ҫичӗ миллион экземпляр ытларах пичетлесе кӑларнӑ. Совет Ҫӗршывӗн пур кӗтесӗсенче те, ҫурҫӗртен пуҫласа шӑрӑх кӑнтӑра, Аслӑ океанран пуҫласа хӗвеланӑҫ чиккисем таран, пур ҫӗрте те унӑн произведенийӗсене юратса вулаҫҫӗ.

Шевченко тӗнчери литература историне аслӑ халӑх поэчӗ пулса кӗрсе юлчӗ.

Унӑн тусӗсем—революцилле демократсем Шевченкона хӑйӗн поэзийӗнче халӑха вӑйлӑ кӑтартса панишӗн пысӑка хурса хакланӑ. Добролюбов ун ҫинчен: «Вӑл—чӑн-чӑн халӑх поэчӗ... Унӑн шухӑш-туйӑмӗ пӗтӗмпех халӑх пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Вӑл халӑхран тухнӑ, халӑхпа пурӑннӑ, шухӑшпа ҫеҫ мар, пурнӑҫри йывӑр кӗрешӳсенче те халӑхпа тачӑ та ҫывӑх пӗтӗҫнӗ»— тесе ҫырнӑ.

Тарас Шевченко чăннипех Украинăн çĕнĕ литературине пуçарса яраканĕ шутланать. Вырăс поэзийĕнчи Пушкин пекех, Шевченко пултарулăхĕ халăх сăнарĕсемпе, шухăш-туйăмĕсемпе пуян, вăл—чăн-чăн реализмла поэзи.

Украина писатель-демокрачĕсем Иван Франко, Михаил Коцюбинский, Леся Украинка, Панас Мирный, Павло Грабовский тата ыттисем те хăйсен учителĕ Тарас Шевченкон революцилле традицийĕсене чыслăн упранă тата малалла илсе пынă.

Шевченко творчествинче халăх шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене кăтартакан вăхăтăн прогрессивлă шухăшĕ, малалла туртăнакан вырăс общественноçĕ тĕп вырăн йышăнаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Шевченко пĕтĕм халăх хушшинче манăнми палăрса тăрать.

«Манăн пурнăçри истори вăл ман тăван çĕршыв историйĕн пĕр пайĕ пулса тăрать»,—тесе çырнă поэт хăйĕн автобиографийĕнче.

Тăван çĕршывпа ĕçхалăхне вăл уйрăлми çирĕп юратупа юратнă. Поэт патриотизмĕ яланах активлă пулнă: пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех Шевченко телейшĕн тата çĕршыва ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ.

Ирĕклĕхпе халăхсен тăванла туслăхĕ çинчен ĕмĕтленсе пурăннă поэт пирĕн саманари çынсен чĕрисем патне çул хывнă. Унăн пурнăçĕпе творчестви—Тăван çĕршывшăн чун-чĕререн тăрăшса ĕçленине, халăха юратнине тата тăшмансене курайманнине кăтартакан чаплă тĕслĕх пулса тăрать.

# КОБЗАРЬ

* * *

Кӗрлет мӑн Днепр, ахлатать вӑл,
Ҫиленнӗ ҫил ҫулҫа тататъ,
Йӑмрасене ҫӗрех авать вӑл,
Ту пек, ту пек хум хускатать.

Ҫӳлте шап-шурӑ уйӑх шиклӗн
Сӗм пӗлӗт витӗр пӑхкалать:
Хумсем ҫитсе хӳтернӗ киммӗн—
Пӗр курӑнать, пӗр ҫухалать.

Ял вӑранман-ха, ҫывӑраҫҫӗ,
Автан та шӑппӑн тӗлӗрет...
Тӑманасем кӑшкӑркалаҫҫӗ,
Пӗр кавраҫ чӗриклеткелет.

*1838*
*Питӗр.*

* * *

Чăрсăр çил эс, чăрсăр çил,
Тинĕспе тавлаш-ха,—
Хускат ăна, хумхат ăна,
Унпала калаç-ха.
Манăн савнă тусăма вăл
Пĕрре мар сиктернĕ;
Инçете-ши кăвак тинĕс
Халь ăна çитернĕ?
Инçетре ман тусăма, тен,
Хум çăтса путарнă;
Тинĕсе, çил, эсĕ уншăн
Çавăрттар хаярран;
Чун савнине шырамашкăн
Эп тухса каям-и,
Хумсем айне, хумсем айне
Хуйха пытарам-и;
Ăраскалсăр чун — эп хам та
Çавăнтах юлам-и?
Аслă шывсенче ишмешкĕн
Вутăш-хĕр эп пулăп,
Савнине тек шыра-шыра
Тинĕс тĕпне путăп.
Ăна тупăп та ыталăп,
Аллăмран вĕçермĕп,
Кăкăрĕ çине выртайăп,
Тимсĕлсе киленĕп.
Тинĕс, тинĕс, çиле май
Пире эсĕ илсе кай!
Тусăм тинĕс леш енче,

Вăл сывах пулсассăн,
Чăрсăр çил, эс ун çинчен
Пĕлтерсем, курсассăн.
Вăл унта йĕрет пулсан,
Эпĕ те йĕретĕп;
Савнăçпа юрлать пулсан,
Юрлăп — хĕпĕртетĕп;
Тусăм, тен, пĕтнех пулсан,
Хам та эп пĕтетĕп.
Вара, çил, эс ман чуна
Ун патне ăсатчĕ,
Хĕрлĕ палан туса мана
Тăпри çине лартчĕ.
Савнă хĕрĕ чечек пек
Пуç тайса илсен те,
Çăмăл пулĕ тăлăха —
Шăтăкра пулин те.
Ют хĕвел пит хĕртесрен,
Çын-мĕн таптасран-и,
Çеçке сарăп эп унта, —
Тусăма сыхлам-и!
Эп хурланăп каçпала,
Ире хирĕç — макрăп;
Хĕвел тухсан — куççуле
Типĕтĕп, шăп ларăп.

Чăрсăр çил эс, чăрсăр çил,
Тинĕспе тавлаш-ха, —
Хускат ăна, хумхат ăна,
Унпала калаç-ха.

*1838*
*Питĕр*

## ШУХĂШ

Тинĕсе шывсем юхаççĕ,
Калла çаврăнмаççĕ;
Телейне казак шырать-çке,
Пурпĕр тупаймасть-çке.
Казак кайрĕ тĕнче тăрăх;
Кăвак тинĕс шухă.
Чĕрере çунать-ха шанчăк,
Хирĕçлет-çке шухăш.

Ăçта кайрăн, çул пĕлмесĕр?
Çул çинче мĕн курнĕ?
Аçупа-аннӳ, савни те
Сансăр мĕнле пурнĕç?
Ют çĕрте санран çын кулĕ,
Шеллемешкĕн пĕлмĕç,
Санпала çынсем кулянмĕç,
Пĕр сăмах та чĕнмĕç.

Ют çĕрте ларать казакăм,
Тинĕс шав-шавлать-çке.
Телей тупăп, терĕ çамрăк, —
Хурлăх çеç курать-çке.
Тăрнасем çӳлте вĕçеççĕ,
Таçта çул тытаççĕ.
Йĕрет каччă—унăн çулĕ
Кунтан курăнмасть-çке...

*1838*
*Питĕр*

## ШУХĂШ

Йывăр, йывăр пурăнмашкăн
Тăлăха юлсассăн:
Хăть çыртан шыва чăм эсĕ,—
Вырăн тупаймастăн.
Çамрăклах шыва сиксессĕн,
Тен, пулатчĕ ырă;
Çĕр çинче ниçта, ниçта та
Маншăн çук-çке вырăн.
Уй-хирте пучах пухать-çке
Ыттисен раскалĕ,
Манăн тинĕс леш енче-çке
Тек çӳрет вăл халĕ.
Пуяна-çке питĕ лайăх:
Çынсем хисеплеççĕ;
Эп вĕсен умне пулсассăн,
Курмана переççĕ;
Пуяна, курпун пулсан та,
Сар хĕрсем саваççĕ;
Юратаççĕ, хисеплеççĕ,
Унпа мухтанаççĕ;
Мĕншĕн-ха манран кулатăр?
Эпĕ тăлăхран-и?
Е анне мана илем те
Вăй-хăват паман-и!
Е сана эп, хăмăр куçăм,
Чунтанах савман-и!
Саншăн, саншăн, савнă тусăм,
Чĕремпе çунман-и!
Кам енне чĕрӳ выртать сан,

Эс çавна савсамчче,—
Пĕр манран-и, тăлăхран эс,
Сар хĕр, ан кулсамччĕ.
Тухса кайăп, тĕнче касăп...
Ют çĕрте, тен, тупăп
Санран лайăх хĕр; тен, çамрăк
Куçăма эп хупăп...
Никампа сывпуллашмасăр,
Кулянса вăл утрĕ,—
Хăй телейне тупаймасăр,
Казак вилсе выртрĕ.
Вилнĕ чух çĕршыв енне вăл
Пăхрĕ, ўкрĕ... сывăр...
Ют çĕрте пуçа хумашкăн
Йывăр-çке, пит йывăр!

*1838 ç. ноябрĕн 2*

*Гатчина*

* * *

Шухăшсем, пĕр вĕççĕр шухăш...
Хурлăх çеç кӳретĕр!
Мĕншĕн-ха эсир салхуллăн
Хут çине ӳкетĕр?
Ма сив çил сире тусан пек
Вĕçтерсе каймарĕ?
Ма çĕрле, ачана пăвнăн,
Типĕ шар пăвмарĕ?..

Сире хуйхă-суйхă мăшкăлшăн çуратнă,
Куççульпе шăварнă... Мĕншĕн путарман вăл?
Тинĕсе вăрасчĕ, уй-хире сапасчĕ...
Мĕн ыратнине те ыйтмĕччĕç çынсем,
Эп куляннине те пĕлекен пулмастчĕ,
Эп ылханнине те... „Ут-ха, ут!" тесе
Виртлесе кулмастчĕç...
Ачасем, ма питĕ
Эп сире юратрăм, ма усрарăм-ши?
Сирĕнпе эп йĕнĕн пĕр чĕре пулин те
Тĕнчере йĕрет-ши? Чухлаймарăм-ши?..

Шухăшсем, тен, хăмăр куçлă
Сарă хĕр куççулĕ
Сире майăн шăпăртатĕ,—
Ку та çитет пулĕ?
Пĕр тумлам куççуль ӳкинччĕ...
Эп вара—пан евĕр!
Шухăшсем, пĕр вĕççĕр шухăш,
Хурлăх çеç кӳретĕр!

Хĕрĕн хура куçхаршишĕн,
Мăшăр хăмăр куçшăн
Ман чĕре сăмах туптарчĕ,
Килчĕ-çитрĕ шуххăн.
Çав сăмах аса илтерчĕ
Тĕттĕм каçсене те,
Ешĕл чие пахчине те,
Çутă куçсене те,
Уй-хире те, Украинăн
Йышлă тĕмине те...
Чĕрем çунчĕ, юрлаймарĕ
Ют çĕрте нимпе те.
Булавалла та бунчуклă*
Казаксен çарне те
Шурă юр-кĕрт хушшинче вăл
Канаша чĕнмерĕ...
Украинăрах çав йышăн
Чунĕсем çӳреччĕр—
Унта савăнăç, çĕр аслă,
Вĕççĕр те хĕррисĕр...
Сарлака мăн Днепр—тинĕс,
Иртнĕ ирĕкпе пĕр,
Шарлаксем сиксе кĕрлеççĕ,
Тĕмесем—ту евĕр.

Çавăнта çуралнă, ӳснĕ
Казаксемшĕн ирĕк;
Тутарпа та, шляхтăпа та
Акăннă уй-хирĕ.
Вилесем акса çав ирĕк
Ывăннă, канать вăл...
Хăй те ĕнтĕ шăтăкра халь,
Вилнĕ тахçанах вăл.
Хура юнлă ăмăрткайăк—
Ун çинчи хуралçă.
Кобзарьсем иртни çинчен халь

---

* *Булава* тата *бунчук*—гетман влаçĕн паллисем. Гетман тесе XVII тата XVIII ĕмĕрсенче Украинăра казаксен пуçлăхне, Богдан Хмельницкинчен вара—Украинăн правительне каланă.

Юрласа параççĕ;
Ĕлĕкхи çинчен юрлаççĕ,
Хăйсем мĕскĕн, суккăр.
Вĕсен юрă... Эпĕ... эпĕ
Макăратăп шутсăр.
Украинăмшăн йĕретĕп,
Сăмахсем çитмеççĕ...
Хам инкекĕм?.. Кама халĕ
Инкексем тивмеççĕ?
Кам çынна чунпа тинкерĕ,
Кам ăна шеллесшĕн,—
Уншăн çакă тĕнче—тамăк,
Леш тĕнче тесессĕн...
Юрĕ, çук телейĕме эп
Хурлăхпа илеймĕп;
Виç кун пурăнтăр та хурлăх,—
Шăтăках чикем эп.
Пытарам, çĕлен пек хурлăх
Чĕрене ан тивтĕр.
Усал хуйхăм кулнине те
Ман тăшман ан илттĕр.
Шухăшăм çăхан пек вĕçтĕр,
Вĕçтĕр те кранклаттăр;
Чĕрем пĕчĕк шăпчăк евĕр
Йĕтĕр те юрлатăр.
Шăппăн йĕтĕр,—çын ан куртăр,
Куракан ан култăр...
Ман куççулĕме ан шăлăр,
Вăл çырма пек юхтăр.
Ют хире вăл ир те, каç та
Шăварса йĕпеттĕр.
Пуп-тавраш куçа ют хăйăр
Саптăр та—ĕç пĕттĕр.
Çаплалла çав... Мĕн тăвас-ха?
Пулăшаймĕ хурлăх.
Кам тăлăхран кĕвĕçесшĕн—
Çавна куртăр турă!

Шухăшсем, çеçке пек шухăш—
Ачамсем, ачашшăн
Сыхласа сире ӳстертĕм,

Килӗр халь ăҫта-ши?
Хамăр ҫӗр ҫатанӗ ҫумӗн,
Тăлăхсем, иртсемӗр,—
Украинăна кайсамăр,
Эп—кунтах пӗтеп-тӗр.
Хамăр ҫӗршывра чăн туслăх,
Ăшă кăмăл тупăр,
Тӗреслӗх мӗнне те пӗлӗр,
Тен, чапа та тухăр...
Хапăл ту эппин, аннеҫӗм
Украина, чыслăн,
Ман айван ачамсене те
Ывăлу пек йышăн!

*1839*

*Питӗр.*

# КАТЕРИНА

*Василий Андреевич Жуковские,*
*1838 çулхи апрелĕн 22-мĕшне асăнса*

I

Чипер пикесем, юратăр,
Москале* ан савăр:
Москальсем ютран килеççĕ,
Сирĕнтен кулаççĕ.
Йăпанать те пăрахать вăл—
Ун ятне çеç асăн.
Хĕре пусĕ йывăр хурлăх,
Сывлĕ вăл пит ассăн.
Вăл хăй çеç пĕтес пулсассăн,
Тен, юрать те пулĕ,
Анчах хĕр шăпишĕн амăш
Юхтарать куççулĕ.
Пĕтме чăн сăлтав пулсассăн—
Юрăпа чун шантăр,
Ун çинчен ыйтмасть пĕри те,
Шеллемест никам та.
Чипер пикесем, юратăр,
Москале ан савăр:
Москальсем ютран килеççĕ,
Сирĕнтен кулаççĕ.

Ашшĕне те, амăшне те
Итлемерĕ Катря,

---

* *Москальсем* тесе Украинăра патша çарĕнчи салтаксене каланă. Кунта улпут-офицер çинчен сăмах пырать.

Çамрăк чунĕ-чĕрипе вăл
Москале юратрĕ.
Унпала садра çӳрерĕ,
Чĕрине йăпатрĕ,
Хĕрĕн чыслă шăпине те
Çавăнтах çухатрĕ.

Апата чĕнетчĕ амăш,
Хĕрĕ тăнламастчĕ:
Тусĕпе ăçта тĕл пулнă,
Унтах çĕр каçатчĕ.
Хăмăр куççене каç-каçăн
Вăл ăшшăн чуптурĕ,
Анчах ял çине сасартăк
Усал хыпар тухрĕ.
Ун çинчен çынсем калаçчĕр,
Тĕрлĕрен пуплеччĕр:
Савнăран илтмест, сисмест те
Хуйăх çитнине хĕр.
Акă вăрçă сиксе тухрĕ,—
Похода чĕнеççĕ.
Москаль кайрĕ, Катруçа халь
Тутăрпа витеççĕ.*
Ят кайни çине пăхмарĕ,
Ăна тӳсме пулĕ:
Савнă тусшăн юхтарсассăн,
Тутлă йӳç куççулĕ.
Килме пулчĕ унăн тусĕ:
Сывă юлтăр пуçăм,
Илсе кайăп, тусăм!—терĕ.
Кĕт ăна, Катруся!
Москальпе тăванлансассăн—
Хуйăхна та манăн.
Халь—кирек мĕнле калаçчăр,
Çынсене чараймăн.
Куççульне шăлать Катруся,
Текех çук ун тунсăх,
Урамра хĕрсем юрлаççĕ,

* Украинăри йăла тăрăх, качча каймасăр ача çуратнă хĕр пуçне тутăрпа витнĕ.

Савăнаççĕ унсăр.
Тунсăхне сирет Катруся,
Каç пулсассăн, лăпкăн,
Витрепе тухса каять вăл
Шыв ăсмашкăн, шăппăн.
Ерипен çеç, систермесĕр
Çăл патне çитет вăл,
Палан айĕнче тӳлеккĕн
Грицăна юрлать вăл.
Куççуле курса палан та
Хурланса йĕрет-çке.
Таврăнать хĕр—сын курманшăн
Чунĕ хĕпĕртет-çке.
Тунсăхне сирет Катруся
Нимĕн шикленмесĕр,
Кантăкран ялан пăхать хăй,
Кĕтет куç илмесĕр.

Кĕтнĕ, кĕтнĕ Катерина...
Вăхăчĕ васканă.
Сывмарланнă хĕр, мăнтарăн,
Йăлтах вăйсăрланнă;
Халсăрланнă-çке, мăнтарăн,
Йывăр сывламашкăн...
Çăмăлланнă та—сиктернĕ
Сăпкине йăвашшăн.
Кӳршĕсем хаяр чĕлхеллĕ,
Амăшне витлеççĕ:
„Сан килне ахальтен мар-мĕн
Москальсем çӳреççĕ.
Сан тăван хĕрне кам савмĕ,—
Пит хитре, типтерлĕ,
Такам ачине ачашшăн
Ахальтен сиктермĕ:
Шырасан, паллах, тупатăн...
Тен, хăвах ăс патăн?..“
Çак хĕртен çапла кулнишĕн
Пуçăра пуласчĕ,
Ун чунне ыраттарнишĕн
Чĕлхĕрсем хăрасчĕ!

Катерина, ман чĕреçĕм!
Терт-инкек куратăн!
Çĕр çинче епле-ши пурнăн
Эс тăлăх-туратăн?
Кам калаçĕ, кам йăпатĕ?
Хӳтлĕх эс тупаймăн.
Аннӳпе аçу та—ют халь,
Вĕсемпе пурнаймăн.

Çирĕпленчĕ Катерина,
Ерипен кĕрет вăй,
Кантăкран тинкерне майĕн
Ывăлне лăпкать хăй.
Тинкерет вăл—çук-çке, çук-çке...
Тен, килмест те пулĕ?
Сад айне тухса йĕресчĕ—
Çын курсассăн кулĕ.
Сад айне тухать Катруся
Сар хĕвел ансассăн,
Пепкине вăл ыталать те
Асилет ачашшăн:
„Çакăнта ăна кĕтеттĕм,
Унпала аванччĕ.
Ав лере... пепкемçĕм—ывлăм!..“
Терĕ те шăпланчĕ.

Чиесем, черешньăсем те
Кунтан-кун ешернĕ;
Ĕлĕкхи пекех Катруся
Шăп сада çӳренĕ.
Савнине-тусне кĕтсе вăл
Юрă шăрантарнăн
Çӳремен ĕнтĕ хаваслăн,
Юрламан, мăнтарăн.
Хурлăх пуснă Катерина
Шарламасăр ларнă,
Кӳршĕ-аршăсен элекĕ
Ăна йăлăхтарнă.
Çын çини, тăрăхлани те—
Пурте курайманлăх...

Пĕлтерсем, ăçта эс тусăм?
Кам-ши парĕ канлĕх?
Инçетре çав, кураймасть вăл,
Хĕр тарăхнине те,
Инçетре çав, илтеймест вăл
Куççуль тăкнине те.
Тен, Дунайăн леш енче вăл
Хăмăр куçне хупрĕ?
Е Мускав çывăхĕнче вăл
Урăх пике тупрĕ?
Çук, Дунайăн леш енче эс
Вилтăпри кураймăн.
Çакнашкал чипер пике вăл
Шыраса тупаймĕ.
Кайтăрах Мускав çĕрне-и,
Тинĕс урлă иштĕр,
Катеринăн сăн-питне-çке
Камăн сăнĕ çиттĕр?
Вĕри юнлă, хăмăр куçлă,
Хура куçхаршиллĕ.
Телей çеç паман çав амăш,—
Халь камран-ши илĕ?
Çĕр çинче эс пĕр телейсĕр
Хир чечекĕ евĕр:
Çил те авĕ, çапĕ çумăр,
Татĕç шеллемесĕр.
Çăвăн, çăвăн Катерина,
Хаклă мар, куççулĕ!
Москальсен, килне каюçăн,
Урăх пулнă çулĕ.

II

Сĕтел хушшинче салхуллăн
Ларнă ашшĕ унăн;
Çут тĕнче курасшăн мар хăй,
Шухăша вăл путнă.
Упăшки çумне ват амăш
Пырса ларчĕ шăппăн.
Куççульпе питне çуса вăл
Хĕрне чĕнчĕ лăпкăн:

— Туй пирки епле-ха, хӗрӗм?
Мӗншӗн эс хӑрахӑн?
Каччу патӗнчен килеҫҫӗ
Евчӗсем вӑраххӑн.
Мускавра эппин. Кайсамччӗ.
Хӳтлӗхне тупсассӑн,
Ху аннӳн ятне нихҫан та
Ҫын ҫинче ан асӑн.
Йывӑр ҫул ҫуратрӑм пулӗ,
Тен, ҫуках тухаттӑм.
Эп кӑна пӗлнӗ пулсассӑн,
Шыва пӑрахаттӑм...
Ҫакӑ хурлӑха курмастӑн,
Апӑршам, телейсӗр...
Хӗрӗм, манӑн тӑван хӗрӗм,
Ман чечекӗм эсӗ!
Сар хӗвел ҫинчи ҫырла пек
Эп сана йӑпатрӑм.
Хӗрӗм, хӗрӗм, кӑвакарчӑн,
Эсӗ мӗн кӑтартрӑн?..
Пӑяну патне... уттар-ха!
Мускавра ыр курӑн.
Аннӳне эс итлемерӗн—
Унпа лӑпкӑ пурӑн.
Шыраса тупас пулсассӑн,
Ҫавӑнтах юлсамччӗ,
Каялла киле килмешкӗн
Ҫул ан шырасамччӗ.
Каялла эс ан та таврӑн,
Пурӑн хурланмасӑр...
Анчах кам мана пытарӗ,
Тӑван хӗрӗм, сансӑр?
Маншӑн, халсӑршӑн, кам йӗрӗ,
Кам-ха хӳхлӗ маншӑн?
Вилтӑпри ҫине кам лартӗ
Пӗр палан йӑвашшӑн?
Кам турра кӗлтӑвӗ маншӑн,
Кам-ха хута кӗрӗ?..
Ман ҫурхи чечен чечекӗм,
Хӗрӗм, тӑван хӗрӗм!..

Кай... эппин!—
Ӑсатнӑ майӑн
Амӑш тайкаланчӗ.—
Санпа турӑ!—терӗ, ӳкрӗ,
Вилнӗ пек йӑванчӗ.
— Тухса кай! Мӗскер тӑратӑн?..—
Ӑна ашшӗ чӗнчӗ.
Йӗрсе ячӗ Катерина,
Хӑвӑрт чӗркуҫленчӗ:
— Каҫарсам мана, аттеҫӗм,
Килӳнтех хӑварччӗ!
Хӗрхенсем Катрусюна эс,
Ырӑ кӑвакарчӑн!..
— Турӑ-и сана каҫартӑр,
Ыр ҫынсем хӗрхенӗҫ!
Аҫуна кӑшт ҫӑмӑл пулӗ,—
Ҫула хатӗрлен эс.

Хуллен тӑчӗ те пуҫ тайрӗ,
Шӑппӑн тухса кайрӗ;
Пӳртре юлчӗҫ икӗ тӑлӑх,
Икӗ ватӑ тӑлӑх.
Чие садӗнче йӑвашшӑн
Вӑл турра кӗлтурӗ,
Чӗптӗм ҫӗр хайпе вӑл илчӗ,
Вара ҫула тухрӗ.
— Эп тӑван ҫӗре тек килмӗп,—
Терӗ Катря шӑппӑн,—
Ют ҫынсем ютра пытарӗҫ,
Эпӗ выртӑп лӑпкӑн.
Чӗптӗм ҫӗр, ҫак пӗр тӗпренчӗк
Ӳтӗме хуплатӑр,
Вӑл хаяр шӑпам ҫинчен йӑлт
Ҫынсене калатӑр...
Кирек хӑш тӗле пытарччӑр,
Ан кала тархасшӑн.
Эп леш тӗнчене кайсассӑн,
Асӑнччӑр йӑвашшӑн.
Ывӑлӑм йӑлтах пӗлтерӗ!
Анчах эс каламӑн...
Хӳтлӗхе ӑҫта тупас ман,

Таса турă амăш?
Хамăн хӳтлĕхе эп тупăп
Авăра чăмсассăн.
Çылăха вăл каçарттарĕ
Тăлăха юлсассăн,
Ашшĕсĕр!..—
Утать Катруся.
Эрленсе йĕрет вăл;
Пуçне тутăр çыхса янă,
Аллинче ун—ывăл.
Ялтан тухрĕ те майпен вăл
Хирелле уттарчĕ,
Çавранса пăхса пуç тайрĕ,
Хыттăн йĕрсе ячĕ.
Пĕчченех хирте тăрать вăл
Тăлăх тополь евĕр.
Куçĕнчен куççулĕ юхрĕ
Чарăна пĕлмесĕр.
Катерина куççуль витĕр
Нимĕн те курмасть-çке,
Ывăлне çеç ыталать те
Хыттăн чуптăвать-çке.
Алăра пăхса выртать вăл
Нимĕн ăнланмасăр;
Амăшĕн хĕвне чикесшĕн
Ал тăсать хăй харсăр.
Ерипен вăрман хыçне ак
Хĕвел анса ларчĕ.
Куçне шăлчĕ те мăнтарăн
Малалла уттарчĕ.
Ял çинче нумай калаçрĕç,
Темĕн те пуплерĕç,
Анчах хĕрĕн ашшĕ-амăш
Ăна тек илтмерĕç.

Пĕр-пĕрне ак мĕн тăваççĕ,
Çынна çын çиеççĕ!
Сăнчăрлаççĕ е пусаççĕ,
Е хăйсем вилеççĕ.
Мĕншĕн? Пĕлет пулĕ турă!
Тĕнче—аслă, ирĕк,

Анчах, темшĕн, пĕччен çыншăн
Хӳтлĕх çук-çке пирĕн.
Пĕрисен çĕр вĕççĕр-хĕрсĕр,
Пур-çке савăнмалăх.
Теприсен—шăпах виç аршăн,
Вилсен пытармалăх.
Ыр çынсем, лешсем ăçта-ши?
Чун ялан çунатчĕ
Вĕсемпе пĕрле пурнасшăн.
Çухалчĕç, çухалчĕç!

Çĕр çинче шăпа пур,
Кам ăна пĕлет-ши?
Тĕнчере пур ирĕк,
Вăл ăçта çӳрет-ши?
Çĕр çинче çынсем пур—
Ылттăн тăхăнаççĕ,
Шутласан, пуян пек,
Телейне курмаççĕ—
Ирĕксĕр, шăпасăр!
Инкекпе туслашрĕç—
Жупан тăхăнаççĕ,
Йĕрме вăтанаççĕ.
Ылттăна илсемĕр,
Пурте пуянланăр,
Йӳçĕ куççуле çеç
Ман валли хăварăр.
Телейсĕрлĕхе эп
Куççульте путарăп,
Ирĕксĕрлĕхе эп
Çарранах-и таптăп!
Ирĕкре чĕреçĕм
Тапма пуçласассăн,
Эп пулăп пуян та
Кăмăллă, хаваслă!

III

Шăппăн çывăрать юманлăх,
Çалтăрсем çиçеççĕ.
Хирти ешĕл курăк тăрăх

Тыркассем çӳреççĕ.
Телейрен те, хурлăхран та
Кун каçа ĕшеннĕ
Ыр çынсем ĕнтĕ çывраççĕ,—
Каç иккен хĕрхеннĕн
Кашнинех ĕнтĕ вырттарнă,
Ачашлать-çке лăпкăн...
Халь ăçта-ши Катерина,
Тен, канать пуль шăппăн?
Тен, хирти капан çумне вăл
Ывăлĕпе ларнă?
Вăрманта, тен, хыр айне вăл
Кашкăртан пытаннă?
Çакă асапа курмашкăн
Мĕншĕн-ши çуралнă,
Хура куçхарши, чипер сăн
Хурлăха-шим панă?!
Малашне унпа мĕн пулĕ?
Хурлăх пысăк питĕ.
Ют çынсем ăна хĕрхенмĕç,
Çул тусанĕ витĕ.
Хĕл, тăман ăна кĕтеççĕ...
Тупăнсан москалĕ,
Тен, хăй ывăлне хĕрхенĕ
Е калле хăвалĕ?
Çук, унпа йăлтах вăл манĕ,
Юхмĕ тек куççулĕ!
Арăмне тĕл пулнă евĕр,
Вăл ăна тĕл пулĕ.

Кăшт тăхтар-ха, кăшт итлер-ха,
Ун чух паллă пулĕ...
Çынсенчен ыйтса пĕлер-ха,
Хăшĕ Мускав çулĕ.
Эх, инçе, инçе-çке çулĕ!
Асăнма та йывăр.
Йăлт аса илес пулсассăн,—
Чуна питĕ тăвăр.
Каллĕн-маллĕн эп çӳрерĕм—
Çӳрес мар тек ĕмĕр!..
Çав асап çинчен калас-тăк,

Нихăш те ĕненмĕр.
„Вăтанмасăрах суять вĕт,—
Тейĕç ĕненмесĕр,—
Сăмахпа çынсен пуçне çеç
Çавăрать йĕркесĕр...“
Тĕрĕсне çынсем калаççĕ!
Чун йĕрет пулсассăн,
Сирĕн, калăр, мĕн ĕç пур-ши,
Ан хурланăр маншăн!
Кашниннех халь хурлăх пур-çке,
Кашнин ăш вăркать-çке.
  Çитĕ, çитĕ! Халлĕхе эс
  Çулуна илсемччĕ,
  Чĕлĕм чĕрт те, чĕресемĕр
  Текех ан йăшкаччăр.
  Асапсем çинчен каламăп,—
  Шуйттан патне кайччăр!—
  Кайран тĕлĕкре аптратĕç.
  Эп мана пуçлана,
  Çул çинче мĕнле çӳрет-ши
  Катерина манăн!

  Киева каян çул тăрăх
  Чумаксем* утаççĕ,
  Ешĕл вăрманта янравлăн
  Пугача** юрлаççĕ.
  Хĕр пырать вĕсене хирĕç,—
  Кĕлĕрен килет-шим?..
  Мĕншĕн хурлăхлăн пăхать вăл,
  Ăна мĕн çитмест-ши?
  Хыçне пушă хутаç çакнă,
  Çĕтĕк ун свиткийĕ;***
  Ун пĕр аллинче туя пур,
  Тепринче—пепкийĕ.
  Чумаксен тĕлне çитсессĕн
  Ачине вăл витрĕ.

---

* *Чумаксем* тесе Украина хресченĕсене каланă, вĕсем вăкăрсемпе Крыма е Дона тăвар тата типĕтнĕ пулă турттарма çӳренĕ. Хăйсен таварĕсене вĕсем ярмаркăра сутнă.

** *„Пугач“* (Ӳхĕ)—Украина халăх юрри.

*** *Свитка*—çиелтен тăхăнмалли вăрăм тумтир.

—Мускава çул ăçталла-ши?—
Тесе шăппăн ыйтрĕ.
—Мускава? Шăпах ак çакă.
Ăçта çул тытатăр?
—Мускава... Мана хĕрхенĕр,
Татăк çăкăр парăр!—
Ыйтрĕ те хăй, намăсланчĕ—
Мĕн тума пултарăн!
Кирлĕ марччĕ те... ача пур,
Выçă-çке, мăнтарăн!
Куççульпе питне çуса вăл
Малалла уттарчĕ.
Иваçе валли пĕремĕк
Броварта* туянчĕ...
Çул ыйта-ыйта Катруся
Малалла васкарĕ.
Хăшпĕр чух çатан çумне вăл
Çĕр касма выртаçрĕ.

Акă мĕн тумашкăн куçăр, хăмăр куçăр:
Ют çĕрте куççулĕ вĕççĕр юхтарма!
Хĕрсем, курăр ĕнтĕ, хĕрсем, лайăх курăр,
Сире те ан лектĕр çапла шырама,
Вăл çӳренĕ евĕр çӳреме ан тухăр,
Кайран ним пĕлмен пек эсир ан та ыйтăр:
Пире ма кӳртмеççĕ, тесе, çĕр касма.
Кăлăх мĕн тума ыйтас-ха!
Çавах ăнланмаççĕ!
Кама турă айăплана,
Ăнах айăплаççĕ...
Этем пурте, вулă евĕр,
Çиле май авнать-çке.
Тăлăха хĕвел пăхать те—
Ăшшине памасть-çке.
Хĕве чикĕç хĕвеле те
Çынсем вăй çитсессĕн,—
Тăлăха вăл ан çутаттăр,
Ан йăпантăр мĕскĕн.
Ма çаплах хĕн кăтартатăн,

* *Бровары*—Киев çывăхĕнчи ял, Мускав çулĕ çинче ларать.

Эй, çӳлти аттеçĕм?
Мĕнле айăп пур-ха хĕрĕн?
Çынсем мĕн кĕтеççĕ?
Йĕртĕр, асаплантăр, теççĕ...
Катерина, ан йĕр!
Çынсем умĕнче ан макăр,
Тӳс, тăлăх-турат хĕр!
Ан шуралтăр, тен, пулсассăн
Чипер пит-сăн хăвăн,
Вăрманта мĕн ирчченех эс
Куççульпеле çăвăн!
Çăвăнатăн та—курмаççĕ,
Çын курсассăн кулĕ.
Куççуль юхнă чух чĕрӳ те
Ирĕк, лăпкă пулĕ.

Акă епле хуйхă тĕл пулма пултарĕ:
Катруçа пăрахрĕ йăпăлти москаль!
Суккăр çав инкекĕ: çулăхрĕ, курмарĕ,
Çын курать пулсан та, çын шеллемĕ халь:
„Пĕттĕрех хĕр, тейĕç, хурлăхпах вăл пĕттĕр,
Хăйне-хăй пĕлмерĕ вăл хисеп тума!“
Хĕрсем, хыт астăвăр, сире те ан лектĕр,
Хура кун килсессĕн, москаль шырама!

Халь ăçта-ши Катря?
Çатан çумĕнче çывратчĕ,
Шуçăмччен тăратчĕ.
Мускава çитме васкарĕ—
Хĕл сасартăк ларчĕ.
Çавăрать хирте тăманĕ,
Йывăр Катряна:
Çăпати, сăхманĕ çĕтĕк,—
Сивĕре шăнать.
Малалла утать Катруся—
Умра мĕн курнать?
Москальсем килеççĕ пулĕ...
Чĕре хумханать.
Хирĕç вĕçнĕ пек васкарĕ:
—Ыр çынсем, пĕлтерĕр,
Манăн Ивана курман-и?

—Курайман-ха!—терĕç.
Унран пурте мăшкăлласçĕ,
Чăтма çук шӳтлесçĕ:
—Ха, хĕрарăм! Маттурсем-мĕн!
Илĕртме пĕлесçĕ!—
Пăхса илчĕ Катерина,
Юхрĕ ун куççулĕ:
—Лăплансамччĕ, манăн ывлăм!
Мĕн пуласси—пулĕ.
Малаллах санпа утар-ха,
Тен, май пур тупмашкăн.
Сана парăп, вара юрĕ
Тупăка выртмашкăн.—
Шухă çил асма пуçларĕ,
Çил-тăман çĕклерĕ.
Хирте чарăнчĕ та Катря
Хытă ĕсĕклерĕ.
Хирте çил-тăман лăпланчĕ,
Тăвăл иртсе кайрĕ.
Йĕрĕччĕ те Катерина—
Куççуллĕ юлмарĕ.
Ывăлĕ çине пăхать те:
Куççульпе йĕпеннĕ,
Сывласа, пăхса выртать-çке
Чечек пек илемлĕн.
Шăппăн кулчĕ Катерина,
Пит те хурлăн кулчĕ:
Чĕрене чулпа пусарнăн
Чуна йывăр пулчĕ.
Таврана пăхать Катруся—
Умрах вăрман курчĕ,
Ун çумĕнче, çывăхрах-мĕн,
Ларать такам çурчĕ.
—Атя, ывлăм... Каç пулать кĕç...
Çĕр каçма, тен, кӳртĕç.
Кӳртмесессĕн, мĕн тăвас-ха,
Урамрах çĕр иртĕ.
Сивĕре кашт хӳтлĕх пулĕ
Çурт çумне выртсассăн...
Эс пĕччен ăçта çĕр каçăн

Эп вилес пулсассăн?
Йытсемпе пĕрле эс выртăн,
Йытăпа çĕр каçăн!
Йытăсем çыртаççĕ хытă,
Çавах ят ямаççĕ.
Вĕсем санран тăрăхламĕç,
Кулмĕç, ман пепкеçĕм...
Эй, эс, хурлăхăм ман, хурлăх!
Ăçта пуçа хурăп?
Тĕнчере-çке йытă та хăйне май шăпаллă:
Ыррăн калаçаççĕ тăлăх-туратпа;
Хĕнĕç ăна, ятлĕç,—анчах çакă паллă:
Амăшĕнчен кулмĕç, кулмĕç усалпа.
Ак кунран кулаççĕ, пылчăкпа переççĕ,
Çĕкленме те памĕç—таптĕç яланах...
Урамра кама-ха йытăсем вĕреççĕ?
Кам çатан çумне халь шăпăрт йăванать?
Кама хĕн курма çеç пăрахса хăварнă...
Хура куçхарши çеç ăна амăш панă,
Унпа савăнма та çын чарать ăна.

IV

Чăн тӳпене кармашнă, çӳлĕ,
Пас тытнăран шап-шурă пӳллĕ
Лараççĕ вата юмансем.
Пĕве. Ӳсеççĕ хăвасем,
Çав пĕвене йăлтах юр хӳнĕ,
Унтах вак каснă халь çынсем.
Ак пĕлĕт айĕнчен вăтаннăн
Çĕр çинелле хĕвел пăхать.
Пуçлать çил алхасма хаяррăн,
Куçна уçса пăхма хăяймăн,
Вăрман çеç шав кашлать, улать.

Ӳхĕрет, улать çанталăк
Тем амакĕ курнăн.
Çавăрать çеç айăн-çийĕн
Çил-тăманĕ урнăн.
Вăрман хуралçийĕ тухнă
Вăрмана каймашкăн,

Анчах ахӑрать ҫил-тӑвӑл,
Памасть куҫ уҫмашкӑн!
— Ак тӑман! Ак урнӑ тӑвӑл!
Вӑрмана ҫитеймӗн!..
Мӗн ара? Епле ҫынсем-ши?
Вӗсем мур чухлех-мӗн!
Тен, усал хуса кӑларнӑ,
Тен, ӗҫпех ҫӳреҫҫӗ.
Москальсем мар-и, Ничипор?
Шап-шурах килеҫҫӗ.
— Москальсем-и?—Катеринӑн
Аллисем чӗтреҫҫӗ.—
Хӑш тӗлте-ха, хӑш тӗлте-ши?
— Авӑ, кур—килеҫҫӗ!—
Алӑкран кӗҫ Катерина
Тухса ыткӑнать.
Ахаль мар пуль Мускав ячӗ
Асӗнчех тӑрать:
Москале ирччен вӑл чӗнчӗ,
Чӗнчӗ тӗлӗкре...
Тунката та юр-кӗрт урлӑ
Халь вӑл вӗҫтерет.
Ҫарранах юр ҫине тӑчӗ,
Куҫҫульне шӑлать,
Москальсем килеҫҫӗ хирӗҫ,
Пурте утпала.
„Манӑн хуйхӑм, ман шӑпамҫӑм!"
Тинкерсе пӑхсассӑн
Курчӗ вӑл—малта аслийӗ.
— Ваня, ман хавасӑм!
Ман чӗреҫӗм, ман телейӗм!
Ма хыпар тумарӑн?..—
Уртӑнать ӗсенкӗрен кӗҫ,
Леш ҫавах пӑхмарӗ.
Лашине шпорпа тапать ҫеҫ...
— Мӗншӗн пит васкатӑн?
Е аса илес килмест-и,
Катряна-и мантӑн?
Эпӗ санӑн, сан Катруся,
Манӑн ӑмӑрткайӑк!

Ан васка, ёсенке татăн,
Тинкерсе пăх лайăх.—
Илтмĕше перет те лешĕ
Каять сиккипе.
— Хĕрхенсем мана, хĕрхенччĕ!
Кур, йĕрместĕп эп.
Тинкерсе, куҫран пăхсамччĕ!
Тен, эс паллаймарăн?
Туршăн та, ку эп—Катруся...
— Хăп, ухмах хĕрарăм!
Хуса ярăр, мĕн тăратăр!
— Туррăмçăм эс, турă!
Мана вăл та пăрахать-ҫке!
Кам-ха тупа турĕ?..
— Илсе кайăр! Мĕн тăратăр!
— Телейсĕр ҫуралтăм...
Ман ҫине ал ҫĕклемешкĕн
Эс епле хăятăн?
Санпала садра эп ларнă,
Чĕререн юратнă,
Саншăнах эп чипер ывăл,
Тусăмçăм, ҫуратнă.
Эсĕ те пулин тархасшăн
Халь ан ютшăнсамччĕ!
Санăн тарçă эпĕ пулăп...
Эсĕ тĕл пулсамччĕ!
Пуринпе те!.. Эпĕ манăп
Сана савнине те,
Манăп ывăл пуррине те,
Манăп намăсне те;
Эп йăлтах тÿссе ирттернĕ,
Тÿснĕ, ĕненсемччĕ...
Мана ман эс, ывăла ҫеç
Ан пăрах, илсемччĕ!
Ан пăрах ăна, юрать-и?
Хупала хăвар эс...
Кĕҫех курăн ăна, курăн...—
Пÿртелле васкарĕ.
Ывăлне йăтса тухать вăл
Хăвăртрах пÿртрен,

Унăн куçĕ йалт тăртаннă
Йĕрсе пĕтнĕрен.
— Ак вăл! Акă! Кур, пăхсамччĕ!
Мĕншĕн-ха пытантăн?..
Çук-мĕн... кайнă... Ывăлна та
Пăрахса хăвартăн...
Ман ăçта кайса кĕрес-ши
Мĕскĕн тăлăхпа?
Москальсем, ăна илсемĕр,
Илĕр хăвăрпа!
Ывăлран ан ютшăнсамăр,
Пĕччен ан хăварăр.
Эсир ăна асли патне
Илсе кайса парăр!
Вăл хăй ачине пăрахрĕ,
Эпĕ те пăрахăп.
Ашшĕне кышлатăр хурлăх
Ĕмĕрех вăраххăн.
Ывăлăм! Сана çуратрăм,
Чуна çылăх пулчĕ,
Çын кулли пулмашкăн ӳс эс!—
Шур юр çине хучĕ.—
Тăван аçуна шыра эс,
Эп нумай шырарăм...—
Чăтлăха хăй кĕрсе кайрĕ,
Ачи выртса юлчĕ.
Шăннипе йĕрет мăнтарăн,
Москальсем те кайнă.
Ку аван-ха, хурлăха-çке
Ăна çынсем тупнă.

Катря çарранах чупать-çке,
Кĕрт ăшне путать вăл,
Ивана кĕç ылханать хăй,
Кĕçех йынăшать вăл.
Вăрман хĕррине ак тухрĕ...
Çырмана анать.
Сарлака вакка курсассăн,
Хăвăрт чарăнать.
— Турăçăм, чуна халь йышăн,
Ӳте йышăн—эсĕ!..—

Шыв хуллен çеç шăмпăртатрĕ
Вăл вакка сиксессĕн.

Мĕн шырарĕ, çавна тупрĕ
Хăмăр куçлă Катря...
Пĕве çиййĕн çил вĕрсессĕн,
Йĕрне те çухатрĕ.

Юмана шух çил хуçать-и,
Вăл нимех те мар.
Амăшĕ ӳксе вилет-и,
Вăл хурлăхах мар.
Ӳчĕ унăн çĕре кĕнĕ,
Çĕре тивĕç пулнă.
Юлнă унăн ырă ячĕ,
Вилтăприйĕ юлнă.
Тăлăх чĕрине-çке пурте
Ыраттарса кулĕç—
Вилтăпри çинче йĕрсессĕн,—
Ăна çăмăл пулĕ.
Ывăлне валли мĕн юлнă,
Каласа эс парччĕ?
Ăна ашшĕ йышăнмарĕ,
Амăшĕ хăварчĕ.
Мĕн-ха, мĕн-ха тăрса юлнă?
Куççулĕ те хурлăх,
Çул çинчи тусан та хăйăр,—
Нимĕн те çук урăх.
Хура куçхаршийĕ пур ун—
Мĕн тăвас унпа?
Амăш панă... Тăкăнасчĕ
Çилпе, çумăрпа!

V

Кобзарь Киева çул тытнă,
Çул май канма ларнă.
Унпала пĕрле ача пур,
Хутаççем вăл çакнă.
Хĕвел ăшшинче вăл лăпкăн
Тĕлĕрнĕ, мăнтарăн.

Кобзарь И с у с а* ваpaххан,
Шаппан шарантарна.
Ыр çынсем укçа е шушка
Хурса хăвараççĕ,
Хĕрсем тăлăх ачана-çке
Пăрахса параççĕ.
Курсан пурте тĕлĕнеççĕ:
Çĕтĕк вăл, çарран.
Куçхаршине пана амăш,
Телейне—паман!

Киева каять карета,—
Чĕнтĕрлĕ, илемлĕ,
Пĕр улпут унта ларать-мĕн
Çемйипе телейлĕн.
Ак, кобзарь тĕлне çитсессĕн,
Чаранса тăраççĕ.
Чÿречи патне пырать те
Ивась ал тăсать-çке.
Иваçе пĕр çамрăк пани
Укçа персе пачĕ.
Пан ăна курсан, сасартăк
Çавранса çеç ларчĕ.
Вăл куçхаршиpeн палларĕ,
Куçĕнчен те курчĕ;
Тăван ывăлне тĕл пулчĕ,
Анчах ала сулчĕ.
— Эс мĕн ятла?—ыйтрĕ пани.
— Ивась.—Пит аван!—
Ак тапранчĕç, тăлăха йăлт
Витрĕ-çке тусан.
Пухнине вĕсем шутларĕç,
Ура çине тăчĕç.
Хĕвеле пăхса сăхсăхрĕç,
Малалла уттарчĕç.

*1838*

*Питĕр.*

---

* *«Исус»*—кунта: духовнăй сăвă.

## ТИРЕК

Çил вĕрет те вĕтлĕх витĕр,
Уй-хире васкать вăл,
Тиреке пырса тивет те,
Çĕр çумнех авать вăл.
Çÿлĕ пÿллĕ капăр йывăç,
Мĕншĕн ÿссе лартăн?
Уйĕ-хирĕ, тинĕс евĕр,
Сарăлать кăваккăн.
Тиреке чумак курать те—
Усăнать-çке пуçĕ.
Ун çинчен юрлать салхуллăн
Хурлăхла кĕтÿçĕ.
Асăрха эс: çап·çара·çке,
Çап-çара уй-хирĕ!
Хумханать тирек кичеммĕн,
Хăрăнать каç-ирĕн.

Мĕншĕнех-ши хурлă пулнă
Унăн ăраскалĕ?
Каласа парам, хĕрсемĕр,
Эсир итлĕр халĕ!

Çĕмĕрт куçлă хÿхĕм сар хĕр
Хусаха юратнă,
Анчах савнă каччине вăл
Куçĕнчен çухатнă.
Манасса пĕлнĕ пулсассăн,
Юратас та çукчĕ!
Килмессе пĕлнĕ пулсассăн,
Ăсатас та çукчĕ!

Пĕлеймерĕ,—каçхине
Шыв ăсма каймастчĕ,
Каччипе хăвалăхра
Çурçĕрччен тăмастчĕ!
Пĕлеймерĕ вăл, хĕрсемĕр.
Хурлă шăпана-и?—
Пĕличчен пĕлес те мар,
Кайтăр çавана вăл!
Шăпăрт пулăр, лайăх итлĕр!
Çамрăк чун юраттăр,
Хăй кама савас тет—савтăр,
Виличчен йăпантăр!
Çĕмĕрт куçăр, хĕрупраçăм,
Ĕмĕр тăршшĕ çунмĕ.
Панулми пек чăмăр питĕр
Ĕмĕр хĕрлĕ пулмĕ!
Çур пĕве çитетĕр те
Ватăлсах каятăр...
Ма тăхтас, иккĕленес-ха?
Чун туртсан,—юратăр!

Палан йывăçĕ çинче
Шăпчăк шăхăрсассăн,
Улăха тухать сар каччă,
Хăй юрлать хавассăн.
Килĕнчен тухать пике-хĕр
Каччи патне мар-и!
Леш ыйтать унран пит çепĕç:
— Аннӳ ятламар-и?
Куçма-куç вĕсем тăраççĕ.
Шăпчăк—шăрататать çеç.
Шăпчăка итленĕ хыççăн
Килсене утаççĕ.
Вĕсене пĕр çын та курмĕ,
Туслă вĕсем, çепĕç.
— Эс ăçта çӳрен тесе?—
Килсенче тĕпчемĕç...
Çĕмĕрт куçлă хӳхĕм хĕр
Савăннă, йăпаннă.
Уйрăлас кунне хăй сиснĕ,
Калама вăтаннă.

Тăлăх кăвакарчăн пек
Макăрчĕ, хӳхлерĕ.
Анчах унăн сăмахне
Çын хăлхи илтмерĕ.

Ĕнтĕ улăх та шăпланчĕ,
Шăпчăк шăхăрмарĕ.
Сар хăвалăх хушшинче
Хĕр те юрламарĕ.
Юрлама-и, хурланать вăл,
Татăлса çунать-çке!
Савнă тусĕсĕр килйыш та
Ют пек туйăнать-çке.
Савнă туссăр çут тĕнче те
Калама çук тĕттĕм.
Вил те вырт хăть. Пĕр чĕре çеç
Тек тапать-çке хыттăн.

Иртрĕ çул. Тепре те иртрĕ,
Таврăнмарĕ тусĕ.
Чечек евĕр пике типрĕ,
Тĕксĕмленчĕ куçĕ.
„Мĕншĕн-ха çунан?“ тесе
Амăш кулянмарĕ,
„Ватă пуяна каятăн“
Тесе çеç каларĕ:
— Унпала эс тертленмесĕр
Ĕмĕр пурăнатăн.
Вăл укçаллă, вăл тупраллă,
Эс хуçа пулатăн.
— Ват çынна каймастăп эпĕ,
Хăть вĕлер, аннеçĕм!
Ват çынна паран пулсассăн,
Пĕтнĕ ман телейçĕм.
Çамрăк вилĕм тăприне
Вăхăтсăр ан чӳклĕр,
Ват çынна парса тархасшăн
Кунçула ан пӳлĕр!

Хăй тăван хĕрне ват амăш
Итлесе тăмарĕ.
Типрĕ хĕрĕ, çунчĕ хĕрĕ,

Çын сăнĕ юлмарĕ.
Тĕттĕм каç вăл юмăçпа
Калаçса пăхасшăн:
Час килмест-щи чун савни?
Мĕнлерех пурнать-ши?
— Кинемейĕм, асаннеçĕм,
Ырă çын пулсамччĕ!
Чăннине анчах мана эс
Каласа парсамччĕ!
Пурăнать-ши савнă каччăм,
Халь те юрататъ-ши?
Ăçтарах вăл, асаннеçĕм,
Каласам тархасшăн?
Тилмĕретĕп, кинемейĕм,
Эс пĕлмешкĕн тивĕç.
Ватсупна каччă параççĕ.
Час илмешкĕн килĕç.
Ват çынпа-çке ĕмĕрне те
Çамрăк çын ыр курмĕ.
Сикĕттĕмччĕ авăра эп,
Питĕ шел-çке пурнăç!
Вилнĕ пулĕ савнă тусăм?
Ах, апла пулсассăн,
Килĕме те каям мар эп,
Сывлам мар эп ассăн.
Ĕнтĕ пынă хăтасем те,
Пынă ватă каччă.
— Юрĕ, хĕрĕм, юрĕ тетĕп,
Мана çеç тăнлаччĕ.
Хам та эпĕ çамрăк пулнă,
Хĕр чунне туятăп.
Тӳснĕ, чăтнă, çавăнпа халь
Çынна пулăшатăп.
Сан ĕçне эп, чиперккеçĕм,
Тахçанах пĕлетĕп,
Çавăнпа та, хура куçăм,
Эмелпе кĕтетĕп.—
Эмелне тултарчĕ карчăк,
Тикĕт пек эмелĕ.—
Тух та пусă хĕррине эс
Çакăнпа йĕркеллĕн,

Автансем аватас умĕн,
Лайăх çăвăнатăн,
Эмелне пĕр шикленмесĕр
Виç тумлам сыпатăн.
Çакăн хыççăн вара эсĕ,
Çаврăнса пăхмасăр,
Сывпуллашнă вырăна чуп,
Чуп ним шарламасăр.
Ун чухне шăп-шурă уйăх
Тӳпене хăпарĕ—
Ĕç татах эс, килмесессĕн,
Çĕнĕрен тултарăн.
Малтанхи çăвар ĕçсессĕн,
Ĕлĕкхи пек пулăн,
Иккĕмĕш çăвар ĕçсессĕн,
Такан сасси туйăн.
Сан тусу сывах пулсассăн,
Килĕ питĕ хыттăн.
Виççĕмĕш çăвар ĕçсессĕн...
Мĕн пулать? Ан хыпăн!
Пĕлменни аван. Ан сăхсăх,
Ху ĕçне пăсатăн...
Халĕ чуп-ха савăнса эс:
Ĕлĕкхи пулатăн!
Карчăка хĕр ырлăх сунчĕ,
Тухрĕ васкамасăр.
„Пăрахам-ши е ĕçем-ши?"—
Вăл каларĕ сассăр.
Çăвăнчĕ те шăпăр-шăпăр,
Эмелне хăй сыпрĕ,
Пĕчĕкçеççĕ куркине ак
Тата ик хут тытрĕ.
Çунатланчĕ вăл сасартăк,
Хирелле ăсанчĕ,
Макăрса тăраннă хыççăн
Юрă шăрантарчĕ:
„Тинĕс тăрăх, шурă акăш,
Иш эсĕ мăнаçлăн!
Кăтра йывăç, тирек йывăç,
Эс кашла хăватлăн!
Пĕлĕтрен те çӳлерех эс,

Тирекĕм, ӳссемччĕ!
Савнине курма пулать-ши—
Турăран пĕлсемччĕ!
Савнă йывăçăм-тирекĕм,
Пăх-ха тинĕс урлă:
Леш енче пур ырă пурнăç,
Ку енче-çке—хурлăх.
Унта аслă хир-хир тăрăх
Савнă тус çӳрет çке.
Эп йĕретĕп çĕрĕн-кунĕн,
Эп ăна кĕтеп-çке!
Каласа парсам ăна эс:
Ят тӳссе пурнатăп,
Вăл киле таврăнмасассăн,
Пуçăма хуратăп.
Хĕрхенмест мана анне те,
Аййăпăм ăçта-ши?
Кам вара хăйне хĕрхенĕ,
Кам çынни-тавраше?
Кам пырса ăш сăмах калĕ,
Çăкăрне кам патăр?
Ах, аннеçĕм, ах, тĕнчеçĕм,
Турă çеç каçартăр!..
Тирек йывăç, тинĕс урлă
Курăнмасть-и чунăм?
Курăнмасть пулсассăн—макăр,
Пăшăлтат салхуллăн.
Кăтра йывăç, тирек йывăç,
Эс кашла хăватлăн.
Тинĕс тăрăх, шурă акăш,
Иш эсĕ хаваслăн!“

Çакă хурлăхлă юрра-мĕн
Çав пике юрланă,
Çынсене тĕлĕнтермешкĕн
Тирек пулса ларнă.
Çил вĕрет те вĕтлĕх витĕр,
Уй-хиреваскать вăл,
Тиреке пырса тивет те,
Çĕр çумнех авать вăл.
*1839, Питĕр.*

* * *

Мĕнешкелччĕ куçхаршийĕм,
Хăмăрччĕ куççем те...
Таврăнмарĕ-çке телейĕм
Темĕн чуль кĕтсен те.
Хĕрĕн ĕмĕрĕ кĕске вăл:
Сӳнĕ те—хупланĕ,
Кĕрхи мăкăнь çеçки пулĕ,
Вăхăтсăр пăчланĕ.
Кăлăхах иртег ыр ĕмĕр—
Çамрăк кунăм-çулăм.
Тыткăнри саркайăк евĕр,
Тунсăхлать яш чунăм.
Кирлĕ мар хитре сăн-питĕм,
Хăртăр вăл, типейтĕр,—
Пурпĕрех шăпаçăм манăн
Ырлăхсăр, телейсĕр.
Тăлăха тăван кĕтессĕр
Йывăр пурăнмашкăн.
Пĕлĕшсем те—ют çын тейĕн—
Усал çеç тăвасшăн.
Никампа та калаçаймăн,
Нихăш те ыйтмасть-çке:
Мĕншĕн куçăмсем ир-каçăн
Куççульпе тулаççĕ,
Мĕншĕнех капла йĕретĕп,
Мĕншĕн тунсăхлатăп,
Мĕн пирки эп кунĕн-çĕрĕн
Хурланса макратăп...
Никама та курăнмасть вăл

Тăлăх хĕр хуйхийĕ,—
Çулĕсем ун иртчĕр кăлăх,
Татăлтăр чĕрийĕ.
Макăр, макăр эс, чĕреçĕм,
Куçăмсем, шывланăр;
Ăраскалăм çук пулсассăн,
Ыррине кураймăр.
Шухă çилĕ, вĕç эс çивĕч,
Кăвак тинĕс çийĕн—
Аякра, сив тинĕс урлă,
Пурăнать савниçĕм.
Улталарĕ-çке мана вăл,—
Эс ăна курсамччĕ,
Тӳсме йывăр хурлăхăма
Ăна та парсамччĕ...

*1839*

*Питĕр*

# ГАЙДАМАКСЕМ*

## ПОЭМА

*Василий Иванович Григоровича**, 1838 çулхи апрелĕн 22-мĕшне аса илсе.*

Йăлт иртет, мĕнпурĕ—пĕр вĕççĕр-хĕррисĕр...
Ăçта вăл каять-ши? Ăçтан пуçланать?
Ăсли те, айван та çавна пĕлеймесĕр
Пурнать те... вилет... Пĕри çулçă сарать,
Тепри хăрса ларнă, йăлтах типсе ларнă...
Çил çеç вăй вылять куштăрка çулçипе.
Хĕвел çиçсе тухĕ çаплах шĕл-кăваррăн,
Çĕрле çăлтăрсем те хăйсен çулĕпе
Çаплах шуса иртĕç... Эс те, шурă сăнăм,
Кăвак пĕлĕте тек тухăн уçăлма;
Çырмана та çăлсене пăхса эс сăнăн,
Тĕпсĕр тинĕсе те кĕрĕн çутатма;
Курнă эс Вавилонпа ун сачĕсене те,
Курăн эс пирĕн ачасен кунне те.
Эс вилĕмсĕр! Эпĕ санпа калаçма,
Чунтан, тăванла калаçма юрататăп,
Саватăп эс хушнă юрра юрлама.
Кала-ха каллех: мĕн тăвас?—эп çунатăп.
Эпĕ пĕччен мар-çке, эпĕ тăлăх мар:

---

* *Гайдамаксем* тесе Украинăра революциллĕ пăлхавçă хресченсене (повстанецсене) каланă. Польша шляхтине хирĕç çĕкленнĕ вăйлă восстанисем пуринчен ытла 1733—34 тата 1768 çулсенче пулса иртнĕ.

** *Григорович Василий Иванович* (1768 — 1865) — Художество Академийĕн конференц-секретарĕ, Шевченкона крепостнойран хăтарас тĕлĕшпе нумай тăрăшнă, çав хăтăлнă куна асăнса халаллană кунта.

Ачамсем те пур-çке, анчах масарах-и
Хампала илем-и? Çылăх: чĕрĕ чун!
Леш тĕнчере, тен, чуна çăмăлрах-и,
Камах та пулин ун сасне тăнласассăн?
Сасси куççульпе шăранатчĕ-çке ун,
Çынран пытанса вăл сывлатчĕ-çке ассăн!
Çук, илсе каймăп сире, ачамсем!
Кăвак пĕлĕт-çке вĕççĕр-хĕррисĕр те тарăн,
Чун та хăй кунне хăй пĕлеймест, мăнтарăн.
Ăçта çухалать вăл?—Ахаль сăмахсем!
Эппин, çав чуна çĕр çинче аса илччĕр,—
Пит йывăр-çке чапсăр кайма çĕр çинчен.
Хĕрсем, аса илĕр ăна вăрахчен!
Сире юрататчĕ вăл, сире ачашлатчĕ,
Кунçулăр çинчен юрăсем шăрататчĕ.

Хĕвел тухиччен эсир çывăрăр—ман,
Ман сирĕн валли тупмалла утаман.

Гайдамаксем, ывăлăмсем!
Сарлака тĕнчемĕр.
Тĕнче тăрăх ирĕклĕх
Шырама вĕçтерĕр!
Ывăлăмсем, ачамăрсем,
Чăн та, пĕчĕк ăслă!
Аннĕр пек камах сире
Йышăнĕ хаваслăн?
Ывăлăмсем, хăлатăмсем!
Ют çĕршыв ан шырăр,
Украинăна çул тытăр,
Вăл—тăван çĕршывăр;
Унта хуйхă тĕл пулсан та,
Вăл—тăван çĕршывăр.
Унта тупăнĕ ыр кăмăл,
Вăл сире хĕрхенĕ.
Кунта... кунта... пурнăç йўçĕ!
Пулĕ кĕртекенĕ,
Анчах ун пўртне кĕрсессĕн
Хăвăнтан кулаççĕ;
Ăслисем-çке: хĕвеле те
Тем тесех хурлаççĕ:

„Вăл унтан тухмасть-мĕн; тĕрĕс
Çутатмасть те, имĕш.
Ак мĕнле çутатмалла...“ теç.
Мĕн калас-ха хирĕç?
Итлесех пулать. Тен, чăн та,
Вĕсем хушнă евĕр
Сар хĕвел тухасшăн мар-тăр...
Вĕсем—пуç. Ан тивĕр.
„Сирĕн чапăра пĕлетпĕр!“
Тейĕç те ал сулĕç,
Хăйсене килентерсех-çке
Ахăлтатĕç, кулĕç.
Выртчăрах сакайĕнче халь!
Акă батька тăрĕ,
Ĕлĕкхи çинчен пире вăл
Хамăрла юптарĕ.
Е пĕр-пĕр айван тӳркессĕн
Сăмаха çаптарĕ,
Çапаталлă пĕр Яремăна
Сăнласа-и парĕ.
Эх, ухмах, ухмах çав пуçăм!
Сахалрах хĕненĕ.
Ĕлĕкхи казаксенчен-çке
Вил тĕми çĕкленнĕ.
Çавă çеç тăрса халь юлнă,
Ăна та ватаççĕ.
Эс çынна итлеттересшĕн
„Суккăрсем макраççĕ“
Юрруна. Мĕскер вăл, тусăм!
Ырă кун кĕтен-тĕк,
Чап-хисеп илес килсессĕн:
„Матĕрне пикем“ те,
„Чунăм савнă хура куçăм“,
„Султан, паркет, атă“—
Акă чап сана! Сăмах-и вăл:
„Тинĕсĕм, вылятăн!“
Ху йĕрегĕн те, сан хыççăн
Çĕтĕк-çатăк ушкăн
Ĕсĕклет...—Тавах, атсемĕр!
Ак мĕнле ăс хушнă!
Ашă-çке туллатнă кĕрĕк,

Анчах тăвăр пулнă;
Ăслă-ăслă канашсем те
Суяпа-çке тулнă!

Ан та ятлăр!.. Кăшкăрсан та,
Пурпĕр тăнламастăп,
Ăслисем патне нихçан та
Пуççапма каймастăп;
Хам пӳртре, пĕччен çĕ пусăн
Хăть айван пулам-и,
Чун кӳтсе килсен, ача пек,
Пĕр йĕрем, юрлам-и.
Юрă хурăп: тинĕс, тейĕп,
Хумусем выляççĕ;
Тĕттĕм хир тĕмески çийĕн
Çилсем вăшлатаççĕ.
Юрă хурăп: вилтăприйĕ
Уçăлайрĕ, курăр—
Запорожецсем сиктерчĕç,
Сарлака хир урлă;
Утаманĕсем малта-мĕн,
Бунчуксем çиçеççĕ...
Кăвак тинĕс хĕррине ак
Тур утсем çитеççĕ.
Шарлаксем шарлаççĕ шуххăн,
Хăмăшсем кашлаççĕ—
Тем килсе сиксе тухассăн
Тăвăллăн шавлаççĕ.
Эп тăнлатăп та ыйтатăп
Ватăран салхуллăн:
„Мĕншĕн, аттесем, хурлантăр?"
Вăл калать: „Эх, ывлăм,
Ăслă Днепр пире çиленнĕ,
Макăрать Украйнă...
Эпĕ те куççуль тăкатăп;
Çав самант ретшеррĕн
Утаманĕсем тухаççĕ,
Сотниксем ĕлккенĕн
Пансемпе иртсе пыраççĕ,
Гетмансем; çи-пуçĕ—

Кашнинех йăл кĕмĕл-ылттăн,
Кăмăлĕсем уçă.
Чухăн ывăлĕ патне-çке,
Ман пата, пыраççĕ,
Украинăна аса илсе,
Шавлăн калаçаççĕ:
Вĕсем Сечь* çĕкленĕ пулнă,
Походра çӳренĕ,
Кимсемпе шарлан шыв урлă
Каçнă кĕпĕрленнĕн;
Кăвак тинĕс çинче пулнă,
Ялкăшнă Скутари**,
Польшăра чĕлĕм чĕртсессĕн,
Килнелле кустарнă.
Украинăна çитсессĕн,
Пухнă ĕçкĕ-çикĕ.
„Хавас юрă, тулли алтăр!"
Казаксем, ялт сикĕр!
Пултарать хуçа, пĕлет вăл,
Пуç таять: ĕçсемччĕ!
Кобзарь ларчĕ, казак сикрĕ,
Хортица*** чĕтренчĕ.
Ак, метелица ташларĕç.
Гопак çаптараççĕ;
Алăран алла пĕр алтăр
Çаврăнать. Шавлаççĕ:
„Казаксем, çĕр çĕмĕрттерĕр!
Çил, çӳре уй-хирĕн!
Юхтăр юрă, тултăр алтăр,
Пулĕ халĕ ирĕк!"—
Ваттисем ларса ташлаççĕ.
— Яшсенчен ан юлăр!
Ачасем маттур, теç, пирĕн,
Пансемех ак пулăр!
Утаманĕсем çӳреççĕ
Канашланă евĕр,

* *Сечь Запорожская* — Украинăри казаксен Днепр леш енче XVI ĕмĕрте туса хунă организацийĕ.

** *Скутари*—Константинополь (Халь Стамбул) çумĕнчи вырăн.

*** *Хортица*— Днепр çинчи утрав. Унта пĕр вăхăт Запорожская Сечь вырнаçнă пулнă.

Пит сăпайлăн. Ак, сасартăк,
Акă, тӳсеймесĕр,
Яшсем пек сикме пуçларĕç!
Ватăран кам кулĕ?..
Эп пăхатăп, савăнатăп,
Куçăмра—куççулĕ.

Пăхса савăнатăп, куçăма шăлатăп...
Тăлăх мар-мĕн эпĕ, манăн йыш пурнать!
Чухăн пӳлĕмре ак çеçенхир куратăп,
Казаксем ĕçеççĕ, çил-тăвăл шавлать;
Куçăм умĕнчех ав тинĕс вăйă вылять,
Салхуллă тĕме, унтах тополь кашлать,
Хĕр шăппăн çеç, ,,Гриця" юрлать, эп тăнлатăп,—
Çук, çук, тăлăх мар эп, тус-йышăм пурнать!

Ак ăçта телей те пурлăх,
Ак ăçта мухтавăм!
Сире, ,,ырă" канашсемшĕн,
Çиттĕрех мантавăм.
Пурнан пурнăçăм—ман хамăн.
Çут куççулĕ витĕр
Хамăнах сăмахăм юхĕ.
Сывă пулăр, çитĕ!
Атсене каллех ак вăхăт
Çул çине тухмашкăн.
Кайччăрах. Унта тĕл пулĕç,
Тен, кăвакармашкăн
Тытăннă пĕр казака та,—
Ватă çын куççулĕ витĕр
Вăл саламлĕ, тетĕп.
Çитĕ! Тепĕр хут калатăп:
Пансенчен пан эпĕ.

Ак çапла, килте каç-каçăн
Шухăш шухăшлатăп:
Вĕсене кам ертсе кайĕ?
Тул çути куратăп;
Уйăх сӳнчĕ, хĕвел тухрĕ.
Гайдамаксем тăчĕç,

Ак, кӗлтурӗҫ те пуҫтарӑнчӗҫ,
Ман тавра шӑп тӑчӗҫ.
Тӑлӑхсем пек, пит салхуллӑн,
Лӑпкӑн ҫеҫ пуҫ тайрӗҫ:
,,Пехилле пире, аттемӗр,
Вӑй-хал пур-ха, теҫҫӗ;
Ҫӗр ҫинче телей тупмашкӑн
Пехиллеччӗ'',—теҫҫӗ.
,,Тӑхтӑр, тетӗп, тӗнче аслӑ,
Ачасем-ҫке пурте.
Сирӗнпе асли кам пырӗ?
Кам-ши ҫул кӑтартӗ?
Эп сире пӑхса ӳстертӗм,
Пултӑр ак вӑй-халлӑ.
Ҫайӑрах, анчах унта халь
Йӑлт вӗреннӗ халӑх.
Эп сире вӗрентеймерӗм:
Мана хӑть—хӗнерӗҫ,
Хыт хӗнерӗҫ—мӗн те пулин
Пурпӗрех вӗрентрӗҫ!
*Тма, мна* пур та, *окси**
Пуҫра ҫук ман халь те.
Юрӗ, кайӑпӑр—телейшӗн
Тӑрӑпӑр-и хатӗр!
Ман тӑван аттемҫӗм вилнӗ,
Тепӗр аттем пур ман,**
Вӑл пире ыр канаш парӗ:
Хӑй вӑл тем те курнӑ,
Ҫӗр ҫинчи тӑр-тӑлӑх пуҫӑн
Нушине туять вӑл;
Чӗрипе йӑваш хӑй, ырӑ,
Чунӗпе казак вӑл!..
Амӑшӗ сӑпка сиктернӗ,
Юррине юрланӑ;
Ырӑскер, ӳссе ҫитсен те
Ҫав юрра манман вӑл.

---

* *Тма, мна, оксия*—Шевченко ача чухне ҫырӑва церковно-славянски букварь тӑрӑх вӗреннӗ. **Тма, мна**—сыпӑксем, **оксия**—ударени.

** *Тепӗр аттем пур ман*—Шевченко кунта И. В. Григоровича аса илсе калать пулас.

Украинăна ват суккăр
Асăнса юрланă,
Ырăскер, нихçан-нихçан та
Çав юрра манман вăл.
Юрринче-çке—аслă чăнлăх,
Казаксен мухтавĕ;
Ырă çын патне каяр-и,—
Йышăнĕ тăванăн.
Пуç çине инкек килсессĕн,
Вăл мана хăтарчĕ;
Унсăрăн мана ютра-çке
Юр айне хуратчĕç;
„Мĕн усси унран" тесе,
Ал сулатчĕç пулĕ.
Питĕ йывăр-çке тăкмашкăн
Айăпсăр куççулĕ.
Вăл ютра мана тăван пек
Ал пачĕ пулсассăн,
Халь сире те кĕтсе илĕ
Йăл кулса, хавассăн.
Тискер тĕлĕк иртсе кайрĕ,
Ан хăрăр, атсемĕр!
Ун панче пулса пуç тайăр та,—
Каялла вĕçтерĕр!

Ырă кун сана, аттемçĕм!
Эс кăмăл тусамччĕ:
Инçете вĕсем каяççĕ,
Пилсĕр ан хăварччĕ!

*1841 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕ*
*Питĕр*

## *ИНТРОДУКЦИ**

Ĕлĕк пулнă... пулнă Польша,
Чап-мухтавлă, шавлă;
Мускавпа тытăçса курнă,
Тутарпа тавлашнă,
Султанпа та, нимĕçпе те...

* *Интродукци*—пуçламăш. Шевченко хăй поэмине малтан лирикăллă, унтан историллĕ сăвăпа пуçласа ярать.

Пулнă—пĕтнĕ, каннă.
Ĕлĕк шляхта ĕçкĕ ĕçнĕ,
Вăйĕпе мухтаннă,
Королĕсемпе хăратнă...
Çав Стефанĕпе-и,
Е Собесски корольпа-и,—*
Çук, вĕсем, пĕлетĕп,—
Мĕскĕнсем... Алхаснă, каннă,
Лăпкăн, шарламасăр;
Сеймисем текех шавланă,
Кŭршисем ним ассăр
Пăхнă: Польшăран йăрт та йăрт
Корольсем йăртлатнă,—
Тарччăрах! Тата шляхествăн
Юррине итленĕ:
„Nie pozwalam! Nie pozwalam!“**
Шляхтичсем кĕрленĕ;
Магнатсем пур, хĕç туптанă,
Çынсене çаратнă...
Вăрахчен çапла ку пынă.
Польшăра, сасартăк,
Питĕ харсăр Понятовски***
Пуç пулса тăрать, ак.

Шляхтичсене вăл шухăшланă
Лăплантармашкăн... Ĕç тухман.
Юратанçи пулса лăпканă,
Тен, ун вăл шухăш та пулман!
Шляхтичсенне вăл Nie pozwalam!“
Сăмахне çеç хуплас тесен,
Сасартăк, Польша айăн-вайăн
Пăлханнă. Кăшкăрнă пансем:
„*Гонору слово, дарма праця!*****

---

* *Стефан тата Ян Собесски*—Польша королĕсем, пĕри XVI, тепри XVII ĕмĕрте корольте ларнă.

** „Nie pozwtam!“ („Не позволю“)—„Ирĕк памастăп!“ тесе сейм членĕсем кăшкăрнă, пĕри çапла кăшкăрсан та, сейм решени йышăнайман вара.

*** *Понятовский* (*Станислав II Август*)—Польшăн юлашки королĕ (1764—1795), ăна II-мĕш Кĕтерне патша пулăшнипе короле суйланă.

**** „Чан та, усăсăр ĕç!“ тени пулать, шляхтичсен каппайланса каланă сăмахĕсем пулнă.

*Поганец, наймит москаля!"*
Чĕнеççĕ те Пулавски, Паца—
Пĕтĕм шляхт çĕрĕ хускалать.
Сасартăк—çĕр конфедераци!*

Конфедератсем саланнă
Литвапа Волынь тăрăх,
Молдаванипеле Польша,
Украина тăрăх.
Ирĕклĕхе сыхламашкăн
Йăлтах манса кайнă,
Халăхсемшĕн хурлăх кӳнĕ,
Укçана пуç тайнă.
Йăлт тустарнă та çунтарнă,
Чиркӳсем çаратнă...
Çав вăхăтра гайдамаксем
Çĕçĕсем хăйранă.

## *ЯРЕМА*

— Ярема, теп! Миçе каларăм!
Чуп хăвăртрах лаша тытма,
Итле—пушмак ыйтать ав арăм,
Ан ман мана та шыв пама,
Вут çурса кĕр, часрах урай шăл,
Кăрккасене çитер тата,
Пыр нӳхрепе, пул вăшăл-вашăл!
Кĕтӳ мĕнле унта? Тăхта!
Ĕç пĕтерсен, Ольшанăна чуп:
Ман арăм хушрĕ. Вĕç, тăмсай!"
Ярема утрĕ хăйне май.

Ир пуçласа, пĕр чарăнмасăр
Шинкарь лăсканă мĕскĕне.
Ярема тӳснĕ—хăй вăйне
Пĕлмен-ха; пĕлмен çунатсем ӳснине те,
Вĕçсен пĕлĕте çитессе те.
Чĕнмесĕр вăл тӳснĕ...
Эй, турăçăм, турă!

---

* *Конфедераци* — Польша шляхтин корольпе сейм решенийĕсене хирĕç, хăйĕн интересĕсемшĕн тăма тунă вăрçă союзĕ.

Пурнăç пит йывăр,—пурăнас килет:
Куçăмăр курасшăн хĕвел çиçнине,
Чунăмăр илтесшĕн-çке тинĕс шавне,
Кайăксен кĕввине те вăрман юррине,
Хитре пикесен шăнкăрав сассине...
Эй, турăçăм, турă, пурăнас килет!

Тăлăх чун Ярема, тăлăх чун, мăнтарăн:
Пĕр тăван та çук ун, никам юп курмасть!
Мĕн ыррийĕ пур-ха тарçăра тăранăн?
Пурпĕрех чăтать хăй, çынсене вăрçмасть.
Мĕншĕн вăрçмалла-ха? Çынсем-и чухлаççĕ
Кама ятлама та кама юратма?
Ан тив хĕпĕртеччĕр... Вĕсем ыр кураççĕ,
Тăлăха вăл йывăр тарпа тăранма.
Сахал мар вăл вăрттăн тăкнă-çке куççулĕ.
Çук, хурланмасăр! Мĕншĕн хурланас?
Ĕ тем курнă пулĕ, тем асилнĕ пулĕ...
Ĕç тытнă та—иртнĕ, каллех вăл хавас!
Сан тăван килӳ те, çут кермен те кăлăх,
Чуна пусармашкăн никам пулмасан!
Тăлăх чун Ярема -пит пуян çав тăлăх...
Вăл хăйне юратнă чун пуртан пуян.
Куçĕсем илемлĕ çăлтăр пек çунаççĕ,
Аллисем ачашшăн, ляпкăн çупăрлаççĕ,
Тĕнчере пур унăн çепĕç те хитре хĕр.
Унпала кулать вăл, унпала йĕрет вăл,
Пĕр хытса каять вăл, тепре чĕрĕлет вăл,

Каçхи шурă лĕпĕш евĕр
Ун тавра вĕçет вăл.
Çакăн пек вăл, ман Ярема,
Пуян тăлăх, темĕр!
Эпĕ те тахçан çаплаччĕ—
Иртрĕ вăл, хĕрсемĕр!..
Иртсе кайрĕ, вĕçсе кайрĕ,
Йĕр те хăвармарĕ.
Асилсен чĕрем çунать-çке...
Мĕншĕн вăл юлмарĕ?

Мĕншĕн вĕçрĕ вăхăт, мĕншĕн иртсе кайрĕ?
Хурлăхпа куççулĕм пулатчĕ çăмăлрах.

Çичĕ ют хăмсарчĕ, ăна сахал мар-и:
— Мĕн тума раскалĕ? Пĕттĕр хăвăртрах,—
Вăл пуян ахаль те...—
Саплăкран пуян та,
Куççульрен пуян çав—мĕн тума шутлас!
Эх, раскал, раскалăм! Халь ăçта шырас?
Каялла килсеммчĕ, умма вĕçсе ан та,
Тĕлĕкре хăть курăн!.. Куçăм хупăнмасть!

Ыр çынсем, мана каçарăр!
Тен, сăмахăм тĕлсĕр,
Анчах камăн чунĕ кӳтмĕ
Раскалсăр, телейсĕр?
Тен, каллех курма тӳр килĕ,
Халлĕхеваскам-ха,
Тăлăх пуç Ярема хыççăн
Халь тĕнче касам-ха.
Хурлăх-çке кирек ăçта та,
Ниçта пуç чикеймĕн:
Ăçталла тĕртет хĕн пурнăç,
Унталла силленĕн,
Пĕр чĕнми чăтса, йăл кулăн:
Çынсем ан сисейччĕр
Чĕрӳне те, хурлăхна та.
Вĕсем ан хĕрхенччĕр.
Пĕл: вĕсен ачаш сăмахĕ...
Ытти ăна савтăр!
Тăлăха вăл тĕлĕкре те
Нихçан ан аптраттăр!
Йывăр, йывăр калаçмашкăн,
Анчах тӳсейместĕп...
Юх, эппин, сăмах—куççулĕм:
Сар хĕвел хĕртмест те,
Типĕтеймĕ. Эп калаçăп,
Куççуле юхтарăп...
Шăллăмпа та, йăмăкпа та
Эп калаçмăп,—
Ют çĕрте, стенасемпе çеç
Эп юмахлăп...
Халлĕхе леш хупаха çеç
Эпĕ таврăнам-ха,

Унта мĕн пулса иртет-ши?
Лайăхрах сăнам-ха:
Ун хуçи çурта умне ав
Пĕшкĕннĕ, чĕтрет хăй:
Вырăнĕ айне васкавлăн
Ылттăнне чикет хăй.
Вырăнĕ çинчех... чун сӳлетрĕ!
Çамрăк хĕр... Аллийĕ
Усăннă, йăлт сапаланнă
Тĕм хура кăтрийĕ...
Ун çурхи чечек пек пичĕ
Хĕрелсе хĕмленнĕ,
Тӳсме пăчă пулнăран-мĕн
Кĕпи нӳтĕркеннĕ.
Хура куçлă чиперккешĕн
Халь те пăчă пулĕ,
Никампа сăмах чĕнеймĕ;
Типнĕ пуль куççулĕ.
Тем пăшăлтатать... Еврека
Ытарми илемлĕ!
Вăл—хуçа хĕрĕ, ун ашшĕ—
Хыткукар, эсрелĕ.
Амăш урайне йăванна,
Тӳшекне тустарнă.
А Ярема? Вăл Ольшанăна
Тухнă та уттарнă.

*КОНФЕДЕРАТСЕМ*

„Уç алăкна, шинкарь, тăрлайĕ!
Уçмасанах, асту... эп хам!
Эй, çĕмĕрĕр, тухса тараймĕ
Çав йĕксĕк йĕрĕнчĕк!“
„Чăтсам!
Халех! Кăшт тăхтăр!“
„Сыснапа-и?
Халех йăлт ĕнтĕр! Выляма
Шутларăн-и?“
„Аюх, панпа-и?
Ыр тур сыхлатăр! Парăр çеç тăма,
Ясновельможный! Хăй „сысна“ тет.

„Полковник, тытăн хайăрма!“
Ак, алăк хăпăнчĕ... чăтать-и!
Кĕреççĕ. Акă, пĕр усалĕ
Ĕнтĕ хĕнет саламатпа.

„Эй, шуйттан çури, аван-и?“
Лейба тăчĕ çурăмпа:
„Хĕрхенсемĕр, ырă çыннăм!
Килĕме кĕрсемĕр!“
„Тата тепре, тата... çитĕ!
Ан та кӳренсемĕр!
Пурăнах! Хĕрӳ ăçта сан?“
„Вилчĕ вăл, улпутăм.“
„Улталан! Тепре илтер-ха!“
Ӳт чĕтрет иудăн.
„Эй, улпутăмçăм, ыр çыннăм.
Вилчĕ манăн хĕрĕм“
„Эс суян!“
„Суян пулсассăн,
Тамăкра ӳт хĕрĕ“.
„Тамăк мар эпир. Ан суй эс!“
„Мĕншĕн улталам эп?
Ман сăмах суя пулас-тăк,
Çĕр тĕпне анам эп!“
„Ха, ха, ха! Шуйттан илесшĕ,
Кĕлтăвать-мĕн уншăн.
Сăхсăхса ил!“
„Ку мĕнле-ха?
Пĕлейместĕп, туршăн“.
„Акă, кур...“
Лях сăхсăхать ак,
Ун хыççăн—иуда.
„Ак çапла“ та „ак çапла!“ теç.
Ак епле вăл чудо!
Куншăн юрамасть ĕçмесĕр!
Тĕне кĕтĕн! Унсăр?..
Магарич халех!“
„Часрах эс!“
Кăшкăраç чарусăр.

Çухăраç пансем. Сулея*
Вĕçрĕ сĕтел урлă.
„Еще Польска не згинела!“—
Тет ÿсĕрĕ урнăн.
„Лейба, ларт!“
Тĕне кĕнийĕ
Кускала çÿрет çеç,
Вăл халь конфедератсемшĕн
Тултарать, çĕклет çеç.
„Симпыл пар!“ теç, васкатаççĕ,
Шинкарь—пĕкĕ пулчĕ.
„Цимбалсем ăçта? Выля, пся крев!“**
Хупаха шав тулчĕ—

Пĕрин хыççăн тепĕрийĕ:
Кроковяк, мазурка.
Шинкарь, ырă пулас тенĕн:
„Ах, пансем, тет, кур-ха!“
„Çитĕ. Лайăх! Халь юрла-ха!“
„Çук, пĕлместĕп эпĕ!“
„Ан кутăнлашса тăр, йытă!“
„Мĕн юрлас-ши? тетĕп“.

„Пĕр хĕр пулнă, пурăннă,
Пурăннă та курăннă;
Урисем ыратнă,
Тек турра пуççапнă,
Çавăнпа улпутăн
Хирне тухман çав кутăн.

Каç пулсан вăшт шăвăннă,
Каччи çумне йăпшăннă;
Çĕрĕпех калаçнă,
Ыррăн ыталашнă,
Çавăнпа улпутăн
Хирне тухман çав кутăн“.

„Чарăн, çитĕ! Ирсĕр юрă:

---

* *Сулея*—чĕрĕк кĕленчи.
** *Пся крев*—йытă юнĕ тени пулать.

Шуйттанла юрлатӑн“.
„Мӗнлине юрлас? Ҫакна-и?
Чимӗр, тытӑнатӑп...

— Федор пан умӗнче
Жид хӑрах ура ҫинче
Ҫаврӑнать, кускалать,
Темӗн те пӗр кӑтартать“.

„Ҫитӗ, тетӗп! Халь тӳле!“
„Шӳт тӑватӑн, пан, эс!
Мӗншӗн тӳлес?“
„Итленӗшӗн,
Ан та кутӑнлан эс!
Ылттӑнна юхтар-ха, ирсӗр!“
„Эп ӑҫтан тупам-ҫке?
Пӗр эсир кӑна чӑн ырлӑх
Панипе пуян-ҫке!“
„Тӗрӗсне кала эс, йытӑ!
Тытӑр-ха, ислетӗр!“
Лейба ҫурӑмӗ ҫинче ак
Хулӑсем шилетрӗҫ.
Ислентерчӗҫ, ислентерчӗҫ,
Хӗртрӗҫ айӑн-ҫийӗн!
„Туршӑн та, ман ҫук ҫур пус та,
Ӳтӗме хӗть ҫийӗр!
Ҫук ҫур пус та. Ой, хӑтарӑр!“
„Хӑгӑлӑн, ан кӑшкӑр!“
„Тӑхтӑр, акӑ эп мӗн калӑп“.
„Хӑвӑртрах эс, кашкӑр!
Чим, ан суй! Вилсе выртсан та,
Суйса хӑтӑлаймӑн“.
„Ҫук... Ольшанӑра...“
„Укҫу-и?“
„Турӑҫӑм!.. Ҫав... манӑн!
Ҫук... унта, Ольшанӑра, теп...
Схизматсем* пурнаҫҫӗ,
Пӗр виҫшер, тватшар ҫемьенӗн
Пӗр пӳртре пурнаҫҫӗ“.

---

* Раскольниксем.

„Мĕн вара? Ăна пĕлетпĕр—
Çаратрăмăр хамăр“.
„Уншăн мар... ан çиленсемĕр...
Хурлăх ан курсамăр,
Тĕлĕкре укçа чанклаттăр...
Инçе мар Ольшана...
Пур костел... пур ктиторăн...
Сар хĕрĕ—Оксана!
Тур каçартăр! Пани, тейĕн!
Çав тери илемлĕ!
Ылттăн! Ют килте пулсан та,
Кам ăна иленмĕ!“
„Ылттăн—ылттăнах, вăл пурпĕр!
Сăмах суя мар-тăр;
Тĕрĕсне пĕлес тесессĕн,
Лейба çул кăтарттăр.
Ну, тумлан!“

Ольшанăна
Шляхтичсем вĕçтерчĕç.
Ӳсĕрскер, пĕр конфедерат çеç
Пуçне лап ӳкерчĕ,
Сак айне выртса вăл юлчĕ,
Ĕнрешет эсрелĕ:
„My zuiemu, Muzuiemu,
Polska nie zginela!*

*КТИТОР*

„Шăпăрт вăрманăм,
Çилсĕр вăранмăн.
Шурĕ шур уйăх.
Чунăм, ан шуйăх.
Тӳпере çут çăлтăр
Йăлтăр та йăлтăр.
Тухчĕ, савниçĕм,
Кĕтет-çке чĕреçĕм.
Тухчĕ самантлăх,
Курса савăнмалăх!

---

* „Эпир пурнатпăр, эпир пурнатпăр, Польша пĕтмен!“ тени пулать.

Иккĕн калаçăпăр,
Иккĕн хурланăпăр;
Тухчĕ, саркайăк,
Кĕçĕр эп кайăп.
Кăмăллă пулччĕ,
Сăмах хушса юлччĕ.
Чунăм, ан сывăр...
Йывăр-çке, йывăр!"

Вăрманта çапла Ярема
Юрласа çӳрет;
Çук, тухмасть, тухмасть Оксана,
Каччă тилмĕрет.
Пĕлĕтре шăвать шур уйăх,
Çăлтăр ялтăрать;
Тем тăнланă пек, хăва та
Çăл çине пăхать.
Çырмара янратрĕ шăпчăк
Тунсăх юррине,
Вăл та сисрĕ пулĕ каччă
Хĕрне кĕтнине.
Ывăннă Ярема шăппăн
Айлăмра çӳрет,
Итлемест те вăл, пăхмасть те...
„Мĕне кирлĕ,—тет,—
Ăраскалăм пулмасассăн, ман илемĕм?
Çамрăк ĕмĕр кăлăхах-çке çухалать.
Тĕнчере пĕччен эп, йăхсăр, ман телейĕм—
Ют хирте хăрса çеç ларакан çеçке-мĕн;
Çеçкене пĕрех çил вĕçтерсе ярать.
Çавăн пек мана та ют çынсем пĕлмеççĕ.
Мĕншĕн ютшăнаççĕ? Пуçăм тăлăхран.
Пурччĕ тĕнчере ман савнă чун-чĕреçĕм,
Ман савнийĕм-тусăм, вăл та ав, куран,
Сивĕннĕ иккен халь!"

Куççулĕ тумларĕ.
Йĕчĕ мĕскĕн, шăлчĕ çаннипе куçне.
„Сывă пул, Оксана! Тен каччу пултарĕ
Инçетре телей тупмашкăн; тен, пуçне
Вăл çухатĕ Днепр леш енче, мăнтарăн.
Вара ху чуптунă ăшă куççене

Ҫăхансем-ҫке сăхĕҫ, сăхĕҫ ун чухне,—
Эс ҫавна кураймăн; урăха тупсамччĕ.
Мĕншĕн тупа турăн мĕскĕн тăлăха?
Эсĕ—ктитор хĕрĕ, эпĕ—чухăн каччă:
Пĕр-пĕрне савни те—пурпĕр кăлăхах.
Кама кăмăллатăн, ҫавна хисепле эс;
Мансам, савнă чунăм, ҫапла ман шăпам!
Ютра пуҫăма хунине илтейсессĕн,
Эс вăрттăн та шăппăн кăна кĕлтусам.
Тĕнчере пĕр эс хăть, чунăм,
Асăн—кĕлтусамччĕ!"
Казак куҫĕнчен куҫҫулĕ
Шăпăртатрĕ-анчĕ.
Тăчĕ, тăчĕ таянса вăл,
Йӳҫ куҫҫулĕ тăкрĕ...
Ҫывăхрах сасартăк темĕн
Чăштăртатрĕ!.. Пăхрĕ—
Курчĕ, курчĕ унăн куҫĕ:
Шăп та шăп вăрманăн
Хĕррипе, чăлт шурă юс пек,
Ҫывхарать Оксана.
Хирĕҫ чупрĕҫ. Ыталашрĕҫ...
„Чунăм, чунăм!" терĕҫ.
Темĕнччен ҫакна каларĕҫ,
Урăх чĕнеймерĕҫ.
„Ҫитĕ-ҫке!"
„Тата пăртакҫă!
Чунăмҫăм, хăлатăм!
Чуптуса чуна сăхса ил!..
Ой, пĕтрĕ хăватăм!"
„Пĕлĕтрен вĕҫсе эс антăн;
Ҫăлтăрăм, кансамччĕ!"
Вырăн турĕҫ. Хĕр хĕвел пек
Йăл-йăл кулчĕ, ларчĕ.
„Эсĕ те ҫумма ларсамччĕ!"
Ларчĕ, ыталарĕ.
„Ҫăлтăр куҫăм, илемӳ сан
Камшăн ялтăрарĕ?"
„Манăн вăхăт пулаймарĕ:
Атте сывмарланнă.
Ун панче куна иртгертĕм".

„Мана эсӗ маннă?“
„Туршăн та, мӗнле-ха эсӗ“!
Куçне сывлăм тулчӗ.
„Ан йӗрсем, эп шӳт туса çеç“.
„Шӳт эппин?“—Йăл кулчӗ.
Лăпкăн çеç пуçне вăл тайрӗ,
Тӗлӗрен пек пулчӗ.
„Шӳт туса калап. Эс чăн та
Макăран, Оксанăм.
Лăплансамччӗ, курса юлччӗ:
Паянтан—курайман;
Эп ыран ӗнтӗ, Оксана,
Инçете çитетӗп,
Чигире çитсе, ыран эп
Таса çӗç* илетӗп.
Унпала эп тупăп ылттăн,
Чап-мухтав туянăп.
Ун чухне сана та, тусăм,
Капăр тумлантарăп.
Гетман арăмӗ пек, чаплă
Пукан çине ларăн.
Виличчен санран куç илмӗп!“
„Тен мана эс манăн?
Пуйса çитӗн. Киева эс
Пансемпе вӗçтерӗн.
Хушăн шляхтич хӗрне тупăн;
Тек мана асилмӗн“.
„Е санран хитри те пур-ши?“
„Пулӗ тӗнчере тен“.
„Çук, савниçӗм! Кăлăхах эс
Турра кӳрентертӗн.
Пӗлӗтре те, çӳлерех те,
Тинӗс леш енче те
Çук санран хитре хӗр, тусăм!“
„Мӗн ара пуплетӗн?“
„Чăн сăмах ку, чунăм!“
Темӗнччен калаçрӗç.

---

* Гайдамаксем, легенда тăрăх, хăйсен çумне çакса çӳрекен çӗççисене светить тутарса „тасатнă“ пулать, çавăнпа ун пек çӗççе „таса“ тенӗ.

Сăмахсен вĕçне татсах та,
Темĕнччен чуптурĕç.
Пĕр чуптурĕçĕ хĕрўллĕн,
Пĕр куççуль тумлатрĕç;
Пĕр-пĕрне нихçан манмаслăх
Ик хут тупа турĕç.
Каччă каласа парать ак:
„Пурнăпăр,—тет,—иккĕн.
Пĕрле тупăпăр телей те,
Тупăпăр, тет, ылттăн.
Ляхсене гайдамаксем ак
Тураса тăксассăн,
Чăн-чăн пан пек ирĕк пурнăп,
Сывă таврăнсассăн...“
Ну, хĕрсем, сире ку юрă
Йăлăхтарчĕ пулĕ!
„Ха, епле! Итле-ха!“ тейĕр,
Тепĕри, тен, кулĕ.
Е çакна-и ашшĕ-амăш
Хăйсен савнă хĕрĕ
Тек вуланине курсассăн,—
Вăрçĕç, вăрçĕç, хĕнĕç.
Ун чухне вара... Тăхта-ха!
Каласа парасчĕ
Тĕлĕнмешкĕн ак çакна ман:
Хура çўçлĕ каччă
Йывăç айĕнче салхуллăн
Хĕрпеле ларать.
Кăвакарчăн пек Оксана
Тутлăн чуптăвать.
Пĕр йĕрет, пĕр хурланать вăл,
Е пуçне чикет.
—Чунăмçăм, чĕреçĕм!—тет вăл,—
Ман хăлатăм!—тет.
„Чунăм!“—йывăç та пуç тайрĕ,—
Вĕсене илтсе.
Сăмахсем! Çук, ан та ыйтăр,
Савнă хĕрĕмсем:
Ыйха хирĕç каламастăп—
Аптрăр тĕлĕкре.
Вĕсем пур, епле тĕл пулнă—

Çавăн евĕрлех,
Юратса-и уйрăлайччăр,
Ан курччăр çынсем
Каччăпа хĕрĕн хĕрӳллĕ
Куççульне... Вĕсем
Пурнăçра татах, тен, курĕç
Пĕр-пĕрне... кĕтсен.
Çак самант, хай ктитор çурчĕн
Пур чӳречесем
Çуталаççĕ, ялтăраççĕ.
Мĕн унта? Камсем?..
Кĕрер мар-и? Кĕрес марччĕ!
Курмасан—аванччĕ!
Шутласассăн—шухăш чĕрене çурать.
Мĕншĕн тесен çыншăн намăс, чун урать.
Пăхăр-ха, курсамăр: конфедератсем,
Ирĕклĕх сыххишĕн пухăннă çынсем,*
Ирĕке „хӳтĕлеççĕ!"... Вĕсене çуратнă,
Вĕсене варта ӳстернĕ те юратнă
Амăшĕсене—кам каламĕ ылхан!
Вĕсене курнă куна та—ылхан!
Курăр: ктитор çуртĕнче мĕскер тăваççĕ
Тамăк йăхĕсем?!
Вут ялкăшать ав...
Пӳрте вут-çулăм çутатать.
Пĕр кĕтесре ылханлă йытă—
Шинкарь чĕтре-чĕтре ларать.
Конфедерат çухрать те хытă,
Ктитор умне пырса юнать...
„Пурнас килет-и?" тесе ыйтрĕç...
„Укçу ăçта сан?" Леш чĕнмест.
Аллисене çавăрса çыхрĕç,—
Çĕре пăрахрĕç. Вăл чĕнмест,
Сăмах та çук. „Сахал асапĕ?..
Давай кăвар! Ăçта смала?
Пĕçерт ăна. Сӳнет-тĕк, сап эс
Часрах кăвар ав. Ак, çапла!
Мĕн тейĕн? Ахлатмасть те шельма!

* Конфедератсем çинчен вĕсене курнă çынсем çапла каланă: вĕсем вĕçкĕн, йĕркесĕр шляхта пулнă; ĕçлесси килмен, çиесси килнĕ (Шевченко асăрхаттарнинчен).

Тăхта, усал!“ Атти ăшне
Çунса тăран кăвар тултарчĕç.
„Пăта çапар пуç чашкине!“
Çак асапа вăл чăтаймарĕ—
Лăш кайрĕ, ӳкрĕ мĕскĕн. Ун
Çылăх каçарттарма пулмарĕ!
„Оксана... хĕрĕм!“ Пĕтрĕ чун.
„Мĕскер тăвас?“ шухăша кайнăн
Ляхсем вил умĕнче тăраç.
„Кунпа ĕнтĕ нимех тăваймăн,
Хăть чиркĕвне чĕртсе ярас!“
„Ай! турă çыннисем, хăтарăр!“
Карташĕнче, умрах, пĕр сас
Сасартăк илтĕнчĕ хаяррăн.
Ляхсем тăраççĕ кăнн хытса.
„Эй, кам унта?“—çухăрса ячĕç.
Оксана алăкран кĕрет.
„Вĕлернĕ! Ой!“—Çĕре йăванчĕ.
Асли—ыттисене сĕлтет.
Йыт кĕтĕвĕ—ляхсен эшкерĕ
Кĕрлерĕ алăкран тухса.
Асли те хыççăнах йĕрлерĕ,
Мĕскĕн Оксанăна йăтса.

Ярема, эсăçта?.. Ăçта вăл?
Вăл Наливайкопа* ляхсем çинчен
Юрă шăрантарса, васкавлăн
Утать хăй çулĕпе—инçе.

Ляхсем каяççĕ. Вĕсемпе—
Çухалчĕ, вилнĕ пек, Оксана.
Йытсем кăна вĕреç Ольшана
Урамĕнче. Ял çывăрать.
Пĕлĕт çинче шăвать шур уйăх.
Çыврать ак ктитор та. Вăл урăх
Тăрас та çук. Çурти çунать.
Ак çунчĕ, çунчĕ те вăл—сӳнчĕ...
Вил ӳт чĕтренĕ евĕр пулчĕ,
Пӳрте тĕттĕм салхулăх тулчĕ.

---

* *Наливайко*—казаксен утаманĕ (XVI ĕмĕр вĕçĕнче), казачествăн ирĕклĕхĕшĕн Польша шляхтине хирĕç кĕрешнĕ. 1597 çулта поляксем вĕлернĕ.

*ЧИГИРИНРИ УЯВ*

Пирĕн гетмансем! Халь-и тăрас-тăк,
Халь-и пăхас-тăк Чигирин çине,
Йĕрĕттĕр-ярăттăр пурте сасартăк:
Курмăттăр халь хăвăр мĕн тунине,
Курмăттăр халь унта мĕн юлнине.

Пасар варринче, йăлтăркка тинĕс евĕр,
Çарсем бунчук умĕн-çке тăнă çиçсе,
Казак-утаман, ут çинче, куç илмесĕр,
Сулать те хĕçне—хускатать тинĕсе.
Хускалать те кăвак тинĕс,
Çырантан тухать-и,
Ун вăйне курсассăн, хурлăх
Хăраса тăрать-и...
Мĕн калас?.. Йăлт иртнĕ-кайнă;
Ан асилĕр урăх;
Тен, мансассăн лайăхрах-и,
Асăнсассăн—хурлăх...
Усси çук çав асилсен-те,
Тăкăн çеç куççулĕ.
Чигирин çине çапах та
Пăхăпăр—мĕн пулĕ.

Вăрман урлă, тĕтре витĕр
Хăпарать сар уйăх;
Йăл çунать те, ялкăшмасть-çке
Çавра-питлĕ уйăх;
Çынсене хитре çуттийĕ
Кирлĕ мар халь унăн:
Украинăна çутатнă
Таврари вут-çулăм.
Тахçанах ĕнтĕ каç пулнă,
Кунта пурпĕр шăрăх.
Хурлăх, хурлăх... (Ак, мĕнле-мĕн,
Пур Украйнă тăрăх,
Маковей уявĕ умĕн
Çĕçĕсем „тасатнă"...)
Çук пĕр чун та. Пасар урлă
Çерçи лăпăслатнă;

Улăхра, тем сиснĕн-туйнăн,
Тăмана ухлатнă.
Çыннисем ăçта?.. Тясминăн*
Хĕрне, вăрмана-мĕн
Халь мĕнпур ватти-вĕттийĕ,
Чухăнĕ, пуянĕ
Пухăннă,—вĕсем кĕтеççĕ
Аслă уява-мĕн!
Хура вăрманта утсем курăк çиеççĕ,
Кăкарнă та халь йĕнерленĕ утсем.
Ăçта тапса сикĕç, кама-ши кĕтеççĕ?
Ак, курăр—кама-мĕн! Вĕсен хуçисем
Тĕттĕм айлăмра пĕр чĕнмесĕр лараççĕ,
Куратăр—йăлтах вĕсем гайдамаксем.
Вĕсем ăмăрткайăк пек паттăр
Тăрĕç те хускалĕç;
Юхнă чĕрĕ юншăн,
Аснă вут-кăваршăн
Ляхсене чĕр тамăк вут ăшне пăрахĕç.

Хура вăрман хӳтлĕхĕнче
Тулли урапасем лараççĕ,
Купипелех вĕсем çинче
Çип-çивĕч çĕçĕсем выртаççĕ.
Майра патша, екки килсен,
Пултарнă, теç, парне кӳмешкĕн;**
Пулин, леш тĕнчере пиртен
Нимех илеймĕ вăл кусемшĕн.
Урапасенĕн хушшине,
Çын хĕснипе, кĕрсе тăраймăн:
Чигиринран та Смелăран ав
Мĕнпур казакĕ, старшини
Кунта пĕр харăс вĕçсе çитнĕ,
Ĕç пуррипе-тĕр вĕçсе çитнĕ.
Старшинисем çӳреç мăнаçлăн,
Пурте хура свитăпалан,

---

* Днепра тухакан юханшыв.

** Гайдамаксем çав çĕçĕсене II-мĕш Кĕтерне парне панă тесе ĕненнĕ; вĕсем хушшинчех тата „патша хăй“ пансене пĕтерме „ылттăн грамота“ панă сăмах çӳренĕ.

Майĕпеле калаçнă майĕн
Чигрин енне-çке хушăран
Пăхса илеççĕ...

П ĕ р р е м ĕ ш  с т а р ш и н а

Ватă Головатый * тем питĕ чееленет.

И к к ĕ м ĕ ш  с т а р ш и н а

Вăл—тăнлă пуç, ларать хăй хуторĕнче, ним пĕлмен пек пулса, пăхатăп та—кирек ăçта та Головатый.
— Енчен,—тет,— хамăн хал çитеймесен, ывăлăма пиллесе хăваратăп,—тет.

В и ç ç ĕ м ĕ ш  с т а р ш и н а

Ывăлĕ те — пултараканĕ! Эпĕ ĕнер Железнякпа** курса калаçрăм; мĕн кăна каламарĕ вăл ун çинчен— турран килтĕр çавна! „Кошевой*** пулать,—тет,— курăнах, гетмана та çитĕ, вара...“

И к к ĕ м ĕ ш  с т а р ш и н а

Гонта—мĕн? Железняк тата? Гонта патне „хăçан та хăçан...“ тесе хăй**** çырнă.

П ĕ р р е м ĕ ш  с т а р ш и н а

Чим, шăпланăр! Чан çапаççĕ мар-и?

И к к ĕ м ĕ ш  с т а р ш и н а

Çук, халăх шавлать ăна.

П ĕ р р е м ĕ ш  с т а р ш и н а.

Шавлаççĕ-ха, ляхсем илтиччен. Эх, ватă та ăслă пуççем! Кĕрлĕç-кĕрлĕç те, суха тимĕрĕнчен атă пăри пулса тăрĕ ак! Михĕпе илмелле çĕрте хутаç кирлĕ-и?

---

* *Головатый*—Запорожецсен çарĕнче пулнă юлашки судья.
** *Железняк Максим*—Колиивщинăри пуçлăх.
*** *Кошевой*—(урăхла—утаман), Запорожскри Сечьри пуçлăх.
**** *Хăй çырнă*—сăмах II-мĕш Кĕтерне патша çинчен пырать.

Сухан сутăн илтĕн пулсан, ăна çиесех пулать: йĕр те çи, куçу сиксе тухтăр хăть,—ху курса ху илнĕ; укçа шыва кайтăр-им! Ни кăшкăрашмасăр, ни чĕнмесĕр, шухăшлаççĕ те шухăшлаççĕ; ляхсем сисрĕç-тĕк—пăштик сана! Мĕн канаш тăваççĕ унта? Мĕншĕн чан çапмаççĕ? Халăха епле-ха чарăн шавлама? Турра шĕкĕр, вунă чун мар, пĕтĕм Украина пулмасан та, пĕтĕм Смелянщина пухăннă. Авă, илтетĕр-и, юрлаççĕ.

Виççĕмĕш старшина

Чăн та, тахăшĕ юрлать; кайса чарас пулать.

Пĕрремĕш старшина

Ан чар! Ан тив, юрлатăр, анчах пит хытах мар.

Иккĕмĕш старшина

Влах* пулас вăл! Тўсеймерĕ-мĕн ват ухмах; юрлас-тăк—юрлас ун!

Виççĕмĕш старшина

Аван юрлать! Илтетĕн те—тĕрлĕрен тĕрлĕ юрă. Шăппăн пырар та, тăвансем, итлесе пăхар; çав вăхăтра, тен, чан çапса ярĕç.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш старшина

Мĕнех вара? Пырар.

Виççĕмĕш старшина

Юрать, каяр.

*Старшинасем юман хыçне пытанса тăчĕç, юман айĕнче суккăр кобзарь ларать; ун тавра гайдамаксем пуçтарăнса тăнă. Кобзарь тăстарса та шăппăнрах юрлать:*

---

* *Влах* (Волох)—кунта: суккăр кобзаре, гайдамаксемпе çўрекенскере, çапла чĕнеççĕ. Влах—Валахинче çуралнă çын.

„Эй, влахсем, влахсем, влахсем!
Юлгăр халь юлашкисем;
Эсĕр те, молдавансем,
Пансем мар халь,—чурасем.
Сирĕн пĕр улпут таран
Сутăннă халь тутара,
Сутăнна вăл султана,
Çире сăнчăр сулланать.
Çитĕ, пуç ан усăр!
Хытăрах кĕлтăвăр,
Пирĕнпе, казаксемпе,
Тĕл пулса туслашăр;
Богдан* пирĕн чаплă,
Богдан ырă ятлă;
Пирĕнтен ан юлăр—
Кашниех пан пулăр.
Çĕçĕсем ярса тытатпăр,
Максимпа пĕрле пыратпăр,
Ирĕн-каçăн, çĕрĕн-кунĕн
Ляхсене тытса лăскатпăр;
Çĕр чĕтренĕ те кисренĕ,
Пĕлĕте хĕлхем çĕкленĕ,—
Ак мĕнле тăватпăр!"

Запорожец

Пит аван пулать! Тĕрĕсне юрлать ват çын, тыттармасть пулсассăн. Лайăх кобзарь пулатчĕ, влах пулни пĕтерет.

Кобзарь

Эпĕ влах мар, тахçан Влахинче пурăннăран кăна çынсем Влах тесе чĕнеççĕ—мĕншĕнне хам та пĕлместĕп.

Запорожец

Ку вăл ним те мар. Янрат-ха тепĕрне! Ну-ка, Максим батька çинчен!

---

* *Богдан* (Хмельницкий)—запорожецсен гетманĕ, 1654 çулта Украинăна Российăпа пĕрлештернĕ.

Гайдамак

Анчах ытла хытă мар, старшинасем илтме пултараççĕ.

Запорожец

Мĕн пире сирĕн старшинăрсем? Итлес килсен — итлеччĕр — çавă çеç! Асли пирĕн пĕрре — Максим батька; вăл итлес пулсан, целковăй тыттарĕ. Юрла, турă çынни, ан итле ăна.

Гайдамак

Çаплине çапла та вăл, ырă çыннăм... Эпĕ ăна хам та чухлатăп, анчах акă мĕн: панĕнчен ытла тарçисем хаяр, е—хĕвел тухса сарăличчен сывлăм куçа çисе ан ятăр.

Запорожец

Суя! Юрла, турă çынни, ху пĕлнине, унсăрăн, чан сассине илтиччен—çывăрса та кайăпăр.

Пурте

Тĕрĕс. Юрла мĕн те пулин!

Кобзарь (*юрлать*)

„Хумлă-хумлă пĕлĕт айăн
Вĕçет ăмăрткайăк.
Вăрман витĕр, хир-хир урлă
Çӳрет Максим батька.
Ой, вĕçет-çке ăмăрткайăк,
Чĕпписем—ун хыççăн;
Ой, çӳрет-çке пирĕн батька,
Ачисем—ун хыççăн.
Запорожецсем пулмасăр,
Камсем тата пулччăр!
Вĕсемпе пĕрле шутлать вăл:

Кăмăлсем, тет, тулччăр,
Е касар-и, е ĕçер-и,
Савăнса çӳрер-и!
Е вăл ташлама тухать те,
Çĕр çĕмĕрĕлсе тăрать;
Е ак юрă вăл пуçлать те,
Хуйхă хăраса тарать.
Симпыла черккепе мар вăл,
Алтăрпа кăна ăсать,
Тăшмана, пăхса тăмасăр,
Çул çинчен тапса ывтать.
Ак мĕнле вăл—ăмăрткайăк,
Пирĕн савнă утаман!
Вăл вăйне-халне нихçан та
Шеллесе-туса тăман.
Ун пĕртен-пĕр килĕ-çурчĕ—
Таврари хура вăрман...
Хир-хир урлă, тинĕс урлă
Çулĕ выртнă вăрăма.
Çав çулра—мухтав та ылттăн.
Чĕтĕре, çич ют—тăшман:
Хура çул çинче вут çиçнĕн
Железняк çӳрет, куран,
Гайдамакĕсем—ун хыççăн.

Запорожец

Ак çапла! Ним те калаймăн, сăмахпа хурлаймăн; юрри те пур, суйи те çук. Лайăх, чăн та, лайăх! Чĕрене пырса тивет! Тавтапуç, тавтапуç!

Гайдамак

Эпĕ ăнлансах илеймерĕм: мĕн терĕ вăл гайдамаксем çинчен?

Запорожец

Эх, тăнсăр-пуççăрскер! Акă мĕн çинчен юрларĕ вăл: ылханлă ляхсем, çав урнă йытăсем, ӳкĕнччĕр, терĕ; Хура çулпа гайдамаксемпе Железняк ляхсен пуçĕсене касма килет, терĕ...

## Гайдамак

Ҫакма та, асаплантарма та! Аван, тупата туршӑн, лайӑх! Ку ҫаплах. Чӑн та, ку юрӑшӑн — укҫа панӑ пулӑттӑм, ӗнер ӗҫсе ятӑм ҫке! Ак инкек! Тӑхта, кӗт пӑртак, ыран парӑп.

## Кобзарь

Эпӗ укҫана ытлах хапсӑнмастӑп. Итлеме кӑмӑлӑр пултӑр ҫеҫ, сасӑ тытӑниччен юрлама хатӗр; сасӑ тытӑнсан—леш чӗрӗлӗх шывне пӗр-икӗ курка тыттарсан, каллех пуҫлӑп. Итле, ырӑ халӑх!

„Маттурсем, гайдамаксем,
Вӑрманта ҫӗр каҫнӑ,
Йӗнерленӗ учӗсем
Ешӗл курӑк ашнӑ.
Шинкарьсем панче ляхсем
Ӗҫкӗ-ҫикӗ тунӑ,
Ӗҫсе супнӑ та йӑваннӑ,
Ак, вара...“

## Пурте

Чим, шӑплан-ха! Чан сасси тем? Илтетӗн-и? Тепре... О...

„Чан ҫапаҫҫӗ, чан ҫапаҫҫӗ!“ —
Айлӑм кӗр кӗрлерӗ.
„Пырӑр, тет кобзарь, кӗлтӑвӑр,
Ҫул ҫинче пӗтерӗп“.

Ак, гайдамаксем хускалчӗҫ,
Вӑрмана шав кайрӗ;
Вӑкӑрсем кӳлсе тӑмарӗҫ,
Лавсене хурайрӗҫ
Хул ҫине. Вара тапранчӗҫ.
Суккӑр Влах та—хыҫҫӑн.
„Маттурсем, гайдамаксем,
Вӑрманта ҫӗр каҫнӑ...“
Юррине тӑсма пуҫларӗ
Тӑнкӑлтатнӑ майӑн;

Хальхинче юрри тухмарĕ,
Мĕн усси шăй-шайăн!
,,Урăх юрă пуçла, вată!" —
Кăшкăрать пур халăх;
Лавсене çӳле çĕклеççĕ.
,,Юрĕ, вăй памалăх
Юрлăп, тет; маттур, атсемĕр!
Ак çапла вăл кирлĕ.
Пултаратăр! Тытăнар-ха —
Çил çĕклентĕр вирлĕн!"
Çĕр чĕтрет. Çынсем пыраççĕ
Хыттăн, вăй-хăватăн.
Купăсне вылятнăçемĕн
Такмаклать ак вată:
,,Ай, ну, тапăртат-ха пăртак!
Гандзьăна чĕнет казак:
— Килччĕ, тусăм, кăшт вылям-и!
Килччĕ, чунăм, чуптăвам-и!
Гандзя, пуп патне каяр-и,
Турра кĕлтăвар-и;
Çăнăх çук, кĕрпе çук,
Ясмăкна пĕçер ку чух!..
Илчĕ арăм—пулчĕ парăм,
Пӳлмӳне тасатăн!
Ачи-пăчи çĕтĕк-çатăк,—
Хуйхи çук казакăн:
,,Пӳртĕмре те ним те çук,
Пăлтăрта та ним те çук,
Çук, çук, çук та çук,
Арăм, пулă сĕр ку чух!"

,,Вăт ку юрă! Тата, тата!" —
Кăшкăраç гайдамаксем.

,,Тав, тав, пурсăра!
Лях юхтарнă, тет, сăра,
Эпир ĕçкĕ тăвăпăр,
Хайсене те сайлăпăр:
Упăшкисем ӳсĕр пулĕç,
Арăмĕсем вылĕç-кулĕç.
Эй, тап! Тап тата пăртак!

Паннăна чĕнет казак:
— Панна, сарă кайăкăм!
Панна, хурлăх-тунсăхăм!
Ютшăнмасăр алă парччĕ,
Тухăпăр та кайăпăр:
Çынсем йывăр тĕлĕк курччăр,
Эпир иккĕн вырьăпăр!
Эпир иккĕн ларăпăр,
Тутлă тĕлĕк курăпăр,
Панна, сарă кайăкăм!
Панна, хурлăх-тунсăхăм!"

„Тата, тата!"

„Ак çапла-и, ак капла-и е апла,
Пит аван-çке вылямашкăн казакпа!
Пит аван-çке çамрăкпа, çамрăкпа,
Эппин, ларччĕ эс манпа, эс манпа!
Выльăттăм та кулăттăм,
Старике эп курмăттăм!
Ак çаплаччĕ..."

„Эй, шуйттансем! мĕн шуйăхатăр!
Иртĕхсе кайнă! Эс ăна,
Ватсупнă йытă, ахăратăн.
Турра кĕлту! Хуп çăварна!"
Ку—утаман сасси. Пăхаççĕ—
Пупсем-мĕн çитнĕ. Дьяк юрлать,
Лешсем кадилăсем суллаççĕ,
Пур халăх вилнĕ пек тăрать...
Лавсем çине шыв сирпĕтеççĕ,
Таса шывне милĕксемпе,
Хоругвисем йатса иртеççĕ
Ретсем тăрăх, мăнкунри пек.
„Кĕлтăвăр, тăвансем, кĕлтăвăр!—
Ак, благочиннăй тытăнать:
— Таса Чигрин тавра тăрать
Сыхлавçă; ăна янă турă;
Вăл памĕ çак таса çĕре
Юта. Эсир те уншăн тăрăр,
Тискер ют аллине ан парăр

Хăвăр юратнă аннĕре!
Пушар сӳнмест, çынсем вилеççĕ.
Çапла вăл Конашевичран* вара,
Ютра, тĕрмесенче çĕреççĕ...
Ачсем хĕрессĕр çитĕнеççĕ—
Казак ачи-пăчи; хĕрсем—ютра!..
Хĕрсем кунта, тăван Украйнăн
Çĕрне илем кӳрес чухне,
Амăшсем пек, юта пуç тайнă.
Намăс витет вĕсен пуçне...
Куçа суккăрлатать куççулĕ;
Хăй йăмăкне çăласшăн мар
Казак; ун хăйĕн те кун-çулĕ
Лях аллинче. Юхать ун тар.
Ăçта пăхсан та—хурлăх, хурлăх!
Кĕлтумалла! Хăрушă суд
Каллех çӳрет Украйнă урлă,
Ляхсем çӳреççĕ—çичĕ ют.
Курсан—хура тусем ахлатĕç.
Мухтавлă гетманăрсене,
Атсем, асилĕр тепĕр хут.
Мухтавлă гетманăн—Богданăн
Тăпри ăçта? Хăш вырăнта
Выртать халь тупăкĕ Степанăн?**
А Наливайко? Çук! таçта
Кĕлне çилпе вĕçтерсе янă.
Ăçта Богун? Леш сив хĕлле?
Ингул шăнать ĕлĕкхилле,—
Анчах Богун текех тăраймĕ,
Ăна ютпа тек тултараймĕ.
Ляхсем çӳреççĕ алхасса;
Анчах Богун тек пуç çĕклеймĕ,
Росьпа Сар шывĕ хĕрелеймĕ.***

---

* *Конашевич* — Петр Конашевич-Сагайдачный, 1614 çултан пуçласа 1622 çулччен Украина гетманĕ пулнă.

** *Остранница Степан*—запорожецсен гетманĕ, 1638 ç. казаксен восстанине ертсе пыракансенчен пĕри.

*** *Сар шыв* (Желтые воды)—Ингула тухакан пĕчĕк юханшыв. Çав таврашра Богдан Хмельницкий 1648 çулхи майăн 6(16)-мĕшĕнче Стефан Потоцкине çĕмĕрсе тăкнă, тепĕр вунă кунтан Корсунь патĕнче—Потоцкипе Калиновски çарĕсене. Çак çĕнтерӳсем Украинăна ирĕке кăларассине татса панă.

Миçе çул ахлатать Корсунь:
Хуйха сирме никам çук ун.
Йĕрет-çке Альта: „Пурнăç тăвăр!
Тарас ăçта?.. Е эп вилем?..
Пĕр сас та... Аçăра хуман-тăр
Эсир!“ Ан йĕрĕр, тăвансем:
Вĕсен сăваплă чунĕсем,
Архистратигăн вăйĕ-халĕ
Пĕр пирĕншĕн тăраççĕ халĕ.
Пуриншĕн таврăпăр йăлтах!
Кĕлтăвăр, тăвансем!“
Кĕлтурĕç,
Кĕлтурĕç казаксем чунтан,
Ачасем пекех... Анчах мĕн курĕç?
Кĕтетчĕç урăха... Мĕн пулчĕ?
Çĕкленчĕçĕ вилтăприсем,
Вĕсем çинче шур тутăрсем.
Пĕр телей те пĕр шăпа—
Варкăш, шурă тутăр!
Час ăна та илĕç...
Дьякон:
„Çичĕ ют тĕп пултăр!—
Тет, турра кĕлтунăн.—
Акă çĕçĕсем, тытсамăр,
Илĕр—светит тунă!“
Чан сасси кĕрлет ян та ян;
„Светит тунă!“ сасă
Айлăм тăрăх кĕр-кĕрлет те,
Чĕре чарăнассăн
Туйăнать. „Тĕп пултăр шляхта!“—
Пĕтĕм Украина тăрăх
Ян каять çак сасă.

*АВТАНСЕМ ВИÇÇĔ АВĂТСАН*

Украйнăна çаплах лăскана
Ляхсем; çăлăнăç килĕ тин.
Унччен пĕр кун-ха тунсăхланă
Ман Украинăпа Чигрин.
Мак кунĕ—мăн уяв Украйнăн;
Уяв халь тин иртсе каяйнă...

Çав кун усламçă, дворянин
Эрехпеле юн кӳпрĕç-кӳпрĕç,
Схизматсене вăрçса та супрĕç,
Тек çаратма ним çук тесе.
Гайдамаксем пит шăпăрт кĕтрĕç
Çав усалсем тĕлĕрессе.
Ак, выртрĕç—хăшĕ шухăшлана
Ыран тăрас çукки çинчен?
Пансем ыйхисенче пăштланнă,
Усламçисем укçа шутлана—
Шухăшламан ыран çинчен,
Тек пăщăлтатнă шăплăхра,
Хăранă пулĕ халăхран.
Укçа купи çине ак выртнă,
Усал ыйха путса, шак хытнă.

Шак хытрĕç... Мĕн ĕмĕрлĕхе хытăçинччĕç!
Акă, шурă уйăх пĕлĕт тăрăх шурĕ;
Тĕпсĕр тӳпене те, тарăн тинĕсе те,
Халăх телейне те, унăн хуйхине те—
Пĕтĕмпех вăл сăнĕ, пĕтĕмпех вăл курĕ,
Ун çинчен иркӳлĕм ăна итлĕ турă.
Уйăхăм çутатрĕ Украинăна,
Вăл унта курман-ши ман Оксанăна?
Вăл ăçта çӳрет-ши мĕскĕн тăлăх чунăн?
Ют çĕрте тата мĕн курасси пур унăн?
Пĕлет-ши Ярема? Тен, пĕлмест вăл ним?
Кайран ăна курăпăр... Халĕ... Халь, чим,
Эп урăх юрра, урăхне янратасшăн:
Хитре хĕрсем мар, пур хĕн-хур пуçлĕç ташă,
Казаксен çĕршывĕ—астăвăр ăна!
Пĕлĕр, кĕрсе юлтăр çирĕп ăс-тăна:
Шляхта халăха кун паманни çинчен,
Уншăн казаксем хыт таварни çинчен
Ашшĕ хăйĕн ывăлне пĕлтертĕр,
Ывăлĕ тата çĕн ăрăва çитертĕр.

Шав пăлханнă Украина,
Нумайччен пăлханнă,—
Сарлака çеçенхире вăл
Юнпала шăварнă.

Юнӗ юхнӑ, юхнӑ—типнӗ.
Хирсем хумханаҫҫӗ.
Вилнисем ҫинче кӑваккӑн
Тӗмсем курӑнаҫҫӗ.
Хӑйсем ҫӳлӗ те, анчах та
Питӗрӗннӗ ҫулӗ,
Асилмест, тӑкмасть никам та
Хурланса куҫҫулӗ.
Хӑш чухне вӑш-вӑшӑл ҫил ҫеҫ
Шӑппӑн хурланать-и,
Ирех курӑк йӑлтӑр сывлӑм
Куҫҫульне тӑкать-и,
Сар хӗвел тухса ачашшӑн
Типӗтет, шӑлать-и...
Ним те мар мӑнукӗсемшӗн,—
Акаҫ паншӑн тырӑ!
Ӑҫта Гонта вилтӑприйӗ?
Кам пӗлет, кам шырӗ?
Асап тӳснӗ ырӑ кӑмӑл
Хӑш ҫӗрте выртать-ши?
Ӑшӑ чунлӑ Железнякӑн
Вилтӑпри ӑҫта-ши?
Кат* пусмӑрӗнче пурнаҫҫӗ,
Вӗсене—манаҫҫӗ...
Шав пӑлханнӑ Украина,
Вӑрахчен пӑлханнӑ,
Вӑрахчен ҫеҫенхире вӑл
Юнпала шӑварнӑ.
Ҫӗрӗн-кунӗн—кӗр те шав ҫеҫ;
Ҫӗр чӗтрет ҫурлассӑн;
Хурлӑх мар-и! Шухӑшлан та—
Хаш сывлатӑн ассӑн!
Уйӑхӑм, ҫут уйӑх! Тӳперен ансамччӗ,
Ту хыҫне ансамччӗ, хурлӑхран пытанччӗ;
Курнӑ Альтӑна эс, курнӑ Сенӑна,
Тинӗс евӗр тулнӑ айӑпсӑр юна.
Халь мӗскер-ши пулӗ? Ту хыҫне пытанччӗ,
Кай, шуралнӑ пуҫӑм, куҫҫуль ан тӑксамччӗ,
Халь ҫакна курса...

* *Кат*—палач тени пулать. Шевченко кунта 1-мӗш Николай патша ҫинчен калать.

Тӳпере салху-салхуллӑн
Шӑвӑнать ҫут уйӑх.
Ҫыранпа казак пырать ав,
Хӑйне пуснӑ хуйӑх.
Вӑл масар ҫинчен килет пек—
Ҫав тери салхуллӑ.
Тен, ӑна савни пӑрахнӑ:
Тумӗ чухӑн унӑн.
Ҫийӗнче пулсан та саплӑк,
Савнийӗ савать-ҫке.
Каччӑн пуҫӗ сыхлансассӑн,
Вӑл пуян пулать-ҫке.
Мӗншӗн-ха ҫапла утать вӑл—
Хурлӑхлӑн, салхуллӑн?
Инкеке туйса-шим чунӗ
Лӑпкӑ мар халь унӑн?
Чун туять те, каламасть-ҫке.
Малашне мӗн калӗ?
Хурлӑх иртрӗ... Пур тавралӑх—
Вилнӗ евӗр халӗ.
Автансем шӑп. Вӗрлӗк витӗр
Йытӑсем вӗрмеҫҫӗ,
Пӗр таҫта ҫеҫ пит кичеммӗн
Кашкӑрсем ӳлеҫҫӗ.
Мӗн ӑна? Утать Ярема.
Асӑнче—Оксана,
Халь Ольшанӑна та мар вӑл,
Черкаса сӑнанӑ.
Автансем виҫҫӗмӗш хут ак
Авӑтса ярсассӑн,
Ляхсене унта вӑл ваклӗ!
Унтан... Днепр ҫине тинкерчӗ,
Хаш сывларӗ ассӑн.
„Днепрӑмҫӑм, Днепр, сарлака эс, тарӑн!
Сахал-и юхтарнӑ казакӑн юнне
Авал аната,—халь те вайлӑн юхтарӑн!
Хӗретнӗ эсех Хура тинӗс тӗсне,
Анчах тӑранмарӑн юнпа. Халь тӑранӑн.
Украйнӑ ҫинче хӗрлӗ шуҫӑм ҫиҫет;
Ылханлӑ шляхта юнӗ юхмашкӑн тапранӗ,
Хум евӗр, хум евӗр! Казак чӗрӗлет;

Телейӗмӗр ҫитӗ; йӑм ылттӑн тумланнӑн,
Пур гетмансем тӑрӗҫ, ҫӗкленӗҫ, вара:
„Ҫӗршывӑмӑр ирӗк!“ янратӗ Украйнӑ,
Эй, турӑҫӑм, турӑ,—ялтрать булава!“

Мӑнтарӑн Ярема ҫапла шухӑшланӑ.
Ҫире—ҫӗтӗк тумӗ, ҫӗҫҫи—аллинче.
Мӑн Днепр—итленӗ: пӗр сикнӗ, шавланӑ
Тусем пек хумсем. Хӑмӑшсем хушшинче
Ҫил вӗрет, улать хаяррӑн,
Хӑвасем авнаҫҫӗ;
Аслати кӗрлет... йӑл ҫиҫӗм
Ҫипписем ялтраҫҫӗ,
Пӗлӗте ҫураҫҫӗ.
Малалла утать Ярема,
Суккӑр пек пырать вӑл;
Шухӑшсем пуҫра вӗҫеҫҫӗ,
Хӑй йӗрет, савнать вӑл.
„Инҫете Оксана юлчӗ.
Унпала аванччӗ,
Ҫӗтӗк тумпала пулсан та,
Унпала хавасчӗ.
Халь кунта... кунта тем курӑп!
Пуҫӑма, тен, хурӑп!“
Айлӑмра самант сасартӑк,
Автан сасӑ пачӗ!
„Ку—Черкассы-ҫке!.. Эй, турӑ,
Кунҫула ан татчӗ!“

*ЮНЛӐ ӖҪКӖ-ҪИКӖ*

Чан янлатрӗ, чан янлатрӗ—
Украина илттӗр;
Кӑшкӑрчӗҫ гайдамаксем ак:
„Пӗттӗр шляхта! Пӗттӗр!
Пӗттӗр шляхта! Акӑ, курӑр,
Пӗлӗте вут ҫапӗ!“
Смелянщина ҫулӑмланчӗ,
Пӗлӗте вут хыпрӗ,
Медведевка ҫийӗнче те
Пӗлӗт ялӗ ҫуталчӗ.

Çунать Смела; Смелянщина
Пĕтĕмпех юнланчĕ.
Çунать Корсунь, çунать Канев,
Чигирин, Черкассы;
Хура çул* тăрăх вут вĕçрĕ,
Çил пек кассăн-кассăн.
Ак, Волынь таран юн юхрĕ,
Çулăм ялкăшать.
Çакăн чух Полесьере
Гонта таш ташлать,
Железняк Смелянщинче
Хĕçне вылятать,
А Черкассынче Ярема
Çĕççине юнлать.
,,Ак çапла! Маттур, атсемĕр!
Ан хĕрхеннĕ пулăр,
Çичĕ ют, тăшман тĕп пултăр!"—
Аслă пасар урлă
Железняк чĕнет хастаррăн.
Таврара вут-çиçĕм.
Паттăрсем сикеç вут урлă.
Пĕрре, иккĕ, виççĕ—
Пĕр чикет, касать Ярема
Тăшмана хăюллăн.
Вăл хăрушă! ,,Пултаратăн!
Мур илтĕр, мур илтĕр!
Вĕлер, вĕлер! Райра пулăн,
Ĕмĕтÿ сан çиттĕр,
Есаул эс пулăн!
Эй, маттурсем! Ну, атсемĕр!"
Ачисем ялт сикрĕç,
Нÿхрепсем-и, кĕлетсем-и—
Пур çĕре те çитрĕç;
Йăлт вĕлерчĕç те çаратрĕç.
,,Çитĕ пуль, атсемĕр!
Кăшт канса илсемĕр!"
Урамра та, пасарта та

* „*Хура çул*" („Черный шлях")—Днепр хĕрринчен тытăнса Львов патне çити тăсăлнă. „Хура" тесе ăна ун тăрăх тутарсем Польшăна çÿренĕрен, вĕсен учĕсем йывăç-курăка таптаса пĕтернĕрен каланă.

Юн та юн, вил ӳчӗ.
„Шляхтӑна сахал-ха тиврӗ,
Хӗҫ сахал вил кӳчӗ!
Тепӗр хут асап кӳрер-и,
Ислетер-и? Айтӑр!
Ирсӗрсен ылханлӑ чунӗ
Тек ан вӑранайтӑр!“
Площаде персе тухаҫҫӗ,
Вӗсемпе—Ярема.
Железняк ӑна курать те:
„Кил-ха,—тет,—хӑрамӑн,
Тивес ҫук сана эп, качча!“
„Хӑрамастӑп!“ Ҫӗлӗкне
Хыврӗ те тӑрать сӑпайлӑн.
„Эс ӑҫтан? Кала камне“.
„Ольшанӑран эп, панӑм“.
„Эс Ольшанӑран? Унта
Ктитора йытсем туллалӑ“.
„Кам? Ӑҫта?“
„Ольшанӑра...
Ун хӗрне те-мӗн вӑрланӑ.
Эс паллатӑн-им ара?“
„Ун хӗрне!.. Ольшанӑра?“
„Ҫавӑнне. Паллан пулсассӑн...“
„Оксана! Оксана!“—
Терӗ ҫеҫ Ярема ассӑн,
Лаштӑрах йӑваннӑн.
„Акӑ мӗн! Качча пит шел-ҫке!
Ҫӗклесем, Микола!“
Тӑчӗ. „Батька! Ман тӑванӑм!
Пултӑрччӗ ҫӗр алӑ!
Ҫӗҫӗпе вай-хал парсамӑр!
Тӑшмансем тӗппулччӑр!
Асапланччӑр! Ҫулӑм, тамӑк!
Шӑммисем ан юлччӑр!“
„Тӗрӗс, шӑллӑм! Ҫӗҫӗ пулӗ
Ҫак сӑвапшӑн. Вирлӗн
Халь Лисянкӑна каятпӑр,
Ҫӗҫӗсем пит кирлӗ.
„Ӗмӗрех санпа эп пулӑп,
Каяр, утаманӑм!

Тамӑкран Оксанӑна
Хӑтарасчӗ манӑн...
Хӑть ӑçта çитсен те тупӑп...
Пурнӑç çук ман унсӑр...
Çук çав, хӑть ӑçта çитсен те—
Шырани те уссӑр!"
„Тупӑн, тен. Эс ху мӗн ятлӑ?"
„Ярема".
„Кам пур сан?"
„Эп тӑвансене пӗлместӗп".
„Ха эс, килсӗр-çуртсӑр...
Вӗлтӗрен ӑшӗнчи тейӗн.
Çыр ӑна, Микола,
Реестра!* Ан тив çӳретӗр
„Голый" ятпала вӑл.
Кур ав, çӗтӗк!"
„Çук, юрамӗ"!
„Çыр—Нуша. Вӑл—çавӑ".
„Юрасах каймасть".
„Тӑхта-ха,
Пултӑр Галайда вӑл!**
Çырса хучӗç.
„Ну, Гала́йда,
Тӑшмана ан парӑн!
Ӑраскал шыра... Тупаймӑн..
Атсемӗр, утланӑр!"
Ак, Яремӑна ут пачӗç,—
Обозран тӑварчӗç.
Пӑхкаларӗ те йӑл кулчӗ,
Куççульне пытарчӗ.
Ак, заставӑран тухаççӗ—
Черкассы—вут-çулӑм...
„Пурте пур-и?"
„Пурте, батька!"
„Кайрӑмӑр!"
Хӑюллӑн
Ушкӑн-ушкӑнӑн хускалчӗç
Днепр çыранӗ тӑрӑх.

---

* *Реестр*—гайдамаксен списокӗ.
** *Галайда*—çуртсӑр-йӗрсӗр, çапкаланса çӳрекен тени пулать.

Вĕсем хыççăн—ватă кобзарь.
Инçете, хир тăрăх,
Имшеркке лаша çинчен вăл
Янăратрĕ юрă:
„Гайдамаксем, гайдамаксем,
Железняк, ав, курăр!
Кайрĕçĕ..." Черкассы çийĕн
Варкăшать вут-çулăм.
Варкăштăр! Ăна пăхмаççĕ.
Ахăлтатнă кулă,
Шляхтăна ятланă сасă
Кĕрлесе каять-и,
Хăшпĕри тата, пыруçăн,
Кобзаре тăнлать-и,—
Железняк чĕнмест. Малта вăл.
Çĕлĕкне антарнă.
Чĕлĕмне паккать. Куç çивĕч.
Шухăшĕ пит тарăн.
Хыçĕнчен пырать Ярема!..
Çăп-çăра юманлăх,
Хыр вăрманĕ, чăнкă ту-сăрт,
Днепр инçетĕ, анлă
Пĕлĕт, çăлтăр, çын шăпийĕ,
Ун хуйхи-суйхийĕ—
Пурте пĕтрĕç. Хăй те мар вăл,
Пырать ун виллийĕ.
Суккăр пек, тĕлли-паллисĕр
Пырать ун кунçулĕ.
Йĕкĕте тӳсме çук йывăр—
Кăлармасть куççулĕ.
Çук, йĕмест: çилли çĕлен пек
Тăранми сăхать-çке
Куççульне, чунне пăвать-çке,
Чĕрине касать-çке.
„Эй, куççулĕмçĕм, куççулĕм
Хурлăха, тен, çавĕ?
Çуса ярччĕ!.. Пăчă, йывăр!
Çук çав, Днепр шывĕ,
Тинĕс шывĕ те çитеймĕ:
Хурлăх пысăк манăн.
Тен, яш пуçăма хурам-и?

Оксана! Оксана!
Эс ăçта? ăçта-ши? Килччĕ,
Ман пĕртен-пĕр тусăм!
Каччуна килсе пĕр курччĕ!
Ăçта эс, ман чунăм?
Эс ăçта асапланатăн?
Е пĕр ирсĕр панăн
Хăрхăмĕ пулса, йĕретĕн
Шăпуна ылханнăн?
Тен, Яремуна, Ольшанăна
Хурланса асилтĕн?
„Килччĕ, ытала Оксануна!—
Тесе шăппăн чĕнтĕн?—
Ытала та ĕмĕр-ĕмĕр
Уйрăлар та мар-и?
Çав ляхсем ан тив алхасчăр,—
Алă çеç сулар-и!..“
Çил вĕрет те тинĕс урла,
Тополь авăнать-çке;
Пурнăçĕ пусарнă майăн
Хĕр те парăнать-çке;
Тунсăхлать те, хурланать те—
Йалт манать... Тем курăн...
Лях панче, тен, пани пулнă?
Эй, турăçăм, турă!
Тамăкра асаплантар эс,
Чунăма çунтарччĕ,
Пуç çине аçа çаптар эс!—
Анчах ан кăтартчĕ
Çав хуйха çеç: чул чĕре те
Çурăлĕ!.. Оксана!
Ман телейĕм, тусăм, чунăм!
Эп санăн, эп санăн!
Эс ăçта кайса çухалтăн?“
Тин куççулĕ тухрĕ.
Ăçтан çеç тухма пултарчĕ!—
Шăпăр-шăпăр юхрĕ.
Железняк гайдамаксене ак
Чарăнмашкăн хушрĕ.
„Вăрмана, атсем! Çутлать ав.
Утсем пурте ырчĕç.

Çитерер"—вара, пĕр сассăр,
Вăрманта çухалчĕç.

*ГУПАЛИВЩИНА*

Хĕвел тухнă; Украина
Çуннă, мăкăрланнă.
Сехрине хăпартнă шляхта
Питĕрĕнсе ларнă.
Ялсенче такан çĕкленнĕ,
Пур çĕрте те çакнă—
Мăнтăркка магнатсене çеç
Купан купаланă.
Урамра, çул йўппинче-и
Тилĕсем йăрккаççĕ,
Шляхтăна вĕсем лăскаççĕ,—
Никам та чармаççĕ...
Кам-ха чартăр: ачасем те
Йытăсем çеç юлнă,—
Ухват тытнă арăмсем те
Гайдамак халь пулнă.

Ак мĕн пулнă; ак мĕн курнă
Украина!.. Тĕтĕм...
Хура тамăк... Халь: мĕскершĕн
Çапла пулнă? тетĕн.
Пĕр килти тăвансем евĕр
Уйрăлми пурнасчĕ.
Çук, апла пулма юрать-и,—
Уйрăлса тухасчĕ!
Тăвансенĕн юнĕ юхтăр:
Манăн çук, ун пур-çке—
Вырăх-чĕрлĕхĕ, тумтирĕ,
Ăшă пўрчĕ пур-çке.
„Вĕлерер! Кил-çурчĕ çунтăр!"
Чăн та, çапла пулчĕ.
Çитрĕ... Çук, сĕм хурлăха-çке
Мĕн чуль тăлăх юлчĕ.
Куççульпе ўссе ак çитĕнчĕç;
Чурасен аллийĕ
Салтăнайрĕ,—юншăн юн! теç,
Вилĕсемшĕн—вилĕм!

Чун варкать пĕр асăнсассăн:
Юн юхтарчĕç славянсем.
Тăван юн вăл. Айапли кам?
Ксендсемпе езуитсем!..*

Гайдамаксем иртсе пынă
Вăрманпа, хир урлă;
Вĕсем хыççăн Галайда та
Пынă хурлăн-хурлăн.
Вороновкăран та иртрĕç;
Вербовка, Ольшана.
„Ман кунта ыйтса пĕлесчĕ:
Ăçта-ши Оксана?
Çук, çук! Пĕтин пĕттĕр пуçăм —
Никам та ан илттĕр...“
Ак, гайдамаксем, пĕр ушкăн,
Урам тăрăх иртрĕç.
Вăл пĕр ачаран ак ыйтрĕ:
„Ктитора вĕлернĕ?“
„Çук, пичче. Ăна çунтарнă.
Лях çунтарнă, терĕ
Ман атте. Оксанăна та
Вĕсем илсе кайнă.
Ктитора масар çинче
Ĕнер кун пуç тайнă“.
Итлесе пĕтерейменĕ,
Чĕлпĕрне лăш ячĕ.
„Ĕнерех, çакна пĕлес-тĕк,
Пуçа хумаллаччĕ!
Халь вилсен те сиксе тăрăп—
Пуçĕ пĕттĕр панăн!
Чунăмçăм, чĕреçĕм, тусăм!
Оксана! Оксана!
Эс ăçта?“
Чарăнчĕ, салхуллăн,
Ерипен уттарчĕ.
Мĕскĕн сăн-питне сĕм хурлăх,
Тĕксĕм сулхăн карчĕ...
Хуса çитрĕ. Боровицкий

---

* Католиксен духовнăй орденĕнче тăракан монахсем.

Хуторĕ умрах ав.
Хупах выранĕ—кĕл-кăмрăк.
Лейба çук, вăл тарнă.
Йăл кулса илет Ярема,
Сиввĕн те йӳçенкĕн:
„Çакăнта, нумай пулмасть-ха
Лейбăна пуç пĕкнĕ,
Халь, паян...“
Асап иртнишĕн
Шухăша вăл кайрĕ.
Чăнкă çыр тĕлне çитсессĕн
Çулран пăрăнайрĕç,
Ăчана хуса çитеççĕ:
Çиййĕ—çĕтĕк-çатăк,
Çăпати тăпăлса тухнă,
Хыçне сумка çакнă.
„Эй, ыйткалакан! Тăхта-ха!“
„Ыйткалакан мар эп!
Сирĕн пек гайдамаках эп“.
„Култаратăн мар-и!“
„Ăçтисем эс?“
„Кирилловски“.
„Будища пĕлетĕн?
Кӳлĕ пур унта. Асту-ха?“.
„Пĕлетĕп пурне те—
Ав, унта вăл, айлăм тăрăх
Шăп та шăп тухатăр“.
„Ляхсене паян курман-и?“
„Çук, курман. Таçта-тăр,
Ĕнер кун сахалах марччĕ.
Уява пĕтерчĕç.*
Çав усал ляхсем пĕтерчĕç,
Хăйсене те лекрĕ!
Аттепе пĕрле эп хам та
Таса çĕçĕ тытрăм.
Анне чирлĕ. Сыв пулсассăн...“
„Юрĕ-çке, маттурăм!
Ак, хăюллă сăмахушăн
Тыт та, ан çухатчĕ!“—

* Кунта Мак уявĕ çинчен сăмах пырать.

Манит йăлтăр йăлтăртатрĕ.
„Тавтапуç!“ тет „каччă“.
„Ну, атсем, ĕçе васкатпăр!
Астăвăр—ан шуйăх!
Галайда, ман хыççăн! Авă,
Айлăмра пур улăх,
Улăх варринче пур кӳлĕ.
Сăрт айĕ—вăрманлăх.
Çавăрса илер сасартăк,
Вăрманта—пуянлăх.
Атсене кала, астуччăр:
Пурлăх сыхламашкăн
Йĕксĕксем юлнах-тăр“.
Кайрĕç
Çавăрса тытмашкăн.
Çитрĕç. Вĕтлĕхе хупларĕç.
Пăхаççĕ—никам та...
„Ак ăçта вĕсем! Сыхланăр!
Эй, силле, куран-тăр—
Грушăсем мĕн чухлĕ. Силлĕр!“
Акă конфедератсем хай,
Çĕрĕк груша евĕр,
Йывăррăн пăт-пат ӳкеççĕ.
Казаксем хастаррăн
Пĕр силлерĕç, пĕр ӳкерчĕç
Шуххăн та чăл-паррăн!
Шляхтăна йăлт хыпашларĕç,
Арчасем те тупрĕç;
Йытăсен пуçне касмашкăн
Хăвăртах çул тытрĕç
Лисянкăна...*

ЛИСЯНКĂРИ ĔÇКĔ-ÇИКĔ

Каç. Лисянка. Çулăм
Пĕлĕте хĕретрĕ:
Гонтăпала Железняк вăл
Чĕлĕмсем тивертрĕç;
Туртса ячĕç пит хăрушшăн!

* *Лисянка*—Гнилой Тикич хĕрринчи местечко. Кунта Гонтăпа Железняк тĕл пулнă (Шевченко асăрхаттарнинчен).

Ҫакӑн пек туртмашкӑн
Тамӑкра та пултараймӗҫ!
Тикич* юнланмашкӑн
Ӗнтӗ тытӑнчӗ. Курсамӑр:
Шывӗ тарӑн—путӑн,—
Ҫав шыва хӗретрӗ юнӗ
Купцасен, улпутӑн.
Ӳплесем те, кермерсем те —
Ялкӑшаҫҫӗ пурте;
Чухӑнне те, пуянне те
Шӑпа: хурлӑх кур, тет.
Гонта, Железняк пасарӑн
Варринче тӑраҫҫӗ:
„Ляхсене ҫут кун памастпӑр!"
Тесе кӑшкӑраҫҫӗ.
„Ӳкӗнччӗр вӗсем! Кӑтартӑр!"
Атсем—кӑтартаҫҫӗ!..
Шӑв та шав, ляхсем ҫухраҫҫӗ.
Хӑшӗсем пит паттӑр,
Теприсем тек йӑлӑнаҫҫӗ,
Виҫҫӗмӗш—курах-тӑр—
Ҫылӑхне каҫарттарасшӑн
Кӗлтӑвать тӑванӗ
Умӗнче,—леш ӗнтӗ пуҫ хунӑ.
Ку та халь йӑванӗ—
Нихӑшне те каҫармаҫҫӗ.
Хӗрхенми тавраҫҫӗ—
Лях, шинкарӑн ачисенӗн
Пуҫӗсем касларҫҫӗ.
Шывпала юн юхрӗ, юхрӗ.
Ҫамрӑкки, ватти те—
Нихӑш те хӑтӑлаймарӗҫ,
Пурне те хӗҫ витрӗ.
Пурте выртрӗҫ, купаланчӗҫ,
Выртрӗҫ урлӑн-пирлӗн.
Гайдамак вӗҫтернӗ ҫулӑм
Вирӗк ячӗ вирлӗн,
Пӗлӗте ҫитсе вӑл ҫапрӗ.
Галайда хастаррӑн:

* *Тикич* (Гнилой Тикич) — Буг юханшывне тухакан пӗчӗк ҫырма.

„Ляхсене каçару çук!“ тет,
Вилсене вăр-варран
Каскалать ухмаха ернĕн,
Ним пĕлми хаярран.
„Пан ăçта, тăшман ăçта!
Эп сахал турарăм!
Ляхсен юнĕ юхтăр, юхтăр,
Чунăм вут пек манăн!
Тинĕсрен тулли юн юхтăр!
Оксана! Оксана!
Эс ăçта?“—пĕр çухăрать те,
Пĕр вута сикет вăл.

Ак, пасарăн варрине
Сĕтелсем лартаççĕ.
Тĕрлĕ ĕçкĕ-çикĕсем
Çĕклесе пыраççĕ.
Çаксене ăçтан кăна-ши
Тупрĕç? Кăшкăраççĕ:
Çи те çи! Йĕри-тавра йăлт
Кил-çуртсем çунаççĕ.
Вут ăшнех эрес-мереслĕ
Такансем тăратнă,
Каштасем çинчи ляхсем ак
Çуннă та патлатнă.
„Ывăлсем, ĕçер-çиер-и!
Пĕттĕр шляхта çулĕ!
Тепĕр хут та тĕл пулсассăн,
Татах ĕçкĕ пулĕ!“—
Железняк пĕр сывламасăр
Тĕппи ĕçсе ячĕ.
Куркине тепре тултарчĕ,
Юлташне вăл пачĕ.
„Çак ылханлă вилесемшĕн,
Пăнтăхнă чунсемшĕн,
Тултарар тепре, атсемĕр!
Тусăм, çĕклесемĕр!“
„Ĕçĕпĕр те çийĕпĕр
Санпала, тăванăм.
Купăççă ăçта? Эй, вată,
Эс ху ĕçне маннă.

Иртнине эс ан янрат-ха,
Хамăр мĕн, начар-им?
Ляхсене эпир тĕветпĕр,
Кам пире халь чарĕ?
Пуçăм çаврăнтăр çĕр çаврăм,
Ну, хаваслантар-ха!
Арсăр арăм, çамрăк арăм
Тунсăхне кала-ха!"

Кобзарь (*купăсне каласа такмаклать*)

„Пĕр ялтан тепĕр яла
Ман ĕçке халь каймалла.
Чăхсене эп сутса ятăм,
Илĕп çăмăл-çăмăл атă.
Пĕр ялтан тепĕр яла
Ташласа ман пымалла.
Ĕнем çук, вăкăрăм çук,
Юлчĕ пӳрт пекки ку чух.
Пӳртĕме-çуртăма
Эп сутатăп хам кума,
Хам пурнас, теп, вĕтлĕхре,
Хăлтăр-халтăр хӳшĕре;
Пыл-сăра, сим-сăра
Сутăп эпĕ пурсăра,
Пĕр юрлас та, пĕр ташлас,
Чухăн пул та, пул хавас!
Эх, атсемĕр те атсемĕр,
Кăвакарчăнăмăрсем!
Ташшăма курса, сиссемĕр:
Пит илемлĕ-çке каçсем!
Хам тарçа-тĕрçе эп кайăп,
Ачсене шкула ăсатăп.
Çавă хĕрлĕ хам атта
Çĕтĕпех тапта-тапта!"

„Чаплă! чаплă! Халĕ ташă
Кĕввине пар!" теççĕ.
Леш янратрĕ. Ушкăн-ушкăн
Ташласа ирteççĕ.

Кисренет ҫӗр... „Ну-ка, Гонта!“
„Эй, Максим, тӑванӑм!
Пуҫ сыв чух пӗрре тапар-ха,
Ҫывӑх тус эс манӑн!“
„Ман ҫинчен, хӗрсем, ҫи-пуҫӗ
Ҫук ан тейӗр, унӑн;
Ман атте шеп савалана,
Эп ӑна-ҫке хунӑ“.
„Чаплӑ, тусӑм! Тур ҫырлахтӑр!“
„Ну, Максим, ҫаптар-ха!“
„Тӑхтасамччӗ!“

„Ман сӑмахӑм асра юлтӑр:
Кам лекет, ҫав санӑн пултӑр, —
Хӑть пуп хӗрӗ, хӑть течукӑн,
Хӑть пуян-и вӑл е чухӑн —
Пурте пӗрех мар-и!“

Шав шавлаҫҫӗ, пӗр Галайда
Ним чӗнмест. Салхуллӑн,
Шӑппӑн пуҫ пӗксе ларать вӑл;
Тӗксӗм куҫӗ унӑн
Куҫҫулленнӗ. Мӗн ҫитмест-ши?
Капӑр ун жупанӗ,
Ылттӑн та, мухтав та пур ун,
Анчах ҫук Оксана!
Телейне кама кӑтартӑн,
Кампа кӑмӑл уҫӑн?
Ҫакӑн пек каллех, мӑнтарӑн,
Ҫӳрет тӑлӑх пуҫӑн.
Ак ҫакна, ҫакна пӗлмест вӑл:
Инҫе мар Оксана —
Пӗчӗк Тикич шывӗ урлӑ,
Ляхсемпе, пӗр панӑн
Килӗнче йӗрет вӑл халӗ,
Ҫавӑнта пурнать вӑл,
Ӑшшӗне асаплантарнӑ
Ляхсене курать вӑл.
Тискерсен халь сехри хӑпнӑ,
Халь вӗсем пытаннӑ.
Тӑванна ҫаксан ҫапла-им —
Аван мар, тӑванӑм!

Ак, Лисянка енне пăхрĕ
Тем кĕтсе Оксана.
Варкăшать унта вут-çулăм.
Çавăнтах-çке санăн
Чун савни. Кунтах Ярема.
Эс ăна пĕлместĕн.
Саншăн ун чĕри çунать-çке,
Эс ăна сисместĕн.
„Кăвакарчăнăм, ăçта-ши
Эс йĕретĕн?.. Хурлăх...“
Чим, пит йăпшăннăн пĕр мĕлкĕ
Каçрĕ çырма урлă.
Хăй казак тумне тумланнă.
„Чарăн! Кам пулатăн?“
Галайда сиксе те тăчĕ.
„Хамăрăн, куратăн.
Гонта ячĕ. Хăй ĕçет-ха.
Эп кĕтсе тăратăп.“
„Çук, кĕтсе илеймĕн, Лейба!
Лейба эсĕ, йытă!“
„Тур çырлах! Çук, Лейба мар эп.
Эпĕ—гайдамáка!
Эс пĕлместĕн-им?.. Асту-ха!..
Кур, копейка* акă.“
„Пит пĕлетĕп!“ Çĕççине вăл
Ялт туртса кăларчĕ.
„Тĕрĕсне кала, эсрелĕ,
Тек тунса ан тăрчĕ!“
Аллине вăл сулса ячĕ:
„Ăçта ман Оксана?“
„Тур çырлах!.. Ан тив... калатăп.
Чиперех вăл... панăн
Килĕнче... Çи-пуçĕ ылттăн...“
„Çăл, хăтар, эсрелĕ!“
„Эп... халех... Епле, Ярема,
Эс чăрсăр чĕреллĕ!
Халех кайăп та хăтарăп.
Укçа уçĕ алăк.

---

* „*Вот копейка*“ (вырăс укçи)—тесе гайдамаксем пĕрне-пĕри палласа илмелле чухне каланă пулать.

Ляхсене: Пац выранне, теп...
„Юрĕ, юрĕ! Паллă.
Чуп часрах!“
„Каяп, каятăп;
Гонтăна ĕçтерĕр
Çурçĕрччен, вара ĕç пулчĕ!..
Кайăрах, вĕçтерĕр...
Ăçта леçес?“
„Лебедина!
Çавăнта—ăнлантăн?“
„Эп йăлтах, йăлтах ăнлантăм!..“
Галайда та Гонта
Ташлама пуçларĕç акă.
Лейбăна—курман та!
Железняк хăй тытрĕ купăс:
„Кобзарь, ху ташла-ха,
Эп калам“ тет. Хайхи суккăр
Пуçларĕ вăраххăн,
Унтан кайрĕ, кайрĕ, кайрĕ!
Çăпати лăпăслатать,
Хăй текех такмак çапать:

„Пахчамра пур сарана, сарана.
Юратсамччĕ эс мана, эс мана.
Е начар-им эп казак, эп казак,
Илсе парăп çĕн пушмак, çĕн пушмак.
Илсе парăп, хура куçăм.
Тумлантарăп, савнă тусăм,
Çӳреп, тусăм, сан патна,
Савăп, тусăм, эп сана“.

„Тăпăр-тăпăр, тăпăртăк!
Савнă тусăм ман казак,
Чалăш куçлă,
Кукша пуçлă—
Çакă чĕрене касать!
Мĕн тăвам-ха, мĕн тăвам?
Пăхса юл, ват упăшкам!
Хупаха тухса чупатăп.
Пĕр черкке ĕçсен кулянăп,
Виççĕшне ĕçсен хурланăп,

Пиллĕк, улттăмĕш кайсан,
Кăмăлу тулать те сан,—
Эс ташша тухатăн,
Çил пек çаврăнатăн!
Санпала ташлать казак,
Урипе тапать,
Аллипе çупать...
Ан хăра, шăхăра!
Арăмне чĕнет ватсупнă,
Леш ăна калать: Эй тупнă!..
Тупнă арăм—тăрантар,
Вир кĕрпи туянса пар!
Ачасен тăранмалла,—
Тăрантарăп, тумлантарăп,
Эс, ватсупнă, ан шарла!
Кăмака çинче харлат!"

„Çамрăк чух эп юратмастăм чупкăна.
Чӳрече умне çакаттăм юбкăна;
Иртекен пĕри пăхать,
Куç хĕсет те, тем калать.
Хам ларатăп, тĕр тĕрлетĕп,
Вĕсене пуçпа сĕлттетĕп.
Маттурсем, маттурсем!
Илсе тухăр енчĕксем,
Çӳрĕпĕр те ларăпăр,
Выльăпăр та кулăпăр!"

„Чăххине хуп читлĕхне,
Чĕппине—пичĕкене".

. . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . .

„Эх... ну, яра пар!
Ашшĕ хăвăрт пĕкĕ пар!
Амăшĕ—йĕнерчĕк,
Хĕрĕ чӳлĕк çыхчĕ!"

„Тата-и? Çитет-и?"
„Тата!
Ура хăй тĕллĕн тапать!"
„Хатĕрлеччĕ сăрине,
Кăмпине-çке татĕç!

Карчӑк пур,
Старик пур,
Иккӗш ахӑлтатӗҫ!
Хатӗрле-ха сӑрине,
Ҫарӑкне шурат-ха!
. . . . . . . . .
. . . . . . . . .
Хатӗрле-ха сӑрине,
Кӑшманне тура-ха!
. . . . . . . . .
. . . . . . . . .
Шывне яр-ха, яр-ха, яр-ха,
Епле каҫӑпӑр- шутлар-ха!..“

„Ҫитӗ, ҫитӗ!—терӗ Гонта.—
Ҫутӑ парӑр, ҫутӑ!
Леш ӑҫта? Ӑҫта ҫав Лейба?
Халь те ҫук иуда?
Халех тупнӑ, ҫакнӑ пултӑр!
Вӑл эсрелӗ мар-и!
Кайрӑмӑр. Казак хӑйӑи те,
Ав, сӳнме пуҫларӗ“.
„Утаман!—тет ман Гала́йда.—
Кӑшт тӑхтар, аттемӗр.
Пасарта ҫунать. Унта халь
Ҫутӑ—тинкерсемӗр.
Эй, ташлар! Янрат-ха купӑс!“
„Ҫук, тек ҫитӗ, пӗтрӗ!
Ҫутӑ парӑр! Тикӗт, чӳпӗк!
Мортирӑсем сӗтрӗр;
Ав, унта вӗҫтерӗр ҫулӑм!..
Шӳт-и ку, атсемӗр!“
Гайдамаксем кӗр-кӗрлерӗҫ:
„Итлетпӗр, аттемӗр!“
Юрласа, сиксе чупаҫҫӗ;
Ҫулӗ—кӗпер урлӑ.
Галайда ҫухрать: „Эй, батька!
Чарӑнӑр!.. Ман хурлӑх!
Тӑхтӑр, тӑхтӑр! теп. Ан перӗр:
Унта ман Оксана!
Эп ӑна халех ҫӑлатӑп,

Кăшт тăхтасчĕ санăн!"
"Юрĕ, юрĕ! Железнякăм,
Кăшкăр—печчĕр, печчĕр!
Тăшмансем мĕнпурĕ турă
Патнелле çĕкленччĕр!..
Эсĕ, эсĕ, ăмăрткайăк,
Çĕннине эс тупăн!"
Пăхрĕ—
Галайда вĕçтерчĕ.

Ту кĕрлет—ляхсен кермене
Пĕлĕте çĕкленчĕ.
Çĕр çине юлни—мĕнпурĕ
Хăвăртах кĕлленчĕ.
„Галайда ăçта?" чĕнет Максим.
Йĕр те хăвармарĕ.

Казаксем ташша çапнă чухне,
Ярема Лейбăпа пит шăпăрт
Кĕрсе çухалчĕ кермене.
Ак вилнĕ пек Оксанăна
Вăл йатрĕ те, Лебедина
Вĕçтерчĕ савăнса...

*ЛЕБЕДИН*

„Эп Ольшанăран, эп тăлăх,
Тăлăх, кинемейçĕм!
Аттене ляхсем вĕлерчĕç,
Мана... Шикленнĕçемĕн
Шикленетĕп асилмешкĕн!..
Мана илсе кайрĕç.
Манпала кайран мĕн пулнă—
Ан ыйтчĕ, тархасшăн.
Эпĕ йăлăнтăм, кĕлтурăм,
Чун çунса тухатчĕ.
Чун пăрланчĕ, куçăм типрĕ...
Эх, пĕлес пулсанччĕ,—
Тепĕрре ăна курассăн
Кăшт çеç туйăнасчĕ,—
Пĕр сăмахшăн, пĕр хыпаршăн
Виçĕ хут тӳсеттĕм!

Каçарсамччĕ, кинемейçĕм,
Çылăха, тен, кĕтĕм.
Хăмăрччĕ ун мăшăр куçĕ,
Пĕвĕ-сийĕ тӳрĕ.
Чун юратнăшăн-шим тура
Халь мана хур турĕ?
Хамшăн мар, аттешĕн мар эп,
Кинемей, кĕлтурăм,—
Чун савнишĕн, чун савнишĕн
Татăлса кĕлтурăм.
Айăпла, çӳлти! Эп хатĕр
Хĕн-асап тӳсмешкĕн.
Эп ун чух шухăшламастăм
Хама вĕлермешкĕн.
Вăл пулман пулсан, тен, чăн та,
Чунăма илеттĕм!
Йывăрччĕ... Ăна асилнĕн:
„Туррăм, чунăм!“—теттĕм.—
Тăлăх вăл, мăнтарăн, мĕскĕн.
Кам ăна юп курĕ?
Çĕр çинче ăна пĕр мансăр
Кам çын вырăнне хурĕ?
Тăлăха чунтан-çке кам-ши
Сăмах чĕнĕ ăшшăн?
Тăлăха чăнтан çке кам-ши
Çупăрлĕ ачашшăн?“
Ĕненсемччĕ, кинемейçĕм,
Эп çапла шутлаттăм.
Хам çинчен те шухăшлаттăм,
Хурланса калаттăм:
„Эп те тăлăх ĕнтĕ,—теттĕм,—
Аннесĕр, аттесĕр;
Эп вилни çинчен илтсессĕн,
Пĕтĕ, теттĕм, тĕлсĕр,—
Тĕнчере пĕр вăл, пĕр вăл çеç
Мана юратать-çке“.
Пĕр кĕтеттĕм, кĕлтăваттăм.
Чунăм хурланать-çке:
„Савни пулмĕ, пулмĕ! Юлтăм
Пĕччен хĕн курмашкăн!..“
Йĕрсе ячĕ, ĕсĕклерĕ.

Çумĕнчи манашка
Хуйха ÿкрĕ.
„Кинемейçĕм!
Эп ăçта? Ыйтатăп!“
„Эс Лебединра, ман чунăм!
Эс чирлĕ выртатăн.“
„Хăçантан Лебединра эп?“
„Ик кун ĕнтĕ, чунăм...“
„Икĕ кун?.. Тăхта, тăхта-ха!..
Шыв çинче вут-çулăм...
Кермен, шинкарь, Майдановка...
Ячĕ—Галайдаччĕ...“
„Чăн та, Галайда, Ярема.
Чăн ячĕ çаплаччĕ.
Çав сана кунта...“
„Ăçта вăл?
Халь эп йăлт пĕлетĕп!..“
„Эрнерен сана илмешкĕн
Килме пулчĕ, тетĕп“.
„Пĕр эрне! Вара чĕремçĕм
Лăпланĕ! Эс туй-ха,
Кинемейçĕм, паян кун ман
Иртрĕ хуйхă-суйхă!
Галайда—вăл ман Ярема!..
Вăл ята Украйнă
Пĕтĕмпех пĕлет... Вут-çулăм
Ял-ял урлă кайнă...
Галайда ятне илтсессĕн,
Поляксем таратчĕç—
Çаксене йăлтах эп курнă!
Ак епле хăратчĕç!
Вăл камне, вăл ăçтанне те,
Вăл кама çăласшăн
Паттăррăн çапăçнине те
Вĕсем пĕлнĕ. Маншăн
Вĕçнĕ савнă ăмăрткайăк.
Вĕçсе çитчĕ, тусăм!
Мĕн пек пысăк савнăç манăн,
Эп тинех кун куртăм!
Пĕр эрне çеç, кинемейçĕм!..
Виç кун пек вăл маншăн.

Хăçан çитĕ-ши?..
„Аннем, турт кăвар, кăвар,—
Е хĕрӳ шел мар, шел мар...“
Çут тĕнче епле хаваслă!
Сана, кинемейçĕм,
Хавас мар-и?..
„Эп хаваслă,
Эс савăннăçемĕн“.
„Манпа мĕншĕн юрламастăн?“
„Ĕмĕр иртрĕ манăн...“
Чан янлатрĕ. Ларса юлчĕ
Пĕчченех Оксана:
Леш касхи кĕлле васкарĕ,
Чиркĕве танккарĕ.

Виç кунтан Лебединра
Чиркӳре юрларĕç
*Исаия, ликуй*! Яремăна
Венчете тăратрĕç.
Çав кунах, каçпа Ярема
(Ак епле вăл манăн!)
Утаман ан вăрçтăр, терĕ,
Вĕçтерчĕ... Оксана
Юлчĕ. Ун каччийĕ халĕ
Максимпа хавассăн
Уманьре „туйне“ тăваççĕ—
Тăшман пуçĕ касăл!
Таврара вăркать вут-çулăм.
Хĕр кĕтет кун-каçăн:
Ярема килинччĕ,
Хайĕн чаплă кил-çуртне вăл
Хĕр лартса кайинччĕ.

Ĕненсе турра кĕлту эс,
Пăрах кулянмашкăн!
Çĕнĕ çул выртать, ман вăхăт
Умане каймашкăн.

## *ГОНТА УМАНЬРЕ*

*Гайдамаксем тек мухтаннӑ,*
*Умане пыруҫӑн:*
*— Урана чӗркӗпӗр, тенӗ,*
*Панран сӳнӗ пурҫӑн!*

Кӗр ҫывхарать, кунсем иртеҫҫӗ,
Украйнӑ ҫав-ҫавах ҫунать;
Ялта ача-пӑча йӗрет-ҫке:
Ҫухалнӑ ашшӗсем. Шавлать
Сар ҫулҫине тӑкса юманлӑх;
Пӗлӗт юхать, хӗвел ҫыврать,
Ҫын сассисем йӑлтах ҫухалнӑ;
Ялта йӑрккаҫҫӗ кашкӑрсем,
Виле кышла-кышла. Вӗсем
Поляк виллисене ҫиеҫҫӗ...
    Ҫӗре юр шуратрӗ,
    Асапран ҫӑлмашкӑн пурпӗр
    Вӑл пултараймарӗ:
Ляхсем хытрӗҫ, казаксем пур—
Ҫулӑмра шав хӗрчӗҫ.
Ҫуркунне ҫитсе те тӑчӗ,
Ӑшӑ ҫил те вӗрчӗ,
Чечексем ӗнтӗ пуҫ сӑхрӗҫ,
Ҫӗре ҫулӑм витрӗҫ;
Тӑрисем юрлаҫҫӗ юрӑ,
Уй-хир ӑна илтрӗ;
Ҫӗр ешерчӗ, чечекленчӗ,
Ҫӗр ҫӑтмах пек пулчӗ...
Камшӑн, камшӑн ҫак ҫӑтмах вӑл?
Пӗтӗмпех — ҫынсемшӗн!
Ҫыннисем мӗнле? Пӑхмаҫҫӗ!
Хӑнк та ҫук ҫаксемшӗн.
Чечеке пӑхсан та — ятлӗҫ.
Юн ҫук, юн ҫук! тейӗҫ;
Ҫӗршыва хӗретгӗр ҫулӑм,
Ҫулӑм кирлӗ, тейӗҫ.
Хӗвел—ҫук та, ҫутӑ—тарнӑ,
Пӗлӗте—пуҫ тайӑн!
Эх, ҫынсем, ҫынсем! Камах-ши
Сире вӑратайӗ?

Ырлăха эсир туймастăр.
Тĕлĕнсех-çке кайăн!

Çуркунне памарĕ канăç,
Юна чарáймарĕ.
Тройăра та, пĕр тесессĕн,
Çапла пулнă мар-и?
Çаплах пулĕ.
Гайдамаксем
Çӳреççĕ, тураççĕ;
Ăçта çитнĕ—çавăнта халь
Хирсем юнланаççĕ.
Украинăшăн — курсамăр —
Максим тупрĕ ывăл;
Тăван ывăл мар Ярема,
Тăванран та çывăх.
Максим тăрать, Ярема — çук,
Касмасть—çунтарать вăл:
Çĕççипеле вут ăшĕнче
Кун та çĕр касать вăл.
Хăть ватти, вĕтти лекет-и,
Ним те мар чĕришĕн:
Ляхсене халь тавăрать вăл
Ктитора чĕртнишĕн;
Вăл Оксанăшăн... Шап-шурă
Шурса кайрĕ уншăн.
Железняк: – Çунтар, тет, ывлăм,
Хĕвелччен, çут куншăн!
Эх, çӳререç те çӳререç!
Пур çĕрте те пулчĕç,
Киевран Умань таран-и
Ляхсем выртса юлчĕç.

Умане гайдамаксем ак
Çавăрса та илчĕç
Çурçĕрте, тул çутăлас умĕн
Урамне те кĕчĕç.
Кĕчĕç те кăшкăрса ячĕç:
„Ляхсене таптар-и!"
Пасарпа сиктерсе иртрĕç:
„Йăлтах кăтартар-и!"

Ачасем йĕрсе тăраççĕ.
Чир-чĕрли, уксахĕ.
Кăшкăраççĕ, йынăшаççĕ...
Площаде тухма хĕн:
Юханшыв пекех юн юхрĕ.
Халь унта тăраççĕ
Гонтăпа Максим. Пĕр харăс,
Харăс кăшкăраççĕ:
„Пит аван! маттур, атсемĕр!
Ляхсене—çав кирлĕ!"
Çак самант гайдамаксем ак,
Вашаватлăн, вирлĕн,
Пĕр ксендза тĕксе пыраççĕ;
Унпа ик ача-мĕн.
„Гонта, Гонта! Кусем—санăн,
Лайăхрах пăхсам-и!
Пире касăн—вĕсене те
Кас эппин апла-тăк!
Пĕл: католиксем вĕсем те!
Мĕн, пăхса тăратăн?
Халь ача вĕсем. Ӳссессĕн,—
Хăвăн пуçна касĕç..."
„Вĕлер йытта! Çурисене эп
Хам алăпа касăп.
Халăх пухăр! Ну, ик чĕппĕм,
Эсир кам пулатăр?"
„Католиксем... пире анне-çке..."
„Эй, турă çырлахтăр!
Чарăр! Чарăн! Эп пĕлетĕп!"—
Халăх кĕпĕрленчĕ.
„Ман ачасем—католиксем!..
Çулсем ан йӳпленччĕр,
Хирĕçӳ ан пултăр пирĕн,
Халăхăм, итлеччĕ:
Эп католиксене касмашкăн
Çирĕп тупа турăм.
Ывăлăмсем, ывăлăмсем—
Пĕчĕксем! Эй, турă!
Мĕншĕн ляхсене касмастăр?"
„Касăпăр, аттеçĕм!"
„Çук, пулмасть сиртен, пулмасть вăл!

Ылханать чĕресĕм
Çав сире çуратнă, кун кăтартнă
Католичкăна!.. Мĕскершĕн
Çуратсан, иркăлĕм
Пăрахман сире шыва вăл?
Ют тĕншĕн-çке ӳлĕм
Çылăхлă пулмастăр! Халĕ
Мана та пит йывăр.
Ывăлсем, çумма тăрсамăр,
Ачăра чуптăвăр.
Эпĕ мар, тупа вĕлерĕ!..“
Çĕççине çĕклерĕ—
Чĕрĕ юн палкарĕ, юхрĕ!
Ачисем йăванчĕç.
„Ляхсем мар эпир, аттемĕр!..“
Терĕç те шăпланчĕç.
„Пытарас пулать-тĕр, Гонта?“
„Католиксене-и?
Ывăлăмсем, ывăлăмсем!
Мĕншĕн пĕчĕк эсĕр?
Ма тăшман пуçне касмарăр?
Мĕншĕн вĕлермерĕр
Хăвăра çут кун кăтартнă
Аннĕре—ылханлă
Католичкăна?..—Каяр-и,
Максимăм, тăванăм!“—
Максима хулран вăл тытрĕ,
Кайрĕç пасар витĕр.
Кăшкăраççĕ иккĕш харăс:
„Пана вилĕм вигтĕр!“—
Витереççĕ... Пит хăрушă
Умань вут-кăварĕ.
Костелта, керменсенче те
Пĕр çын та юлмарĕ,—
Пурте пĕтрĕç. Кун пек çулăм
Халиччен курманччĕ.
Уманьри пекки ниçта та
Халиччен пулманччĕ!
Базильянецсен шкулне ак
Пыраç кĕпĕрленнĕн.
Гонта хăй çĕмрет, унта ун

Ачисем вӗреннӗ.
„Эсӗ ман ачасене, тет,
Вӗлертӗн тискеррӗн.
Ҫисе ятӑн, ҫӑтса ятӑн—
Ырра вӗрентмерӗн!..
Ҫӗмӗрӗр!..“—
Гайдамаксем ак
Стенана ватаҫҫӗ.
Йӑлт тустарчӗҫ. Ксендзене те
Чул ҫине ҫапаҫҫӗ,
Чӗрӗллех школярсене те
Ҫӑла пӑрахаҫҫӗ.

Тӗттӗмччен ку пычӗ; шляхтӑна турарӗҫ,—
Пӗр чун та юлмарӗ. Гонта кӑшкӑрать:
„Эй, ҫын ҫиенсем! Ӑҫта ҫитрӗр? Курасчӗ!
Ман чӗппӗмсене ҫисе ятӑр пулать—
Мӗнле пурӑнас ман? Кампа калаҫас?
Кампа хурланса халь куҫҫулӗ тӑкас?
Эх, ывӑлӑмсем, ӑҫта кайрӑр-ҫухалтӑр?
Шляхта юнне парӑр, юн мана парӑр!
Ӑна эп ӗҫем те, ӗҫем те ярам,
Ҫав юн хуралса ларнине-и курам,
Юн парӑр, юн парӑр!.. Ҫил, мӗншӗн вӗрместӗн,
Мӗншӗн ляхсене эс кунта вӗҫтерместӗн?..
Пурӑнмашкӑн вӑйӑм-халӑм ҫук,
Макӑрса яма та текех вӑйӑм ҫук!
Ҫӑлтӑрсем, пытанӑр, пӗлӗт хыҫне пулӑр!
Эп сире чӗнмерӗм, йӑл пӑхса ан кулӑр,—
Эп хамӑн юратнӑ ывӑлӑмсене
Хам алпа вӗлертӗм!.. Халь камӑн ҫумне
Сӗртӗнес ман?.. Эй, хурлӑхӑм, хурлӑх!..“
Ҫапла кӑшкӑрать халь Гонта пасар урлӑ;
Ҫӳрет урампа; пасар варрине
Сӗтелсем лартаҫҫӗ, ӗҫми-ҫимине.
Ак, гайдамаксем ӗнтӗ пуҫтарӑнаҫҫӗ,
Каҫхи апата харӑсах тытӑнаҫҫӗ.
Юлашки апат!
„Ӗҫӗр-ҫиййӗр, атсемӗр!
Ӗҫре—ӗҫлесемӗр, ӗҫкӗре ӗҫсемӗр!“—
Железняк калать. „Эй, волоксем,

Кобзарь, купăсна тыт! Çĕр чĕтрентĕр,
Ан тив ташша çапчăр-и ман казаксем!"
Кобзарь янăратрĕ:
„Атте хупах тытакан,
Атă тăвакан;
Анне кĕнчеле арлать,
Евчĕ те пулать;
Пиччесем пит маттурсем:
Пĕр ĕне çавăтса килчĕç
Вăрмантан,
Кĕмĕл тенкĕ илсе килчĕç
Вăрмантан.
Кăкăр урлă эп çакатăп
Кĕмĕлне,
Пуçкăшăл çыхса лартатăп
Пуç çине.
Çăмăл атă тăхăнатăп
Ирхине,
Эп ĕне суса тухатăп
Витрепе.
Урамра темччен тăратăп
Йĕкĕтпе..."
„Тăпăр-тăпăр тăпăртатăр!
Алăка çаклатăр!
Эсĕ, карчăк, ан шарлах,
Хăвăрт вырт-ха çуммарах!"
Пурте ĕçеç. Ăçта-ши Гонта?
Мĕншĕн курăнмасть вăл?
Туссемпе пĕрле мĕскершĕн
Юрă юрламасть вăл?
Çук вăл; Гонтăн кăмăл çук-мĕн
Халь хавасланмашкăн.
Кам çав? Хăй хура тум уртнă;
Çынна курăнмашкăн
Хăраса, утать вăраххăн;
Площадьрен вăл иртрĕ.
Чарăнчĕ... Вилесене вăл
Çавăрать. Ак, тупрĕ—
Икĕ пĕчĕк ӳтсене вăл
Тупрĕ те çĕклерĕ,
Пасар çумĕн, виле урлă

Тĕттĕме сĕнккерĕ.
Костел хыçнелле вăл кайрĕ.
Кам вăл? Хăй вилесшĕн.
Гонта вăл. Ачисене вăл
Тăпрапа витесшĕн:
Казаксен ӳтне нихçан та
Йытăсем ан çиччĕр,
Ачисене йатса кайрĕ
Гонта çулăм витĕр,—
Хăш тĕле пытарнине те
Никам та ан пĕлтĕр;
Ашшĕ – Гонта йĕнине те
Никам та ан илттĕр.
Уй-хире илсе вăл тухрĕ,
Çĕççине кăларчĕ,
Унпала çĕр чаврĕ, чаврĕ.
Умань кăвакарчĕ,
Гонтăна, ачисене те
Çав çулăм çутатрĕ.
Ачисем выртаççĕ шăпăрт,
Çылăхсăр, илемлĕн...
Ма вăрă пек пăхать Гонта?
Е мула иленнĕ?
Хăй тăрать, чĕтрет... Илтет вăл—
Юлташсем чĕнеççĕ.
Гонта инçетре – ан чĕнĕр,
Хăлхисем илтмеççĕ.
Уй-хирте-çке ачисемшĕн
Ик шăтăк алтать вăл.
Вилнĕ ывăлĕсене-çке
Тирпейлĕн хурать вăл.
Хăй пăхмасть, хăлхи илтет пек:
„Ляхсем мар-çке эпĕр!“
Çĕре кĕчĕç; кĕсйинчен вăл
Кăларчĕ шур тутăр,
Пĕчĕккĕ ачисене вăл
Ачашшăн чуптурĕ.
Хĕрес хучĕ, хĕрлĕ витрĕ—
Казак ачисем-çке!
Тепĕр хут уçса вăл пăхрĕ—
Куççулĕ тухать-çке:

„Ывăлăмсем, ывăлăмсем!
Украина—курăр!
Унпала пĕрле, пĕрле çеç
Пуçăма эп хурăп.
Кам мана ун чух пытарĕ?
Кам? Эсир-и? Калăр.
Ман çинче куççуль кам тăкĕ?..
Эй, шăпам, раскалăм!
Ăраскалçăм, раскалăм!
Мана мĕн кăтартрăн?
Мĕншĕн эс ачасем патăн,
Хама çунтармарăн?
Вĕсем мар тăпра сапаççĕ,
Хам-çке... Турă, турă!“
Тепĕр хут, çĕр сапас умĕн,
Сăхсăхрĕ, чуптурĕ.
„Йывăр тăпрăр çăмăл пултăр,
Çыврăр, ачамсемĕр!
Аннĕре—çавна пула-çке
Эсир кĕреймерĕр
Чăн таса çĕре. Каçарăр.
Канлĕн, канлĕн çыврăр!
Çăтмахра турра кĕлтăвăр:
Унта асра тытчăр—
Унта сирĕншĕн мана-и
Тен асаплантарччăр!
Ют тĕнрен эсир. Каçарăп.
Эсир те каçарăр“.
Çерем пе çĕрне вăл витрĕ:
Халăх ан курайтăр;
Ачисем ăçта выртаççĕ—
Çавна ан курайтăр;
Ачисем-çке ун—казакăн.
„Ывăлсем, пит лăпкăн çыврăр.
Çук, сире кĕттермĕп:
Кунра татрăм. Эпĕ хам та
Часах çĕре кĕрĕп!
Час вĕлерĕç... Хăвăртрахчĕ!
Кам вара пытарĕ?
Гайдамаксем!.. Çавăнпа та
Тата пуç касар-и!..“

Çавăрнчĕ салхуллă Гонта.
Угать, такăнать вăл.
Çулăм, çулăм; пăхать Гонта—
Курать те кулать вăл.
Пĕр кулать, ахăлтатать вăл.
Халь хире сăнатчĕ,—
Йĕчĕ-йĕчĕ... Сулăнчĕ,
Тĕттĕмре çухалчĕ.

*ЭПИЛОГ*

Çаксем тахçанах, тахçанах иртсе кайнă.
Ман çамрăклăх та иртсе кайрĕ тахçан.
Эп тăлăх пуçпа-çке çӳреттĕм Украйнăн
Çеçенхирĕпе—выçлăн-тутлăн, çарран.
Танккаттăм тахçан Гонтăпа Железняк
Таса çĕçĕсем вылянтарнă çĕрпе;
Çул аслă пулмарĕ, тăвăрччĕ сукмак,
Куççулĕ тăкса, кунĕпе, çĕрĕпе
Çӳреттĕм çынна тĕл пуласчĕ тесе,
Мана вăл ырра вĕрентинччĕ тесе.
Тахçанах вăл иртнĕ, юлнă асăнмалăх.
Халĕ таврăнасчĕ çав хуйхă, ачалăх—
Парăттăм эп уншăн пур раскалăма.
Йĕркипе килеççĕ халĕ асăма:
Эп вĕççĕр-хĕррисĕр хире тинкеретĕп,
Аттене, асаттене аса илетĕп...
Асатте вилмен-ха, аттем ĕнтĕ çук.
Вăл уяв каçĕ, килте ларнă чух,
Минейне* хупатчĕ, кӳршипе ĕçетчĕ
(Яланах юлташлă пурăнăпăр, тетчĕ),
Ашшĕнчен ыйтатчĕ Колиивщина çинчен,
Железнякпа Гонта ĕçĕсем çинчен
Йĕрки-йĕркипех-çке каласа памашкăн,
Вĕсем ляхсене каснине асăнмашкăн...
Çăлтăр пек çунатчĕç çĕр çулхи куççем,
Шыв пекех юхатчĕç ирĕк сăмахсем:
Ляхсене тураççĕ, хуласем çунаççĕ...
Кӳршĕсем чĕтренĕн итлесе лараççĕ.
Пĕрре мар эп хам та, пĕчĕкçĕ ача,

* „Четьи-минеи" ятлă кĕлĕ кĕнеки.

Ктитора шелленӗ, йӗнӗ те, анчах
Ман енне пăхман та, шав итленӗҫемӗн...
Тавтапуҫ сана, ман савнă асаттеҫӗм:
Эс тăван ҫӗршывăн чăнлăхне усранă,
Ун ҫинчен пире те каласа хăварнă!

Ыр ҫынсем, мана каҫарăр,
Казаксем ҫинчен эп
Кӗнеке тăрăх ҫырмастăп,
Хам мӗн илтнине ҫеҫ;
Асаттем мӗнле калана
(Тав ăна халь уншăн!),
Ҫавăн пек. Пӗлмен-ҫке ватă
(Каҫартăр вăл куншăн)
Унăн юмахне пит ăслă
Ҫынсем вуласса та,
Вуласа тухсан тем те пӗр
Сăмах каласса та.
Юрӗ-ҫке, калаҫчăр! Халӗ
Сăмаха тăсам-и,
Ун вӗҫне ҫитсе тухсассăн,
Кăшт выртса канам-и,
Хам ҫуралнă Украинăна
Тӗлӗкре курам-и,—
Ҫавăнта гайдамаксенӗн
Ҫӗҫҫисем-ҫке ҫиҫнӗ;
Манăн пӗчӗк урасем те
Пайтах-ҫке ҫул виҫнӗ.
Шав ҫӳрерӗҫ гайдамаксем,
Нумайччен ҫӳрерӗҫ;
Шляхта юнӗпе пӗр ҫул хушши
Ҫӗршыва хӗретрӗҫ,
Украинăна... Шăпланчӗҫ—
Вăйӗсем юлмарӗҫ.
Гонта ҫук; ун вилтăпри те
Ниҫта курăнмарӗ.
Гайдамак кӗлне, тен, шухă
Ҫил вӗҫтерчӗ пулӗ;
Кам турра пуҫҫапӗ уншăн?
Кам тăкӗ куҫҫулӗ?
Юлчӗ пӗр ҫулпа ҫӳренӗ

Тăванран тăванĕ;
Вăл вара, тусне ылханлă,
Чи усал тăшманĕ
Асаплантарнине илтсессĕн,
Чунĕпе хурланчĕ,—
Железняк пĕрремĕш хут-çке
Куçне шывлангарчĕ.
Йĕчĕ те куçне шăлмарĕ.
Вилчĕ вăл, мăнтарăн.
Ют хирте тӳсме çук тунсăх,
Хурлăн ăна тарăн
Шăтăк алтрĕ те вырттарчĕ:
Çапла-мĕн раскалĕ!
Гайдамаксем пуç усрĕç:
Пĕтрĕ ун вăй-халĕ...
Вилтăпри çине пит çӳлĕ
Тăпра купаларĕç.*
Йĕчĕç-йĕчĕç, вара шăппăн
Сапаланчĕç-кайрĕç.
Пĕр Ярема çеç вăраххăн
Тăчĕ хускалмасăр:
„Инçетре, ютра эс, батька,
Ĕнтĕ лăпкăн çывăр!
Ху çĕршывăнта çук вырăн,
Халь унта пит йывăр.
Лăпкăн вырт, казак. Тен, манмĕç!
Асăнĕç, тăванăм!"

Хирпеле уттарчĕ, мĕскĕн,
Татăлса хурланнăн.
Вăрахчен вăл утрĕ, утрĕ,
Курăнми те пулчĕ.
Уй-хирте пĕр вилтăпри çеç
Хуралса-çке юлчĕ.

Гайдамаксем Украйнăра
Тыră-пулă акрĕç,
Мĕн тăвас-ха, мĕн тăвас-ха—
Хăйсем вырăймарĕç!

* Шевченко Железняка хăйĕн юлташĕсем çеçенхире пытарни çинчен каласа парать. Чăннипе илсен, Железняка Çĕпĕре пуç янă пулнă. Ăçта вилни паллă мар.

Чăнлăх çук, ӳсмерĕ вăл,
Суялăх хуплать-çке...
Гайдамаксем Украйнăра
Йăлтах сапаланчĕç:
Хăшĕсем килте, хăшсем-мĕн
Вăрманта çӳреççĕ
Вăр-хурахăн. Ак, мĕнле вăл,
Çынсем элеклеççĕ!*
Тăван Сечь та çавăн чух-мĕн**
Пĕтсе ларнă пулнă:
Хăшĕ Кубане çул тытнă,
Хăшĕсем — Дунай çине;
Сахалăшĕ юлнă
Ку хирге. Йĕреççĕ:
„Ачамăрсене вĕлертĕр,
Хамăра çиетĕр!"
Халь йĕрес, каллех те йĕрĕç —
Хуйхă иртсе кайнă;
Ĕмĕр-ĕмĕре куç хупрĕ,
Куç хупрĕ Украйна.

Унтанпа Украйнăра
Тырăсем шăтаççĕ;
Тупăсем вĕрме пăрахрĕç,
Çилсем шăхăраççĕ,
Хăвана аваççĕ,
Кăлкана авса вĕçеççĕ.
Йăлт шăпланчĕ. Ăна халĕ:
Тур ирĕкĕ, теççĕ.

Каç пулсассăн, вăрман витĕр,
Днепр хумхансан çеç,
Гайдамак асаттесем-çке
Пыраççĕ, юрлаççĕ:

„Галайдан кил-çурчĕ чаплă.
Хумхан тинĕс! Симĕс тинĕс!
Чаплă пулĕ Галайдашăн!"

*1841*

---

* Шевченко гайдамаксене вăрă-хурахсем вырăнне хунăшăн тарăхса çырать.

** Запорожская Сечь пĕтни (1775) Колиивщинăна аркатса тăкнипе пĕр вăхăтра пулман.

## *УМСĂМАХ*

Сăмах хыççăн—умсăмах; тен, унсăр та юратчĕ-и. Анчах та, пĕлетĕр-и: пичетленнисене мĕн чухлĕ курмарăм пулĕ—курасса куртăм та, сахал вуларăм,—кирек хăшин те умсăмахĕ пур, манăн—çук; хамăн Гайдамаксене пичетлемен пулсан, çав умсăмах кирлех те марччĕ-и, тен. Халĕ вĕсене кăларса яратăп пулсан, мĕн те пулин каласах пулать, çав çĕтĕк-çатăксенчен кулса, ман пирки: ав, епле вăл! ан теччĕр. Асаттесемпе аттесем, букварь пичетлесе кăларсан та, умсăмах çырнă—вĕсем пиртен ухмахрах пулнă-им çапла туса? Тĕрĕс, чăн та, тĕрĕс, ан ятлăр! Умсăмах кирлĕ. Мĕнле майлаштарас-ха ăна?—пĕлетĕр-и, унта суйи те ан пултăр, тĕрĕсси те курăнсах ан кайтăр, ытти умсăмахсене майлаштарса лартнă пекех пултăр тесен? Вĕлерсен те, пултараймастăп; ырлас килет,—аван мар, хурлас килмест. Пуçлар-ха кĕнеке пуçламăшĕнчен: суккăр кобзарь çине пăхма питĕ хаваслă—каччăсемпе пĕрле çатан хĕрринче ларать вăл, ĕлĕкхи çинчен хунă унăн юррине итлеме ырă. Казаксем ляхсемпе иккен кĕрешнĕ, итлеме лайăх... Çапах та калатăп: турра шĕкĕр, çав вăхăт иртсе кайнă, эпир пурте пĕр аннерен, эпир пурте славянсем, тетĕп. Чĕре ыратса каять, çапах та каласах пулать: ан тив хăйсен ашшĕсем аташса кайни çинчен вĕсен ачисемпе мăнукĕсем пĕлччĕр, ан тив вĕсем каллех тăшманĕсемпе тăванланччăр. Ан тив ылттăн пек ырашпа тулă хирĕсем—славян çĕрĕсем хушшипе, тинĕсрен тинĕсе тăсăлакан хирсем хушшипе, ĕмĕрне те чикĕсем çурса ан кайччăр. Украинăра 1768 çулта пулса иртнĕ ĕçсем çинчен ват çынсенчен мĕн илтнĕ, çапла каласа паратăп: вĕсем

ҫинчен ҫырнине, вӗсене тишкерсе тухнине вуламан,— ҫырман та пулӗ. Галайда чӑн та пулнӑ, ун ҫумне хамран та хушнӑ, Ольшанӑри ктитора вӗлерни — тӗрӗс: ӑна астӑвакансем халӗ те пур. Гонтӑпа Железняк, ҫав юнлӑ ӗҫсенче пулнӑ утамансем, эп ҫырса кӑтартнинче, тен, тӗрӗсех тухман-тӑр,— ӗнентерме пултараймастӑп. Ман асатте, турӑ сывлӑх патӑр ӑна, хӑй курман, анчах илтни ҫинчен юмах ҫапма тытӑнсан, малтанах ҫакна каласа хурать: ваттисем суяҫҫӗ пулсан, эпӗ те вӗсенчен юласшӑн мар.

*Т. Шевченко*

---

* * *

Вăштăр-вăштăр вĕрет çилĕ,
Хăмăшпа калаçнăн;
Шăвать кимĕ Дунай çийĕн,
Хум таппиваскатнăн.
Вăл шăвать, ăшне шыв тулнă—
Никам асăрхаймĕ;
Камах куртăр? Хуçи унăн
Леш тĕнчене кайнă.
Кимĕ çулĕ—кăвак тинĕс.
Тинĕс пĕр шавларĕ...
Хумĕ çапрĕ, ăçта кимĕ?—
Турпас та юлмарĕ.

Кимме тинĕсре пулмашкăн
Инçе мар, пĕлетĕн,
Тăлăха—юта тухмашкăн,
Шăп ютрах пĕтме те.
Ыр çынсем унпа хум евĕр
Выляса йăпанĕç;
Кӳренсен—калĕç тем те пĕр,
Кулĕç, курнăçланĕç;
Кайран ыйт эс, ăçта тăлăх?—
Пĕлмĕç, пачах манĕç...

*1841*

*Питĕр*

# ГАМАЛИЯ*

„Çилĕ те вĕрмерĕ, хумĕ те çапмарĕ...
Шăпăрт-ха Украйна.
Тĕрĕкпе вăрçмашкăн, пире хăтармашкăн
Те вăл манса кайнă?

Çеçенхирĕн çилĕ, Днепр тăрăх ан та
Вĕр эс тинĕс урлă!
Типтĕр-и куççулĕ, татăлтăр-и сăнчăр,
Ирттĕр-и çак хурлăх!

Çуйăх, аслă тинĕс, кăпăклан та ыткăн,
Кимĕсем выляччăр!
Казаксем васкавлăн харăс-харăс ишчĕр,
Çĕлĕкпе суллаччăр!

Пултăр, ан тив пултăр, пирĕншĕн ан килччĕр,
Украйнăран пулччăр!
Казаксен хăвачĕ халĕ те вĕрет-ши?—
Çавна куçсем курччăр!"

Скутарире юрă çапла юхнă хурлăн,
Ăна шăрантарнă казаксем салхуллăн.
Çумăр пек, куççулĕ шăпăр-шăпăртатнă,
Вара тулса çитнĕ Босфор та ахлатнă:
Халиччен курман вăл казак куççульне!

---

* Ку поэмăра Шевченко XVIII ĕмĕрте Гамалия утаман Турци çĕрĕ çине вăрçăпа кайнине кăтартса парать. Гамалия — шухăшласа кăларнă ят.

Васкаса çĕклерĕ йывăр хумсене,
Тулхăрчĕ, шутарчĕ анлă тинĕсе,
Тинĕсĕ ак тухрĕ çырантан сиксе,
Днепр пырне кĕчĕ, кĕчĕ шавласа,
Казаксем çинчен вăл пачĕ каласа.
Ахăлтатса кулайрĕ Днепр,
Çĕклерĕ кăпăклă хумне:
— Çеçенхирсем, илтетри эсĕр,
Кайса çăлар тăвансене!

— Илтетпĕр, Днепр, халь тухатпăр,
Кимсем çине кĕçех ларатпăр!—
Янрарĕ сасă таврара,
Шăранчĕ юрă та вара:

„Тĕрĕк хĕрĕн, тутар хĕрĕн
Çурчĕ питĕ капăр.
Эй, хумхан эс, тинĕс,
Эй, ташла та сик эс!
Хăтана каятпăр.

Тĕрĕк хĕрĕ пит пуян-мĕн,
Ун укçи нумай-мĕн.
Çаратма каймастпăр,
Туссене çăлатпăр,
Пиллесем, Украйна!

Тĕрĕк хĕрĕн çарĕ пур,
Çар пуçĕ те паттăр.
Сехĕрлентĕр-и тăшман,
Эпир каялла чакман,
Эпир хăрамастпăр!..“

Юр юрлаççĕ казаксем,
Тинĕс—айлăн-çийлĕн.
Малти кимĕпе ишсе
Пырать Гамалия.
— Гамалия, тинĕс шухă,
Карланки чараксăр!—
— Пултăрин! Çăтса яраймĕ!..
Ишрĕç хăрамасăр.

Райра—гаремра—Византия ҫыврать,
Скутари те шăпăрт, Босфор ҫеҫ кĕрлет,
Хум хыҫҫăн хумне ҫырана вăл ҫапать,
Вăран, ҫĕрĕм-шывăм! тесе тилĕрет.
— Ан кĕрле, Босфорăм, шăпăрт пултăр каҫĕ,
Кĕрлесен пусарăп хăйăрпа сапса.
Султана курмашкăн хăнасем васкаҫҫĕ,—
Тинĕсĕ каларĕ ҫирĕппĕн татса.
(Тинĕсĕ юратнă славянсен йăхне).
Вара чăрсăрланнă Босфор шăпăртланчĕ,
Тĕрĕк ҫĕрĕ лăпкăн тăсрĕ ыйхине,
Гаремра султан та тутлăн хăрлаттарчĕ.
Скутари тĕрми ҫеҫ выртмасть, лăпланмасть,
Казак асĕнчен-ҫке Украйна каймасть.
Турра пуҫҫапаҫҫĕ салху казаксем,
Украйна ҫĕрне-ҫке ҫапрĕҫĕ хумсем:
— Украина, хăтарсамччĕ;
Тыткăнран пире ҫăлсамччĕ,
Ан ҫĕрер эпир кунта,
Намăс пире пусмăрта!
Вăтанатпăр сан ҫине пăхмашкăн,
Сан юлашки судна тăмашкăн:
Чанкăртатаҫҫĕ сăнчăрсем,
Юнланнă алă-урасем!..—
„Тăшман ҫине! Хăюллăрах!“
Ҫĕкленчĕ сасă кĕрлесе.
Чул хўмене ал-хапăлах
Сырса илеҫҫĕ казаксем.
— Гамалия, кам ҫĕнет-ши?—
Скутари вăранчĕ.
— Касăр!—терĕ Гамалия,
Ыткăнчĕ, тапранчĕ...
Тупăпа пăшал кĕрлет,
Хăшкăлчĕ Скутари.
Парăнать казак ҫарне
Тĕрĕк янычарĕ.*

Гамалия тĕрĕке
Ҫапрĕ те салатрĕ,
Тĕрĕк ҫакнă сăнчăра

* Янычарсем тесе султана хўтĕлекен ҫалтаксене каланă,

Шатăрах вăл татрĕ.
— Тухăр, харсăр хăлатсем,
Çунатăра сарăр! —
Хĕпĕртерĕç казаксем,
Макăрма та хатĕр.
Сехĕрленчĕ тĕттĕм каç,
Хура тутăр карчĕ:
Казаксен хастарлăхне
Вăл хальччен курманччĕ.
Ан хăра эс, тĕттĕм каç,
Ĕçкĕ çеç тăватпăр.
Анчах мĕншĕн çутă çук,
Праçнике пăсатпăр?
Эпир вăрă йышĕ мар,
Сало çиме çутă пар!
Ялкăшрĕ пушар чĕлхи,
Кĕрр! хыпрĕ Скутари.
Ĕнтĕ шыври карапсем
Кĕлленме пуçларĕç,
Вăранайрĕ Тĕрĕк çĕрĕ,
Вут ăна вăратрĕ.
Вăл Скутарие раскать,
Шăлĕ шатăртатрĕ.
Урать, сикет, кăшкăрать,
Çитет ак тинĕс хĕррине,
Мĕнпур вăйран çапма тăрать —
Путать сасартăк юн ăшне.
Скутари тамăк пек çунать,
Чĕр юн шаркать урамсенче,
Хĕп-хĕрлĕ юн Босфор çинче.
Ырмаççĕ паттăр казаксем,
Вут кайăк пек çӳреç вĕсем:
Шух çил те иртеймест, юлать,
Кăвар та витеймест, чакать!
Ватаççĕ харсăррăн та хытăн
Тĕрмен тĕреклĕ хӳмине,
Çĕлĕкпеле йăтаççĕ ылтăн...
Пусарчĕç шух тĕрĕксене.
Ак пухăнаççĕ пĕр çĕре,
Пушарсенчен чĕлĕм чĕртеççĕ,

Лараççĕ кимĕсем çине,
Пĕр харăс кĕсменсем çĕклеççĕ.

Ыткăнаççĕ хăрамасăр,
Килти пек пыраççĕ,
Сечьри пек хаваслăн, харăс
Юрă шăрататççĕ:

„Парăнмасть тăшмансене
Паттăр Гамалия.
Вăл васкать тусĕсемпе
Шухă тинĕс çийĕн.
Тинĕс тăрăх çӳресе
Мухтава тухать вăл.
Тĕрĕкри тăвансене
Тыткăнран çăлать вăл.
Вăл Скутарие пĕрре
Тăвăл пек ăсанчĕ,
Сăнчăрланă казаксен
Çукчĕ ĕнтĕ шанчăк,
Гамалия кăшкăрчĕ:
— Пĕрле пурăнар-и!
Пĕр апат ĕçсе-çисе
Тăшманпа вăрçар-и!
Шурă-шурă чатăра
Бархăтпа карар-и“—
Запорожецсем васкавлăн
Тырă пуçтараççĕ,
Пысăк капансем лартса
Юрă шăрататççĕ:
„Мухтав сана, Гамалия!
Пĕтĕм Украина,
Пĕтĕм Украина
Сана ырă сунтăр!
Эс пире хăтартăн,
Киле таврăнтартăн,
Ĕмĕр вăрăм пултăр!“

Киле васкаççĕ казаксем,
Чи кайри кимĕ—Гамалийĕн.
Туссен йышне упрас тесе,

Сыхлать-хӳтлет вăл каçан-ирĕн.
Хăваламарĕ тĕрĕк çарĕ,
Галатти* çунасран хăрарĕ,
Иван Подкова** та хаяр,
Çапать те, чăтмалла та мар.
Çапла вĕсем таврăнаççĕ,
Ылттăнне хĕвел тăкать.
Кимĕ хыççăн шыв сикет,
Хумханса кăпăкланать.

Гамалия, çил вĕрет,
Вĕртĕр-и хытраххăн!
Тинĕс тăрăх казаксем
Кайрĕç хăвăртраххăн.

*1842*

*Питĕр*

---

* *Галатта*—Стамбул хулин пĕр кĕтесĕ. Ăна Кокашевич-Сагайдачный гетман çунтарса янă пулнă.

** *Иван Подкова*—XVI-мĕш ĕмĕрти казаксен утаманĕ. Вăл нумай походра пулнă, тĕрĕксене хирĕç çапăçнă.

## ТĂМАНА

Вĕтлĕхре пĕр çамрăк арăм
Çуратайрĕ ывăл.
Ачи самăр, хура куçлă,
Чиперкке те сывă.
Кипкепе ăна чĕркерĕ,
Тухăça пуççапрĕ:
„Ан пăрахчĕ, атте турă,
Пултăр пархатарĕ.
Хам ăна телей параймăп,
Эс телейлĕ туччĕ!
Уншăн ашшĕ, уншăн амăш
Эсĕ, турă, пулччĕ!"
Шуçăмпа çăл шывĕ кӳчĕ,
Чечек шыв* вĕретрĕ,
Шыва кӳртрĕ те сиктерчĕ,
Юрă кĕвĕлерĕ:

„Çывăр, пĕчĕк чунăм...
Вăрманта эп пултăм,
Куккука итлерĕм,
Питĕ хĕпĕртерĕм:
Шăп сана çĕр çул эп,
Ывăлăм, ачашлăп,
Питĕ пуян пулăп,
Пурçăнсем тумланăп.
Ӳсĕн, пысăкланăн,

---

* Украинăра ачасене барвинок ятлă чечек ярса вĕретнĕ шывра çăвас йăла пулнă, çавăн хыççăн вара ача телейне тупнă пулать.

Кăмăллăн, йĕркеллĕн.
Князь ачи пек пулăн—
Çÿлĕ те илемлĕ.
Тусусем йышланĕç,
Телейÿ йăл! кулĕ,
Юрлăн, хавасланăн,
Чупĕ пурнăç çулĕ.
Тинĕс тĕпне анăп,
Хĕр эп тупса парăп:
Çĕмĕрт куçлă пулĕ,
Купца хĕрĕ пулĕ!
Хĕрлĕ черевичкипе,
Симĕс пурçăн тумĕпе
Курницара çÿрĕ,
Çепĕççĕн калаçĕ,
Ырлăх çеç вăл кÿрĕ.
Ватăлмалăх кунăм
Çут телейлĕ пулĕ.
Тĕпелте эп ларăп,
Ăшă кăмăл тулĕ.

Чун пек савнă ывăл,
Çутă ĕмĕт çиттĕр.
Пĕтĕм Украинăра
Сан пекки тек çук-тăр.
Сан пекки пулман-ха
Пĕтĕм тĕнчере те.
Телейне те тупăн,
Курăн ырлăхне те!"

Ах, чăпар куккук, куккукăм,
Мĕншĕн аватăтăн!
Мĕншĕнех мĕскĕнсене эс
Çĕр çул халаллатăн?
Çакă çутă тĕнчере те
Раскаллă çын пур-и?
Куç хупсан анчах иртет-çке
Мĕскĕн çын хĕн-хурĕ.
Çичĕ тинĕс урлă
Çав телей пулинччĕ!—
Хăй ачишĕн амăш
Кайĕччĕ те илĕччĕ.

Çук телей унта та,
Пур çĕрте те хурлăх.
Çул çинче те, кил-çуртра та—
Хăть ăçта та пур вăл!

Ывăлне çитĕнтермешкĕн
Ырă ĕмĕт тытрĕ,
Анчах çавă хушăра-çке
Ашшĕ вилсе выртрĕ.
Тăрса юлчĕ тăлăх пуçăн
Çап-çамрăк хĕрарăм.
Ывăл пур, çапах та йывăр,
Мĕн тума пултарăн?
Пуç усса вăл кӳрше утрĕ,
Ăс ыйтасшăн пулчĕ.
Кӳршĕ лайăх шухăш пачĕ:
Тарçă пулма сунчĕ...
Йывăр пулчĕ пĕччен пурнăç,
Юхăнчĕ хĕрарăм,
Вара кĕрĕшрĕ тарçа вăл...
Хурлăхĕ каймарĕ.
Çĕрĕн-кунĕн асапланчĕ,
Хырçăпа тертленчĕ.
Виçĕ аллă пус парса вăл
Жупан çĕлеттерчĕ:
Ывăлĕ шкула çӳретĕр,
Çын пулма вĕрентĕр.

Мĕскĕн тăлăх арăм,
Çуклăхран тараймăн.
Çуклăх йĕплĕ куршанак пек:
Пире çыпăçать-çке!
Хăй те выçă, çĕтĕк-çатăк,
Хысранах чупать-çке!
Кирлĕ пултăр пуяна—
Ту çине шыв чупĕ,
Кирлĕ пултăр чухăна—
Çăл та куçне хупĕ!
Ачисем ӳсеç пуянăн
Улăхри хăва пек,
Тăлăх арăмăн пĕртен-пĕр,
Вăл та хыт-хура пек!

Акă амăш кĕтсе илчĕ,
Çитĕнчĕ-çке ывăл!
Ăсĕпе те катăк мар вăл,
Чиперкке те сывă.
Тин ак çитрĕ, çитрĕ пурнăç...
Пурнăç ырă мар-и!
Каччăшăн хĕрсем парне те
Хатĕрле пуçларĕç.
Пĕр пуян пики юратрĕ,
Çук, чуптăваймарĕ,
Тутăрне тыттарчĕ пурçăн,
Тутăр параймарĕ:
Тинĕс урлă, хирсем урлă
Хурлăх килсе тулчĕ...
Яшсене ак тытрĕç, тытрĕç,
Сăнчăрларĕç хучĕç.*
Хулана вара лавсем
Ерипен уттарчĕç.
Тăлăх арăм та йĕрсе
Куççульне юхтарчĕ.
    Канмалла пулсан, çĕрле
    Хурал тăрагатчĕç.
    Лавсем патне карчăка
    Çывăха ямастчĕç.
Приёма илсе кĕреççĕ,
Çÿссене касаççĕ.
Пуянсенĕн ачисем çеç
Юрăхсăр пулаççĕ.
Ку—чăлах ак, вăйсăр, халсăр,
Кун—кăкри виçесĕр,
Ку—асатлă, ку—укçаллă,
Кун—кил-çурт тĕрексĕр!
Эс—кирлĕ мар, эс—яра пар
Килелле, телейлĕн!
Тăлăх арăмăн—пĕр ывăл,
Вăл та шăп виçеллĕ.

Тĕнчене вăл тухса кайрĕ,
Кил-çуртне те манчĕ.

---

* Крепостла йĕрке вăхăтĕнче рекрутсене, ан тарччăр тесе, сăнчăрланă.

Еврейсем панче йӳн хакшăн
Хытă асапланчĕ.
Ыттисем ăна илмерĕç,
Ватă, терĕç, ватă.
Чун тытмалăх, юн тапмалăх
Пачĕç хытнă татăк.
Мăшкăл пурнăç! Куç ан куртăр!
Хăлхасем ан илтчĕр!
Пуянран чĕр шыв ыйтма та
Турă кăна сиртĕр!
Перер пусăн сыхласа вăл
Çур тенке çитерчĕ.
Ывăлĕ патне васкавлăн
Шурă хут вĕçтерчĕ.
Хĕпĕртерĕ тăлăх арăм,
Ыр хыпар вăл кĕтрĕ.
Çул та иртрĕ, виççĕ иртрĕ...
Çук хыпарĕ, çĕтрĕ!
Мĕн тăвас халь мĕскĕн çыннăн,
Мĕн, хутаç çакас-им?
Ял-ял тăрăх ун çӳрес-им?
Йытă вĕртерес-им?
Чăн та, кĕлмĕçе вăл тухрĕ,
Шанчăкĕ юлмарĕ.
Çатан тытнă хӳшĕре вăл
Пурăнма пуçларĕ.
Темиçе çул çапла иртрĕ.
Вăхăт шунă майăн
Курпунланчĕ, кăвакарчĕ—
Ниепле паллаймăн!
Кам паллатăр кĕлмĕçе?
Ларнă та ларать вăл.
Çĕрĕн-кунĕн инçете—
Çул çине пăхать вăл.
Çĕрĕн-кунĕн, ирĕн-каçăн
Ывăлне кĕтет-çке...
Савнă ывăл салтакран
Темшĕн килеймест-çке!..

Кăвак кӳлĕ хăвине
Каçхи çил лăштах авать.

Тăван амăш ывăлне
Кăлăхах кĕтсе ларать.
Кăвак кӳлĕ хăмăшне
Каçхи çил калаçтарать.
Сарă хĕрĕ савнине
Улăхра кĕтсе тăрать.
Каçхи çил вăшăлтатса
Хурлăхан тĕмне силлет.
Амăш пӳртре макăрать,
Сар хĕр ĕшнере йĕрет.
Сар хĕр йĕрсе илет те,
Юрă шăрататать.
Тăлăх арăмăн куççулĕ
Вут пек çунтарать.

Пурнăçа та вăл ылханчĕ,
Тарăхрĕ, кӳренчĕ.
Ах, телейсĕр ачасемĕр,
Аннĕре-çке терчĕ!
Икĕ типнĕ аллине вăл
Çӳлелле çĕклерĕ,
Шăпине вăрçса та супрĕ,
Таврăн, ачам, терĕ.
Хӳхлемешкĕн чарăнать те
Пăхкалать салхуллăн:
Курăнмасть çаплах та ывăл,
Вăл çаплах-çке çук ун!
Иртекен çынна чарать вăл:
„Каласам, тăванăм,
Çакă аслă çул çинче эс
Салтака курман-и?
Çук, курман теет çеç лешĕ,
Çав сăмах теприн те.
Аптăрарĕ мĕскĕн карчăк,
Такăнать чĕлхи те.
Аташма та вăл пуçларĕ.
Хыпрĕ чунĕ, хыпрĕ.
Чул ак илчĕ, ывăл терĕ,
Кăкăр çумне тытрĕ.
Кĕвĕ кĕвĕлерĕ,
Куççульпе тĕрлерĕ:

„Çĕлен чĕртрĕ кил-çурта,
Пăтă пиçрĕ хуранта,
Шыв хĕрне эп шур пир сартăм,
Шурă хурсене шуйхатрăм.
Улăха вĕçрĕç хурсем,
Тăватшарăн çĕкленсе.
Çӳлĕ ту çинче—хăлат,
Вăл хусах куçне сăхать.
Кăлăхах-мĕн каçхине
Хĕр кĕтет хăй каччине".

Çĕмрĕк чӳлмексем ват карчăк
Кунĕпе пуçтарчĕ.
Ывăла-çке кучченеçлĕх!—
Савăнчĕ, йăпанчĕ.
Каç пулсассăн, урама
Тухрĕ çара пуçăн.
Пит-куçне хăй чĕрмелет,
Çухăрать хăрушшăн.
Çилентерчĕ çынсене,
Хытă тарăхтарчĕ:
Ыйхăран-çке вăратать
Ăсран кайнă карчăк.
Ир пулсассăн ачасем
Тухрĕç, хăваларĕç,
Тăмана тесе ăна
Витлеме пуçларĕç.

*Майăн 6-мĕшĕ, 1844 ç.*

*Питĕр*

# ТĔЛĔК

## КОМЕДИ*

*Таса чăнлăха тĕнче курмасть те, пĕлмест те, çавăнпа вăл ăна йышăнмасть те.*
*Иоанн, 14-мĕш пай, 17-мĕш сăвă.*

Кашни çын хăйне раскаллă,
Хăйне май кун-çуллă:
Хăшĕ харсăр, хăшĕ кутăн,
Хăшĕ—выçă чунлă,
Шăтарас пек куçĕпе
Таврана пăхать вăл,
Çын мулне туртса илме
Ăллине тăсать вăл,—
Масара хăйпе пĕрле
Турттарса каясшăн.
Тепри хăйĕн хĕтăшне
Картпа çаратасшăн,
Çĕççине хăйрать тепри
Тăванне пусасшăн.
Тепри тата лăпкă пек,
Çылăха чухлать пек,
Ăнчах транк! сиксе ларма
Йăпшăнать кушак пек;
Эс кĕтместĕн те, сикет,
Чĕрнине туятăн:

---

* Çак поэмăна комеди тесе, Шевченко 1-мĕш Николай патшапа унăн пусмăрла саманинчен кулса тăрăхланине уйрăммăн палăртать.

Килйышна та кураймасăр
Тĕнчерен каятăн.
Тепри чиркӳсем лартать,
Ылттăн хĕрхенмесĕр,
Юратать вăл çĕршыва
Вĕçĕмсĕр, хисепсĕр:
Çĕршывра юн юлмиччен,
Ĕмĕччĕ хăй, сĕлĕх!
Аптăраççĕ айвансем,
Пӳлĕх, теççĕ, пӳлĕх!
Ирĕк турăра тесе,
Ан та сӳпĕлтетĕр,
Турă çук вăл пĕлĕтре,
Çук, çавна пĕлсемĕр!
Пусмăр асапне чăтса,
Рай çинчен шутлатăр.
Рай вăл çук леш тĕнчере,
Çук вăл, çук, ăнланăр!
Тар тăкатăр ахалех,
Пурте пĕлмелле-çке:
Керменте те, çĕр пӳртре те
Адам ачисем-çке!
Пурте, пурте!.. Хам эп кам?
Чимĕр-ха, калатăп:
Уяв кун та, ахаль кун та
Ĕçкĕпе супатăп.
Тĕлĕнетри? Тĕлĕнĕр!
Ан ятлăр, илтместĕп.
Хамăнне ĕçетĕп эп,
Çын юнне ĕçместĕп.
Пĕр kaçхине, ӳсĕрĕлсе,
Эп хупахран киле суллантăм.
Тăкăрлăкпа сĕнкĕлтетсе,
Эп хам сăмахсемпе йăпантăм.
Кил-çурт вара ман—чăн çăтмах:
Ачам макăрмасть,
Арăм ятламасть.
Хам çеç хуçа эп яланах,
Чĕрем те канлĕ,
Сакки те анлă,
Выртан та, ӳсĕрскер, çывран.

Ун чух хăть печчĕр тупăран—
Харлаттаран!

Эп выртрăм тĕлĕк тĕлленсе.
Çав тĕлĕке курас тесе,
Нихçан ĕçмен çын ĕçĕччĕ,
Хытти вун пуслăх сĕнĕччĕ,
Анчах
Вăл курăнмасть кашни çыннах.
Куратăп: тăмана вĕçет,
Вăрмансемпе тусем урлă,
Çарансемпе шывсем урлă,
Варсем урлă,
Лапăслатса иртет.
Ун хыççăн хам вĕçме пуçлатăп,
Çĕр çинелле алла суллатăп:
„Хирĕççе пурнан çĕршыв,
Сывă пул, каятăп!
Хамăн хуйхăм-суйхăма
Пĕлĕте пытарăп.
Тăлăх Украина,
Мĕскĕн çĕрĕм-шывăм,
Сан патна эп анăп,
Ярăп чĕрĕ сывлăм.
Анăп та калаçăпăр
Лăпкăн та салхуллăн,
Ырă канашсем те
Тытăпăр хăюллăн.
Хĕвел саралмасăр
Эпир уйрăлмастпăр,
Тăшмансем пĕтмесĕр
Каялла чакмастпăр.
Ан хурлан, тăванăм,
Халлĕхе сыв пул-ха,
Ачусем йышланччăр,
Пур-ха чăнлăх, пур-ха!“

Вĕçрĕмĕр те вĕçрĕмĕр,
Ир те çывăхарчĕ;
Шăпчăк, шуçăмпа тăрса,
Юрă шăрантарчĕ.

Ваштăр-ваштăр çил вĕрет,
Хир те симĕсленчĕ,
Кÿлĕ хумне чуптуса
Хăвасем силленчĕç.
Улма йывăç тайăлать,
Улмисем авăççĕ.
Çеçенхирти тирексем
Хурал пек тăраççĕ.
Ман çуралнă çĕрĕм-шывăм
Ешĕл те хитре-çке,
Пит-куçне вăл ирсерен
Сывлăмпа чÿхет-çке!
Çăвăнать вăл, савăнать вăл,
Кунĕ — сар хĕвеллĕ...
Вĕççĕр-хĕрсĕр çутçанталăк
Ытарми илемлĕ.
Çук, никам урăхлатаймĕ,
Тен, такам шутлать-и?
Ман çĕршывăм — манăн чунăм!
Кам сана кышлать-ши?
Мĕскĕн чунăм, ма йĕретĕн?
Мĕншĕн тертленетĕн?
Çыннăн хуйхине эс кунсерен куратăн,
Тен, пĕр çавăнпа-и тăтăш кулянатăн?
Пĕлĕте вĕçетĕп, сартăм çуната,
Пусмăр та, асап та, влаç та çук унта,
Кулă та, макру та илтĕнмест унта.
Чунăм, çавăнса пăх рай пек çĕр çине:
Пушăт пек сĕвеççĕ чухăнсен тирне, —
Атă валли кирлĕ князь ачисене...
Хырçăшăн тÿнккеççĕ вată карчăка,
Ывăлне ăсатрĕç, ячĕç салтака.
Кам ĕнтĕ хĕрхенĕ мĕскĕн тăлăха?
Ку кăна-и? — çÿçĕм вирелле тăрать! —
Ав, вилме пуçланă выç ача выртать,
Амăшĕ улпутăн тыррине вырать.

Ав тата... Ах, куçăм,
Канăç эс памастăн,
Шăтмаллаччĕ санăн,
Халь асапланмастăм.

Çамрăк хĕр утать ав,
Хăй ача чăрканă —
Амăш алă сулнă,
Кӳршисем те маннă.
Аскăн улпут ывăль
Теприне ларать халь,
Ку хĕре пăрахнă,
Теприне хăртать халь!

Пирĕн тертлĕ пурнăçа
Асăрхать-ши турă?
Асăрхать те, усăсăр,
Пулăшмасть вăл пурпĕр.
Ах, телейсĕр пуçăмçăм,
Хурлăх пире, хурлăх!
Вил шывне эппин ĕçер те —
Çăттăр пире шурлăх,
Чун ăсантăр пĕлĕте,
Евитлетĕр турă:
Нумайччен-и çĕр çинче
Çĕлен-калта урĕ?!
Ман сăввăм, ман тертĕм, çĕкле çунатна!
Пуçтар пĕр çĕре çĕр çинчи хĕн-хура,
Ачаран пĕлен эс хурапа шурра,
Пайтах пăчăртанă хыт алă сана.
Пуçтар та хĕн-хурăн тискер ушкăнне,
Салат эс чăл-паррăн тӳпе анлăшне!

Ан тив вĕре-çĕлен чашлатăр,
Вут-кăвар вĕçтертĕр,
Виле çумне виле пăрахтăр,
Уртăр, вĕчĕрхентĕр!
Эпĕ хам çав хушăра
Чĕреме пытарăп,
Çĕрĕн тепĕр хĕррине
Рай курма ăсанăп.

Каллех эп пĕлĕтре вĕçетĕп,
Каллех çĕре: сыв пул-ха, тетĕп.
Тăлăха юлать аннеçĕм,
Пӳрчĕ те ун тайлăк.

Кӳршелле пӑхатӑп та—
Йӳҫ куҫҫуль те саплӑк.

Вӗҫеп, вӗҫеп, шух ҫил касать,
Шур юр шап-шуррӑн курӑнать;
Ҫара вӑрман кашлать салхуллӑн,
Пӑхап, вӗҫӗ-хӗрри те ҫук ун*.
Анчах ниҫта та ҫын курмастӑп,
Пӗр йӗр те уҫланка выртман.
„Сыв пулӑр пурте, урӑхран—
Хӑлаҫланӑр, савӑнӑр—
Илтмӗп эпӗ, курмӑп.
Ӗмӗре мана пытарӗ
Сивӗ путлӑх-шурлӑх.
Ҫав ҫӗре тӗпчетӗр эсӗр
Юнпала ҫӑвасшӑн,
Ҫавӑнпа унччен пӑртакҫӑ
Эп выртса канасшӑн...“—
Чим, хӑрушӑ сасӑ илтрӗм.
Ҫӗр айне анатӑп,
Унта сӑнчӑрлӑ ҫынсенӗн
Асапне куратӑп.
— Мӗн чаватӑр, мӗн шыратӑр?
Мӗншӗн пит нумаййӑн?
Ҫук пуль ҫавӑ, асапран
Ниҫта хӑтӑлаймӑн.
Мӗншӗн хурлӑх курмалла-ши?
Ӑҫта ун сӑлтавӗ?
Кама эпӗ усал тунӑ?
Кам элек-ултавӗ
Тимӗрпе чуна тӑлларӗ,
Чӗрене ҫунтарчӗ,
Сӑввӑма та, шухӑша та
Вут пек чӗртсе ячӗ?
Мӗншӗн-ши мана лӑскаҫҫӗ?
Хам та чухлаймастӑп.
Вӗҫӗ пур-ши хӗн-асапӑн?
Пӗлместӗп, курмастӑп.
Ак сӑнчӑрсем чанкӑртатаҫҫӗ,

* Кунта Шевченко Ҫӗпӗр ҫинчен—патшасем халӑх ывӑлӗ-хӗрне ссылкӑна яракан вырӑн ҫинчен каласа парать.

Шăтăксенчен çĕкленчĕç вилнисем.
Мухтавлă чăнлăхшăн утаççĕ,
Утаççĕ юлашки суда вĕсем.
Вилнĕ çынсем мар-мĕн
Шăтăкран тухаççĕ,—
Сăнчăрланă çынсем ылттăн
Йатса кăлараççĕ,
— Хуçан çăткăн пырне лактăр! —
Теейсе калаççĕ.
Мĕншĕн тытса хупнă?
Мĕн сăлтавĕ тупнă?
Турă пĕлет ахăр?
Вăл ăçтан чухлатăр!
Акă вăр-хурах иртет,
Тимĕр—чăнкăр-чанкăр,
Куçĕпе çисе ярать,
Шăлĕ—шăтăр-шатăр,
Юлташне те çĕçĕпе
Тытса пусма хатĕр.
Акă—ирĕклĕх патши*.
Вăл пуриншĕн паллă;
Тимĕрленĕ, сăнчăрланă.
Кĕлеме çамкаллă!
Асапра та макăрмасть,
Шеллĕр-ха темест вăл.
Ырлăхшăн çунан чĕре
Ĕмĕрех сӳнмест вăл!
Анчах каласамччĕ, ĕçне кама шантăн?
Эс ăна юратрăн, эс ăна хускатрăн.
Пĕлтерсемччĕ, тусăм, пĕлтерсем тархасшăн!
Тен ăна эс ĕмĕр чĕрӳнте тытасшăн?
Ан пытар ăна эс, тухтăр тĕнчене,
Халăх хушшинче вăл сартăр чечекне!

Çитĕ, çитĕ, кунта сивĕ—
Шухăша вăратрĕ сивĕ...

Каллех вĕçетĕп. Çĕр хура.
Ман чун-чĕреçĕм ыйхăра.

* Малалла ку вырăнта Шевченко ссылкăна янă декабристсен сăн-сăпатне пĕтĕçтерсе кăтартса парать.

Пăхатăп: çул, суртсем-йĕрсем,
Çĕршер чиркӳллĕ хуласем,
Хулисенче — салтак, салтак,
Атти-пушмакĕ — шак та шак!..
Пурте тимлĕ, пурте самăр,
Хĕç-пăшалĕ йăлтăр-ялтăр,
Хайсем сăнчăрлă... Пăхатăп,
Çĕнĕрен хула куратăп.
Шăтăкри пек, айлăмра,
Вăл ларать лачакара.*
Калама çук мăн пулас —
Вĕçĕ-хĕрĕ курăнмасть.
Тĕрĕкĕн-ши?
Нимĕçĕн-ши?
Элле вырăсăнах-ши?
Чиркӳсем те керменсем,
Мăн хырăмлă улпутсем,
Курăнмаç мунча пӳртсем.

Каç та пулчĕ. Çутăсем
Ялл!... хыпрĕç пĕр харăс.
Çыннисем урра! тесе
Кăшкăрма пуçларĕç.
— Шăпăрт пулăр, ухмахсем!
Мĕн, çавар каратăр? —
Хохол** темĕн, халиччен
Парадсем курман-тăр!
Хай*** паян курса çӳрет,
Кăмăлĕ çĕкленнĕ.
— Хăшĕ-ха вара патши?
— Ав унăн керменĕ...
Халăха сирсе утатăп,
Паллакан çын тупрăм.
Çут тӳмеллĕ хăй. Тĕпчет:
— Ăçтан сиксе тухрăн?
— Украинăран. — Ара
Кунти пек чухлатним?
— Чухлаканччĕ пăртакçах! —

* Поэт çапла патша столицине—Питĕр хулине кăтартса парать.
** Хохол тесе украинецсене мăшкăлланă.
*** Хăй—I-мĕш Николай патша.

Эп ăна пат! татрăм.
— Ан култар-ха, апăрша!
Эп кунта ĕçлетĕп.
Килĕшетни, ак халех
Кермене кĕртетĕп.
Анчах эсĕ кăшт сапла,
Аллă пус çеç хурччĕ.
— Парăп эп сана укçа,
Хура чернил хурчĕ!—
Курăнми пулса каллех
Малалла иртетĕп,
Ытти çынсемпе пĕрле
Кермене кĕретĕп.
Ак иккен вăл рай ăçта!
Пĕтĕм харам пырăн,
Ылттăн пек те çăлтăр пек,
Ялкăшать тумтирĕ.
Акă Хăй утса кĕрет,
Çӳлĕ те çиллеслĕ.
Чăнкă кăкăрĕ çинче
Çĕр тĕрлĕ хĕрес-тĕр!
Юнашар майри утать:
Çип-çинçе уралл ă,
Каснă-лартнă тип кăмпа,
Пичĕсем шатраллă.
Çитменне тата пĕрмай
Чĕтренет-мĕн пуçĕ.
„Пике турă çак иккен!
Чирлĕ-çке вăл, турçăм!
Сăвăçсем* апла мана
Питĕ хытă лартнă.
Эп ăна, айван пуçпа,
Турă пек шутлаттăм.
Ах ухмах, тăп-тăр ухмах,
Суеçсене шантăм.
Авă епле тыттараççĕ!
Халь ĕнтĕ ăнлантăм".
Икĕ турă хыçĕнчен

* Кунта Шевченко патшапа унăн килйышне мухтаса çыракан сăвăçсене тĕксе илет.

Улпутсем утаççĕ.
Çурăлас пек хăйсем самăр,
Сысна пек пашкаççĕ.
Хăйсем патша çумнерех
Пурте çывхарасшăн,
Патшан кăмăлĕ пулсан—
Питрен çуптарасшăн,
Çупмасассăн, хăть каклиш
Кăтартса хăвартăр,
Каклиш мар-тăк, çур каклиш
Хĕстерсе кăтарттăр.
Пурте ларчĕç пухăнса,
Хытрĕçĕ юпа пек.
Патши çеç шавлакалать,
Арăмĕ, тăрна пек,
Тĕпĕр-тĕпĕр сикрĕ,
Унăн-кунăн иртрĕ.
Пайтахчен çак улпутсем
Çирĕç, апатланчĕç.
Тăмана пек мăнланса
Кулчĕç, пăшăлтатрĕç.
Çĕршыва та асăнчĕç,
Çĕнĕ тӳмене те,
Кунĕн-çĕрĕн пулакан
Салтак муштрине те.
Акă патша арăмĕ
Кресло çине ларчĕ,
Патши пĕр асли патне
Çилĕпе çывхарчĕ,
Çывхарчĕ те шарт! кăна
Питĕнчен тыттарчĕ.
Ним те ку чĕнмерĕ, хăй
Кĕçĕннине çапрĕ,
Кĕçĕнни пĕчĕккине
Хырăмĕнчен тапрĕ,
Пĕчĕкки пĕчĕкрехне
Янахран шăртларĕ,
Ку вара вĕт-шакăра
Тылă пек тылларĕ,
Вĕт-шакăрĕ урама
Çил пек тухса чупрĕ.

Унти ырă халăха
Тÿнккерĕ те çапрĕ...
Халăх кăшкăрса ярать:
— Патша ĕçкĕре ларать,
Урра-урра-урра-а-а!

Чăтаймарăм, ахăлтатрăм,
Эп камит курманччĕ!
Ир енне кăна хула
Çывăрчĕ, шăпланчĕ.
Анчах макăрнă сассем
Пурпĕр лăпланмарĕç,
Патшана ырă сунса
Турра та пуççапрĕç.
Утрăм тепĕр хулана,
Çутă унăн касĕ.
Лăпкă шывăн хĕрринче
Керменсем ларассĕ.
Икĕ сĕвек çырана
Кăвак чул тыттарнă.
Лачакаллă вырăнта
Хула пулса ларнă!
Эпĕ тăтăм сăнаса,
Тĕлĕнтĕм, шутларăм:
„Халăх юнĕ, халăх тарĕ!“—
Тесе çеç каларăм.
Лăпкă шывăн леш енче
Çÿлĕ тăрлă крепость.
Шпиль* çине пăхса илсен,
Алăсем чĕтреççĕ.
Ун çинче сехет çапать...
Çаврăнса пăхатăп:
Таптаса каясшăн пек
Урхамах** куратăп.
Юланучĕ сăхманпа,

* Поэт Петропавловски крепость çинчен калать. Унта революционерсене хупса усранă.

** Питĕрте Сенат площадĕнче I-мĕш Петр патшана асăнса лартнă палăк. Ун çине „Пĕрремĕш Петр патшана Иккĕмĕш Екатеринăран“ тесе çырса хунă.

Çĕлĕксĕр, йĕнерсĕр.
Çулçă витнĕ çамкине,
Çӳçĕсем йĕркесĕр.
Урхамахĕ çырма урлă
Халь сиксе каçасшăн.
Ку хăй – тăснă аллине,
Тĕнчене тытасшăн.
Мĕнле çын вăл çав тĕрлех?
Çырнине вулатăп:
„Пĕрремĕшне—Иккĕмĕш“.—
Халĕ ăнланатăп.
Пирĕн Украинăна
Петĕр халтан ячĕ,
Кĕтерне патша вара
Йăлтах юхăнтарчĕ.
Тискер çĕлен-калтасем,
Кӳпĕнтĕр, вăрларăр!
Леш тĕнчене хăвăрпа
Мĕскер илсе каймăр?
Тăван Украинăшăн
Питĕ те кулянтăм!
Унăн хурлă кунĕшĕн
Питĕ салхуллантăм!
Çакă самантра пĕри*
Юррине хускатрĕ,
Татăлас пек сасăпа
Куççульпе шăратрĕ:
„Пĕчĕк Глухов** хулинчен
Казаксем хускалчĕç,
Çĕр чавмашкăн вĕсене
Кĕреçе тыттарчĕç.
Эпĕ гетман пулнипе
Патша çырлахмарĕ,
Вăл мана та хусăкпа

* Кунта поэт Полуботок гетман çинчен калать. Вăл I-мĕш Петр приказĕ тăрăх Украина казакĕсене Питĕр хулине тунă çĕрте ĕçлеттернĕ. Патшана хирĕç тăнăшăн ăна Петропавловски крепоçе хупса лартнă, вăл çавăнта 1724 çулта вилнĕ.

** *Глухов*—XVIII ĕмĕрте Украина гетманĕсен тĕп хули пулса тăнă. Глухова пăхăнса тăракан Украина çĕрĕ Российăпа 1654 çулта пĕрлешнĕ.

Ҫӗр чавма каларӗ.
Сан хура ӗҫне, патша,
Турӑ та курмасть-шим?
Сан ылханлӑ кунҫулна
Мӗншӗн ҫӗр ҫӑтмасть-ши?
Казаксен пулккисене
Шурлӑха путартӑн,
Эс вӗсен шӑмми ҫинче
Хула туса лартрӑн.
Эс мана та тӗрмӳнте
Выҫӑ лартса ҫӗртрӗн—
Ирӗк гетманӑн юнне
Сӗлӗх евӗр ӗҫрӗн.
Эп сана, ылханлӑ чун,
Ӗмӗрне каҫармӑп,
Сана турӑ ман ҫумма
Сӑнчӑрпа ӑкарнӑ.
Киев ҫийӗн вӗл! вӗҫме
Йывӑр мана, йывӑр!
Пурӑнать-ши, чунӗ пур-ши
Савнӑ Украинӑн?
Ҫунтарман-ши вут тӗртсе?
Днепр-шыв типмен-ши?
Паттӑрсен тӑприсене
Тӑшмансем ишмен-ши?
Вӗҫӗттӗм тӑван ҫӗре,
Пиллемест ҫав турӑ.
Хӗрхенсемччӗ, пӳлӗхҫӗ,
Ирттӗр ун хӗн-хурӗ!"

Ҫакӑнпа шӑпланчӗ юрӑ.
Пӗлӗт кӑвакарчӗ.
Пӗлӗт хушшине темскер
Ҫухӑрса хӑпарчӗ.
Пӗлӗт мар-мӗн, ушкӑн кайӑк
Тӳпене хӑпарчӗ,
Йӗс патша тавра вӗҫсе
Варкӑшрӗ, юнарӗ:
„Эс пире те, юн патши,
Тытрӑн, сӑнчӑрларӑн.
Юлашки судра, ҫӗлен,

Мĕн каласа парăн?
Украина çамракне
Пинлесе ăсатрăн,
Выçăпа та чир-чĕрпе
Хĕн-асап кăтартрăн.
Пусрăн эсĕ вĕсене,
Тирсене сӳтергĕн,
Пиçĕ шăнăрĕсемпе
Ылттăн тум çĕлетрĕн.
Халь мухтан хулупала,
Кермексем лараççĕ!
Вилнисенĕн чунĕсем
Сана ылханаççĕ!"

Кайăксем вĕçсе çухалчĕç...
Тухăç йăлтăртатрĕ.
Эпĕ тăтăм вырăнтах,
Чунăм сăркăлтатрĕ.
Чухăнсем кĕштĕртетсе
Таçталла васкарĕç.
Кĕтессенче салтаксем
Уткала пуçларĕç.
Ула-чăла курăнса
Иртрĕ хĕрупраç та.
Килте мар иккен вĕсем,
Ют çĕрте çĕр каçнă:
Амăшĕ хушать хĕрне
Çăкăр шырама хăйне.
Эпĕ тăтăм шутласа,
Мĕскĕншĕн кулянтăм:
„Питĕ йывăр çынсене
Çăкăрлăх тупма та!"
Акă тухрĕç тиексем,
Сената иртеççĕ.
Вĕсем, хут çырса ларса,
Çын тирне сĕвеççĕ.
Хамăр енчисем пăт-пат
Курăнса каяççĕ,
Улпутла хăлаçланса
Ашшĕне ятлаççĕ:
„Вĕрентмен çав нимĕçле,

Нимĕç чĕлхи кирлĕ!
Чернилтах шӳме тивет
Халĕ ака пирĕн".
Вăтанасчĕ, сĕлĕхсем,
Аçăр-аннĕр чăтнă,
Вырăсла пĕлччĕр тесе,
Ĕнине те сутнă!
Украина, сан вĕсем,
Санăн ачусем-çке,
Чернилпа сапса варланă
Çамрăк çеçкесем-çке!
Макăр халĕ таталса,
Тăлăх эсĕ, тăлăх!
Ачусем нимĕçленсе
Çухалаççĕ кăлăх!

Патша çуртне тепĕр хут
Эп кайса пăхам-ха:
Мĕн тăваççĕ халь унта,
Сăнаса тăрам-ха.
Пичĕке пек улпутсем
Пынă, кĕпĕрленнĕ,
Выçă куççемпе хăйсем
Алăка тĕлленĕ.
Пĕр-ик самант иртрĕ-ши —
Уçăлчĕ шур алăк,
Курăнса каять упа*,
Утти тăйлăк-тайлăк.
Пичĕ-куçĕ кăвакарнă,
Шыçăннă, тăртаннă.
Мухмăрпа аптранăскер,
Питĕ хаярланнă.
Ахăрчĕ те, улпутсем
Сирĕлчĕç, тасалчĕç;
Таварчĕ те шур куçне,
Юлнисем çухалчĕç;
Вăтам улпутсем çине
Çухăрчĕ вăл урнăн,
Кĕçĕн улпутсем çине...

* Упа тесе Шевченко патшана калать.

Пӗр чунне те курмӑн!
Йышлӑ тарҫӑ-тӗрҫинне
Сехрине хӑпартрӗ,
Салтаксем патне пырса
Янахсем салатрӗ...
Акӑ мыскара тесе,
Тӗлӗнсе тӑратӑп.
— Мӗн пулать-ши малалла?—
Хам ӑшра шутлатӑп.
Йӑвашланчӗ хай упа,
Лӑштах пуҫне усрӗ.
Ун тискер ҫилли вара
Ӑҫта кайса тусрӗ?
Шӑп та шӑй кушак ҫури!
Ахӑл! кулса ятӑм,
Илтрӗ те вӑл—ҫухӑрчӗ,
Хам та эп... вӑрантӑм.
Ҫакӑн пек усал тӗлӗк
Камӑн пуҫне ҫаврӗ—
Ӳсӗрпе ухмаха ҫеҫ
Курӑнма пултарӗ!
Ан тӗлӗнӗр, тӑвансем,
Кӳренсе ан ятлӑр,
Тӗлӗкӗм ҫинчен анчах
Каласа кӑтартрӑм.

*Июлӗн 8-мӗшӗ, 1844 ҫ.*

*Питӗр*

* * *

Вырсарникун эп тухмарăм,
Пушă вăхăт тупаймарăм:
Пурçăн çип алран каймарĕ,
Тĕр тĕрлерĕм те юрларăм:

„Ман тĕрленĕ тутăрăм
Савнă тусшăн пултăр-и!
Мана тусăм тав тăвать,
Хăй хĕрӳллĕн чуптăвать.
Тутăрăмçăм ман,
Çут эрешлĕ ман!
Ир-ирех ялйышăм куртăр,
Тăлăха пулать çак тутăр—
Вăл илемлĕ ман,
Çут эрешлĕ ман!
Çӳçĕме эп çивĕтлетĕп,
Тусăмпа пĕрле çӳретĕп...
Чунăм савăнать,
Куçăм йăл кулать!“

Хĕр тĕрлерĕ те юрларĕ,
Кантăкран текех сăнарĕ:
Вăкăрсем хăçан-ши çитĕç,
Вĕсемпе пĕрле лавçи те?

Вăл килет-çке Лиман урлă,
Лав çинче ют тупра-пурлăх,
Вăкăрсем пуянăн-мурăн,
Хăвалать, юрлать вăл юрă:

„Эх, шăпам, раскалăм!
Хамăн мар, мĕн калăн,
Ют çын аллинче эс,
Инçе çул çинче эс.
Эп ĕçсе çӳреп-им?
Çынна хĕн кӳреп-им?
Сан патна пымашкăн,
Çул-йĕрсем тупмашкăн
Манăн вăй сахал-им,
Е эпĕ кахал-им?
Е сана парне кӳместĕп,
Саншăн çӳреместĕп?
Парнем пултăр, тусăм,
Măшăр хăмăр куçăм.
Çамрăк вăйăм—ирĕк çилччĕ,
Пуян сутăн илчĕ.
Хам çук чух, тен, савнине те
Урăха вăл пачĕ...
Эх, шăпаçăм, ӳкĕтлетĕп:
Мĕн тăвас?—калаччĕ!"

Çеçенхирпе пынăçемĕн
Мĕскĕн йĕрсе ячĕ...
Вилтăпри çинче пит хыттăн
Тăмана ӳхлетрĕ,
Чумаксем хурланса илчĕç,
Лавсем кĕмсĕртетрĕç.
„Утаман, парсамччĕ ирĕк
Кунта чарăнмашкăн.
Юлташа илсе каясчĕ
Яла, кĕлтумашкăн."
Акă, çылăх каçарттарчĕç,
Юмăça та чĕнчĕç,—
Ахалех... усси пулмарĕ,
Малалла уттарчĕç.
Тӳсме çук пит йывăр ĕç-ши
Ун вăйне пĕтерчĕ?
Çывăрмасăр кулянни-ши
Уран ӳкерчĕ?
Çамрăка çынсем-ши суннă
Вырăнтан сикмесĕр

Лав ҫинче выртса килмешкĕн
Хăй килне чĕлхесĕр?
Савнипе кăштах пулин те
Курнăҫасчĕ, тенĕ.
Пулаймарĕ-ҫке. Пытарчĕҫ,
Кам ăна хĕрхенĕ?

Ушкăнпа ăна чысларĕҫ,
Йывăҫ хĕрес лартрĕҫ,
Вара утрĕҫ... Типнĕ ҫулҫă
Шывпа юхнăн кайрĕ,
Тĕнчерен казак ҫухалчĕ,
Ним хăвараймарĕ...
Халь ăҫта-ши шукăль тутăр—
Хĕр тĕрленĕ тĕрĕ?
Халь ăҫта-ши ҫав хавасльă
Чечек евĕр хĕрĕ?
Вилтăпри ҫинче шур тутăр
Вĕл вĕҫет илемлĕн,
Хĕр ларать-ҫке монастырĕн
Пӳртĕнче кичемлĕн.

*1844 ҫ. октябрĕн 18*

*Питĕр*

* * *

Мана ма пит йывăр? Чунăм ма çунать-ши?
Ма чĕрем ача пек макăрать-йĕрет?
Ах, чĕремçĕм, çитĕ, чарăн-ха тархасшăн!
Мĕн сана кышлать-ши, мĕн шиклентерет?
Тен, ĕçес-çиесшĕн е çыврас килет-тĕр?
Куçна хуп, лăплан эс, ĕмĕре шăплан!..
Каснă та кăларнă... Ан тив, эсреллентĕр
Усал çын, алхастăр... Хуп, чĕрем, куçна!..

*1844 ç. ноябрĕн 13*

*Питĕр*

## Н. В. ГОГОЛЕ

Ак шухăшăмсем чĕрене хупăрларĕç:
Пĕри ярса тытрĕ, тепри пăчăртарĕ,
А виççĕмĕшĕ ерипен макăрать-мĕн
Чĕрем варринчех — турă хăй те кураймĕ!

Эп кама ăна кăтартăп?
Ăçта ун тăванĕ?
Аслă сăмаха кам халĕ
Кăмăллĕ, ăнланĕ?
Пурте суккăр та хăлхасăр,
Сăнчăрланнă, тусăм...
Эс кулатăн, эп йĕретĕп,
Манăн аслă тусăм!
Куççульпе мĕскер ÿстерĕн?
Армути те эрĕм!..
Ирĕк тупă сассине тек
Илтмĕ тăван çерĕм.
Ирĕк кунлă Украинăн
Чапĕшĕн, ыр ятшăн
Савнă ывăлне халь касмĕ
Хĕçпеле ват ашшĕ.
Вăл ăна ÿстерсе парĕ
Патшана: „Тархасшăн
Тăлăх арăм парнине те
Йышăн юн тăкмашкăн.“
Ывăлне патша тĕп тăвĕ
Тата нимĕç-йытă...
Пултăр!.. Эпĕр — йĕрĕпĕр те,
Кулăпăр та хытă.

*1844 ç. декабрĕн 30*
*Питĕр*

* * *

Ан ӑмсанччӗ пуяна эс:
Ҫын чунне пӗлмест вӑл —
Чыспала юратӑва та
Укҫалла илет вӑл.
Ан ӑмсанччӗ вӑйлине те:
Терт-асап ҫеҫ тупӑн;
Чаплине те ан ӑмсан эс,—
Вӑл пӗлет-ҫке, унӑн
Чапне ҫеҫ ҫынсем саваҫҫӗ,
Хӑйне мар; ҫынсемшӗн
Куҫҫульпе туяннӑ чапӗ
Пахарах-мӗн, темшӗн.
Ҫамрӑксем ак пӗрлешеҫҫӗ,
Юратса, йӗркеллӗ,
Рай ку тейӗн; тинкереп те —
Пурӑнӑҫ инкеклӗ...

Никама та ӑмсанмасӑр,
Витӗр тинкереп те,
Ҫӗр ҫинче ҫӑтмах курмастӑп,
Ҫук вӑл пӗлӗтре те!

*1844 ç. октябрӗн 4*

*Миргород*

* * *

Пуяна качча ан ил эс,
Килтен тухса тарăн.
Чухăна качча ан ил эс,
Ĕмĕр тар юхтарăн.
Ирĕке чунтан юрат та
Пурăн эс хусаххăн:
Çарамас юлсан та, çӳрĕн
Ирĕк çил хăраххăн.
Юратса сана йăпатмĕç,
Ни ыйтса тĕпчемĕç:
Хăш тĕлтен мĕн ыратать сан,
Ăш çунать-и, темĕç.
Мăшăрпа мĕнле пулсан та,
Тулать, теççĕ, кăмăл,
Ан ĕнен эс, — пĕччене х-çке
Макăрмашкăн çăмăл.

*1845 ç. октябрĕн 4.*
*Миргород*

# КАВКАЗ

## *Манăн яланах таса кăмăллă тусăма Яков де Бальмена**

*Кам та пулин манăн пуçăма шыв, куçăмсене куççулĕ парсассăн, вĕлернисемшĕн эпĕ кунĕн те çĕрĕн йĕрĕттĕм.*

Иереми, 9-мĕш сыпăк,
1-мĕш сăвă.

Сăрт-тусем—тем чухлĕ, пĕлĕтпе пĕркеннĕ,
Хурлăхпа хуралнă, юнпала пĕвеннĕ.

Прометей ĕмĕрĕнчен-мĕн
Ăмăрткайăк-ирсĕр
Тăрмалать кунта этемĕн
Чĕрине шеллевсĕр;
Тăрмалать те ĕçеймест хăй
Чĕр юна — вĕри вăл,—
Çав-çавах, кула-кулах-и
Пуранан чĕре вăл.
Чунăмăр та вилмĕ пирĕн,
Чакмасть ун хавалĕ.
Тинĕсĕн тĕпне епле-ха
Çăткăнскер сухалĕ?
Çук, çав вилĕмсĕр чуна вăл
Ĕмĕр сăнчăрлаймĕ,
Çĕнтереймĕ сăмаха вăл,
Турра та хурлаймĕ.

---

* *Де Бальмен,* Яков Петрович (1813—1845)—художник, Шевченкон тусĕ, Кавказра вăрçăра вилнĕ.

Санпа вăрçаймăпăр, тем пулĕ!
Эс ху пĕлен хăвăн ĕçне!
Шăпамăр пирĕн—йӳç куççулĕ,
Юнпа çăр пурнăç çакăрне,
Тарна та хуш, хуш куççульне.
Тăшман кулать пиртен,—кулмасăр,
Чăнлăх çыврать-çке вăранмасăр.

Эх, хăçан-ши вăл вăранĕ?
Туррăмăр-мăнтарăн,
Эс канма хăçан-ши выртăн,
Пурăнма май парăн?
Ĕненетпĕр: тем тума та
Пултаратăн эсĕ.
Тăрĕ чăнлăх, ирĕк пулĕ
Çав вăхăт çитсессĕн,
Аслă турă, ĕмĕр-ĕмĕр
Мухтĕ сана халăх.
Халлĕхе... юхаççĕ юнлă
Çырмасем çеç халĕ!..

Сăрт-тусем—тем чухлĕ, пĕлĕтпе пĕркеннĕ,
Хурлăхпа хуралнă, юнпала пĕвеннĕ.

Унта эпир, тур хушнипе,
Пур выçă-çарамассенне те
Мĕн юлнине йăлт—ирĕкне те—
Туртса-çке илнĕ пĕтĕмпех,
Халь ашкăнатпăр... Шăмшакне
Унта мĕн чуль салтак-ши хучĕ!
Юнпа куççуль сахал-и пулчĕ!
Пур тĕнчери патшасене
Ĕçме те вăл çитетчĕ пулĕ,
Пур князьсене те путарма
Çитетчĕ тăлăхсен куççулĕ,—
Миçе пике, канма выртуçăн,
Унпа минтер-ши йĕпетмен!
Амăшĕсен мĕнле вăл йӳçĕ,
Епле вăл юнлă—ашшĕсен!
Çырмасем çеç-и? Тинĕс! Ав,
Çулăмланса выртать... Мухтав

Мĕнпур йытта, хуçисене,
Пирĕн патша-аттесене —
Мухтав!
Шап-шурă пăрлă тусене те
Чыс та мухтав!
Турă манман паттăрсене те
Ĕмĕр мухтав!
Эсир — кĕрешĕр — çĕнтеретĕр
Тур пулăшнипе!
Эсир мухтавлă, чыслă, паттăр,
Чăнлăх сирĕнпе!

Чурек* е сакля — эс йăлтах
Ыйтмасăрах хăвна илетĕн,
Çапла тунишĕн сăнчăрта
Сана тытмаççĕ ĕмĕрне те.
Пирте-и! Турă çырнине
Эпир пĕлетпĕр вуламашкăн...
Казармăна кĕр, тĕрмене,
Престол çине ан ман пăхмашкăн, —
Ылттăн тумпа эпир ăçта та,
Çав вăхăтрах çарапакка та.
Пиртен вĕренĕр! Хăвăртах
Çăкăр-тăвар хакне ăнланăр,
Çапла эпир — христиансем;
Пур пирĕн чиркӳсем, шкулсем,
Хăй турă пирĕнпе — ан манăр!
Саклĕсене çеç кураймастпăр:
Эпир паман ăна сире,
Мĕне вăл кирлĕ? Чухлаймастпăр.
Пĕр пус та тӳлемесĕрех
Хĕвелпеле те ăшăнатăр, —
Эпир туса паман кăна та.
Анчах вара чурекĕре,
Йытта хыптарнă пек, калле
Сире памастпăр пурпĕрех, —
Илетпĕр!.. Пире çитĕ ку та —

* Тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ пашалу.

Тӗрӗксем мар, христиансем,
Питӗрпурта эпир-ҫке тутӑ
Сахалпалах та!.. Итлӗрсем:
Пирӗнпеле пулас-тӑк туслӑ,
Эсир тем те пӗлмешкӗн пуҫлӑр,—
Ҫӗршывӑмӑр епле пит ирӗк,
Пӗр Ҫӗпӗр ҫеҫ мӗн анлӑш пирӗн!..
Тӗрме мӗн чухлӗ! Салтаксем!
Молдавансем-и е финнсем —
Сӑмах чӗнмеҫҫӗ хайсемле:
Вӑт ырӑ вӗсене епле!
Пирте манах вулать-тек библи,
Пурне те вӗрентет вӑл иплӗн:
Тахҫан кӗтӳҫӗ шӑпине
Патша хӑй те тӳссе ирттернӗ,
Унтан хӑй тусӗн арӑмне
Юратнӑ та тусне вӗлернӗ.
Рая вӑл лекнӗ.* Ак епле
Пирӗн патра рая кӗреҫҫӗ!
Эсир ытла та тӗттӗмре ҫав,
Сире таса хӗреспеле
Ҫутта кӑларасах пулать!
Эпир вӗрентӗпӗр сире!..
　　Вӑрла, ҫарат,
　　Вара тӳрех
Мӗнпур тӑван-тусупалан
　　Рая каян!
Мӗскер тума эпир пӗлместпӗр?—
Ҫӑлтӑр шутлатпӑр, тыр акатпӑр,
Французсене пӗрмай ятлатпӑр.
Сутса яратпӑр ҫынсене,
Картла та выляса яратпӑр —
Христос тӗнне кӗнисенех,
Анчах та... **крепостнойсене**.
Эпир хаяр улпут-мӗн мар!
Вӑрланипе суту тумастпӑр,
Законлӑха пӗрре пӑсмастпӑр.

---

* Библире каланӑ тӑрӑх, Давид патша ҫамрӑк чух сысна кӗтӳҫи пулнӑ; патшана ларсан, вӑл хӑйӗн ҫар пуҫӗн арӑмне туртса илнӗ те хуралне вилме янӑ пулать.

Апостол хушнӑ пек эсир
Тӑвана саватӑр,—
Турӑ ылханать сире —
Ултавпа пурнатӑр!
Чунӗ мар — тӑванӑртан
Тирӗ сире кирлӗ.
Законран чӑрмав курман —
Ҫарататӑр вирлӗ:
Хӗршӗн—капӑр тум илмелӗх,
Ҫут пушмаклӑх, хӗм кӗпелӗх,
Ывӑлсемшӗн — пурӑнмалӑх;
Хаклӑ сулӑсем — юратнӑ
Арӑмсемшӗн туянмалӑх:
Хӑвӑра мӗскер тума—
Пӗлтерместӗр арӑма.

Кам шӑпишӗн-ши, кама
Ҫӑмӑллӑх парасшӑн
Пӑталанӑ Христоса?
Ирӗклӗ сӑмахшӑн!..
Тен, ҫынран мӑшкӑлласси
Ӗмӗр пытӑр тенӗ?
Ҫакӑнта ҫав тӗрӗсси!
Ҫакӑншӑн тертленнӗ!
Чиркӳ, часовня; вӗсенче,
Мӑн турӑ сӑнӗ умӗнче,
Сӳнме пӗлми ҫурта ҫунни,
Ҫаратусемшӗн, вӑрҫӑсемшӗн
Татти-сыпписӗр пуҫҫапни,—
Ак мӗн вӗсем — вӑр-хурахсем
Вутра вӑрланӑ виткӗҫсем!!.

Ҫутта тухрӑмӑр! Пурне те
Хамӑр пек тӑвасшӑн,
Ним курми ачасене те
Чӑнлӑх кӑтартасшӑн!
Йӑлт кӑтартӑпӑр! Алла ҫеҫ
Лекӗр пире хӑвӑр,—
Саламат явма вӗренӗр,
Тӗрмесем те тӑвӑр,
Хӑвӑр тунӑ сӑнчӑра

Хăвăр тăхăнмашкăн.
Çĕпĕрти шартламара
Унпала утмашкăн
Хăнăхтарăпăр часах,—
Парăр çеç сăрт-тăвăра.
Хирĕр, тинĕсĕр йăлтах
Ĕнтĕ пирĕн алăра!

Ак, сана та илчĕç, Яккăвăм, ыр çыннăм,
Çывăх тус-тăванăм! Савнă Украина
Çĕрĕшĕн юхмарĕ чыслă халăх юнĕ—
Ун пусмăрçисемшĕн юхрĕ çĕрĕн-кунĕн!
Патша куркинчен-çке наркăмăш ĕçмешкĕн
Килсе тухрĕ! Хамăр аннерен писмесĕр,
Украина çиййĕн чунупа вĕçмешкĕн
Ан пăрах нихçан та, хаклă тусăм; эсĕ
Юханшывсене те хирсене сăна.
Куççульпе пул туслă эс казаксемпе,
Ирĕке эп тухăп—кĕт хирте мана.

Халлĕхе çаплах эп акăп
Хамăн шухăшăмсене.
Аталанччăр, пулччăр çирĕп—
Сапăп, сапăп çил çине.
Украинăн лăпкă çилĕ
Пĕр-пĕр сывлăмлă ирпе
Хаклă тус патне çитерĕ
Тăванла куççулĕмпе
Манăн шухăшăмсене.
Эсĕ курăн вĕсене,
Пуçлăн вуламашкăн,
Хирсене, мана каллех
Манмăн асăнмашкăн.

*1845 ç. ноябрĕн 18*
*Переяслав*

* * *

Кун хыççăн кун шуса иртет,
Кĕр çитрĕ; çулçăсем
Чĕлтĕртетеççĕ; куç сӳнет,
Шухăшсем çук, шăпах чĕрем.
Лăпланчĕ пĕтĕмпех. Пĕлместĕп:
Е пуранатăп, е вилетĕп,
Е тĕнчере çапла çӳретĕп,—
Хам ни кулмастăп, ни йĕместĕп.

Ăраскалăмçăм, шăпамçăм,
Санщăн тунсăхлатăп.
Ыррине шеллен пулсассăн,
Хĕн-асап ыйтатăп!
Сывă этеме ан хуш эс
Ĕмĕр çывăрмашкăн,
Нимĕн усăсăр, тĕллевсĕр
Тĕлĕрсе выртмашкăн.
Пар мана хĕрӳллĕ пурнăç
Çынсене савмашкăн.
Çут тĕнче кĕл пултăр, çунтăр,
Эс ним памасассăн.
Йывăр сăнчăрта пулмашкăн,
Пусмăрта вилмешкĕн.
Çакăнтан çĕр хут хĕн, йывăр
Ирĕкре çĕрмешкĕн,
Çывăрса, ним ĕç тумасăр,
Çĕр айне кĕмешкĕн.
Эпĕ пуранна-и, çук-и?
Ним те çук пĕлмешкĕн!?.

Ăраскалăмçăм, шăпамçăм,
Саншăн тунсăхлатăп.
Ыррине шеллен пулсассăн,
Хĕн-асап ыйтатăп!

*1845 ç. декабрĕн 21*

*Вьюница*

## ПЕХИЛ

Эп вилсессĕн—çеçенхирĕн
Варрине пытарăр,
Чун юратнă Украинăн
Тăприпе хуплайăр.
Тĕмескем çинчен çĕршывăм
Курăнса выртинччĕ,
Вата Днепр ахăрни те
Уççăн илтĕнинччĕ.

Тăшмансен хура юнне вăл
Украина тăрăх
Тинĕсех илсе тухсассăн,
Тупăкран эп тăрăп,
Сăрчĕ, хирĕ—йăлт хăварăп,
Пĕлĕтех çĕкленĕп
Кĕлтумашкăн. А унччен-ха
Эп турра пĕлместĕп.

Пытарсамăр та хускалăр,
Сăнчăрсене татăр,
Ирĕке усал тăшманăн
Юнĕпе шăварăр!
Аслă, ирĕклĕ те çĕнĕ
Килйышра—ан манăр—
Ырă сăмахпа мана та
Ăшшăн асăнсамăр.

*1845 ç. декабрĕн 25*

*Переяслав*

## ЧЕЧЕК

„Мĕншĕн мана, эп ӳснĕ чух,
Çынсем юратмарĕç?
Анчах ӳссе çитсессĕнех
Ма вĕлерчĕç, татрĕç?
Мĕншĕн мана халĕ вĕсем
Керменте усраççĕ,
Чипер патша пики тесе
Мухтаса калаççĕ?
Куç илмесĕр ман илеме
Пăхса тĕлĕнеççĕ,
Анчах ăçта, хăш пӳлĕме
Лартасса пĕлмеççĕ?
Ман пиччем, кермен чечекĕ,
Кала, ӳкĕтлетĕп!“
„Йăмăкăм, ăçтан пĕлем эп,
Сана хĕрхенетĕп“.—
Тĕсĕ-пичĕ, сăн-сăпачĕ,
Ак, хĕрелчĕ унăн,
Пуçне шур чечек çине-çке
Тайрĕ вăл салхуллăн.
Куççульне чечек тумлатрĕ.
Ун куççулĕ — сывлăм...
Йĕрсе ячĕ те каларĕ:
„Ĕмĕр ассăн сывлăн,—
Пĕр-пĕрне, пиччем, юратнă,
Тин мар эпир савнă,
Анчах темшĕн, хам çын чухне,
Мĕн чуль тӳснĕ асапне —
Каламашкăн маннă...

Ман аннем... Ялан-çке, мĕскĕн,
Темшĕн хуйхăратчĕ,
Ман çине пăхса мăнтарăн
Куççуль юхтаратчĕ...
Сăлтавне-мĕнне пĕлместĕм,
Юратнă пиччемçĕм!
Кам ăна пит хурлантарнă?
Эп ун чух ачаччĕ,
Эп выляттăм, йăпанаттăм,
Вăл типсех пыратчĕ,
Хамăрăн хаяр пана вăл
Чунтан ылханатчĕ.
Унтан вилчĕ... Панĕ мана
Хăй патне леçейнĕ,
Вара капăр керменте эп
Ӳссе çитĕнейнĕ.
Усрав хĕрĕ иккенне те
Пĕлмен-çке — айванччĕ.
Пан çухалчĕ сас-хурасăр,
Тăлăха хăварчĕ.
Çынсем ăна кураймасăр
Çуртне вут хыптарчĕç...
Мана... мĕншĕн-тĕр, пĕлместĕп,
Шет — вилме памарĕç,
Вăрăм хитре çивĕтĕме
Касрĕç те, хам çийĕме
Уртрĕç çĕтĕк-çатăк,
Кулчĕç, мăшкăлларĕç;
Шинкарĕсем ялан-пĕрех
Ман çине суратчĕç.
Çапла, пиччем, çак тĕнчере
Мана „чыс" тăватчĕç;
Кĕске, çамрăк ĕмĕре те
Ирттерме памарĕç.
Çурĕ юр, мана вăл витрĕ,
Вилтĕм. Кун юлмарĕ.
Çитрĕ çуркунне ĕлккенĕн,
Эп çуралтăм; кур, тавралăх!
Шур çеçкемĕм, юр çеçкемĕм —
Пур-тăр савăнмалăх!?
Хĕлле çынсем... Эй, турăçăм!

Пӳртне те кӗртместчӗҫ,
Ҫуркунне, хальччен курман пек,
Манран тӗлӗнетчӗҫ,
Хӗрсем кӑшӑл ҫавӑратчӗҫ,
Савӑнсах. Мӗн тейӗн!
Эп вӗсемшӗн пит чысраччӗ—
Шурӑ юр ҫеҫкийӗ!
Ҫавӑнтан эп чечеклентӗм
Сулхӑнта та, хӗвелте те,
Ҫутӑ залсенче те.
Эс кала мана, пиччемҫӗм,
Каласам тархасшӑн:
Мана мӗншӗн турӑ пӳрнӗ
Ҫак чечек пулмашкӑн?
Аннемпе ман пуҫа ҫинӗ
Ҫынсене савӑнтарма-и?..
Эй, турӑҫӑм, турӑ!..“
Куҫҫульне чечек тумлатрӗ.
Ун куҫҫулӗ — сывлӑм.
Пиччӗшӗ чӗнмерӗ, сӑнӗ
Йӑм хӗрелчӗ унӑн,
Пуҫне шур чечек ҫине-ҫке
Тайрӗ вӑл салхуллӑн.

*1846 ҫ. июлӗн 25*

*Киев*

## ВУТĂШ

„Çутă кун курма çуратнă
Çĕр çине анне,
Манпала пĕрле вăл аннă
Днепр хĕррине.
Ачине вăл шыва кĕртнĕ,
Хуллен ăс вĕрентнĕ:
„Шыва май ишсемччĕ, хĕрĕм,
Тĕттĕм каç килсессĕн.
Ыран çыр хĕррине тухăн
Вутăш пулса эсĕ,
Лешĕнпе унта эп ларăп,—
Маншăн вăл шел мар,—
Хытă кăтăкла, хавасăм;
Ун чунне кăлар,
Çамрăкран текех ан култăр.
Манăн юнлă куççуле вăл
Ĕçсе ан ыр куртăр,
Днепра-и путтăр.
Хĕрĕмпе унта çӳретĕр,
Санпала çӳретĕр.
Хĕрĕме, хумсем, хĕрхенĕр,
Вăл айван, хăрать,
Пĕчĕк вутăша йăпатăр!..“
Вăл йĕрсе ярать—
Çухалать кĕç. Эпĕ юлтăм
Кăвак хум çинче.
Мĕн ку? Вутăш-аппасем-мĕн
Куçăм умĕнче...
Пĕр эрне ĕнтĕ ӳсетĕп,

Аппасемпеле çӳретĕп.
Çурçĕрте тăван аттеçĕм
Килессе кĕтетĕп.
Тен, йăлтах ĕлĕкхи евĕр
Çылăхлă çуртра,
Ыталать ăна аннеçĕм
Каллех кăмăлран?.."
Ак шăпланчĕ пĕчĕк вутăш,
Днепра чăмать.
Хум çапсан çӳçе турачĕ
Лăпкăн хумханать.

Темшĕн амăш сывраймасть-çке,
Ыйăхĕ ун вĕçнĕ.
Килте çук пан Ян та халĕ,
Кама сăмах чĕнĕн.
Çыран хĕррине вăл тухрĕ,
Хĕрне аса илчĕ,
Вăл ăна-çке шыва кĕртнĕ,
Хуллен çеç вĕрентнĕ.
Ун çинчен мĕн-ма шутлас халь!
Пулнă, иртсе кайнă.
Ак киле кайма та вăхăт...
Тухрĕ тепĕр майлă!
Куç хупма ĕлкĕреймерĕ, —
Вутăшсем тытаççĕ,
Унпала кĕç вĕсем пурте
Вылямa пуçлаççĕ.
Пурте питĕ хавасланчĕç,
Пулчĕ пысăк кулăш!
Кайран тетеле пăрахрĕç...
Ян-ян кайрĕ кулă!
Унта пĕчĕк вутăша çеç
Илĕртмерĕ кулă.

*1846 ç. августăн 9*

*Киев*

* * *

Ах, пӗччен эп, пӗччен,
Типӗ курӑк евӗр!
Телейпе ӑраскал
Мана пӳлӗх пӳрмерӗ.
Пурччӗ ун тивлетне
Мӑшӑр хӑмӑр куҫӑм,
Вӑл та сӳнчӗ-сӳнчех,
Хуйхӑрса хӗр пуҫӑн.
Пиччеме эп курман,
Тӑван йӑмӑк пулман та.
Ӳсрӗм эпӗ ютра,
Ӳсрӗм — хӑрса лартӑм.
Эс ӑҫта-ши, ӑҫта,
Ырӑ ҫыннӑм, тусӑм?
Ҫук-ҫке, ҫук... Эп пӗччен!..
Юлтӑм пӗччен пуҫӑн.

*1847*

*Касаматра*

* * *

Вар, васан та вăрман,
Лере хир, вилтăприйĕ.
Ак, кичем шăтăкран
Тухрĕ çын ĕмĕлкийĕ.
Казак тухрĕ çĕрле,
Çеçенхир еннелле
Утса юрă юрларĕ:
„Çие сапрĕç тăпра,
Хăйсем кайрĕç вара, —
Тек никам асăнмарĕ.
Виççĕр пулнă эпир,
Пире илчĕ çак хир,
Çук, пĕри тăраймарĕ...
Гетман сутрĕ пире*
Чурана ирсĕре.
Вĕсене хăвалан.
Чун саван çĕршывра
Юн шаркарĕ вара,
Пуçĕ ўкрĕ тăванăн.
Ĕçрĕç санăн юннах,
Ак вара ушкăнпах
Шăтăка кĕрсе выртрĕç.“
Пĕтерет юррине,
Ак сăннийĕ çине
Таянать те тăрать вăл,
Хăй тăприйĕ çине

---

* Шевченко кунта тутарсемпе килĕшў тунă Петр Дорошенко (1665—1676) гетман çинчен калать. Тутарсем, гетманпа вăрттăн килĕшсе татăлса, нумай украинецсене тыткăна илсе кайнă пулнă.

Çутă Днепр сăнне
Куççуль витĕр пăхать вăл.
Днепр урлă ялтан
Сасă çитрĕ ян-ян,—
Автансем сасă пачĕç.
Çĕре ÿкрĕ казак,
Чĕтĕрерĕ васан,
Вилтăпри йĕрсе ячĕ.

*1847*

*Касаматра*

* * *

Пĕлместĕп, пурăнма тивет-и
Мана Украйна çĕрĕнче.
Манать-и е аса илет-и
Тăван çĕр кирлĕ кунсенче,
Манран вăл пурпĕрех инçе.
Чура пек, тăлăххăн эп ӳсрĕм,
Куççуль юхтартăм, мăшкăл тӳсрĕм.
Эп вилĕп асапра, ютра,
Пур ĕмĕт пулĕ тупăкра.
Инкек килсен те аса илмĕ
Мана мухтавлă Украина,
Тăван çĕр асăнмĕ мана,—
Эп халь тăлăх-турат кăна.
Хăй ывăлне каламĕ ашшĕ
Эп хĕнлĕн çитĕнни çинчен:
„Украйнăшăн сан пуççапасчĕ,
Вăл вилчĕ тамăк вутĕнче".
Пуççапĕ-и е çук çав ывăл,—
Ку маншăн халĕ пурпĕрех.
Анчах та маншăн тĕнчере
Пурпĕрех мар тăван çĕршывăм
Выртсассăн лăпкăн çывăрма,
Тăшман килсессĕн çаратма,
Вăл каласассăн: — тăр та хывăн! —
Ой, çук, ку маншăн пурпĕр мар!

*1847*

*Касаматра*

* * *

„Эс аннӳне ан пӑрахсамччӗ!" —
Сана каларӗҫ, тартӑн эс;
Тӑрлавсӑр, тупрӑн пӗр кӗтес.
Аннӳ шырарӗ, тупаймарӗ;
Куҫ хупрӗ вӑл шыра-шыра.
Йӑлтах вӗлтрен ӳссе кашларӗ,
Йытти те тарчӗ, чӑтаймарӗ
Эс шуххӑн ҫитӗннӗ ҫуртра;
Ҫум пуснӑ пахчара ҫӳреҫҫӗ
Куллен халь шурӑ путексем,
Каҫ-каҫ унта тӑманасем
Чуна ҫӳҫентерсе ӳлеҫҫӗ.
Йӑлт юхӑннӑ чечек йӑранӗ,
Ӑна та пуснӑ халь вӗлтрен;
Пахча сана кӗтсе аптранӑ,
Пӗве те хухнӑ, ӑшӑкланнӑ,—
Унта ишеттӗн пӗчӗкрен;
Вӑрман та янрамасть хитрен—
Унти саркайӑк халь шӑпланнӑ,
Вӑл тарнӑ санпала пӗрле.
Тӑрна куҫ—ҫӑл та типсе ларнӑ,
Кӑчкӑ тӗми хӑрса хуралнӑ,
Эс чупнӑ утмаҫул хупланнӑ
Туратлӑ талпиҫенпеле.
Ӑҫта эс тартӑн та пытантӑн?
Тӑван киле ют ҫын пек мантӑн,—
Ют килйышра та ют ҫӗрте
Кама лӑпкатӑн та сапатӑн?
Кама усратӑн чӗрӳнте?

Сисетĕп, эсĕ савăнатăн
Темле çап-çутă керменте,
Тăван кил çуккă асăнта та...
Анчах та, тусăм, ĕмĕрте
Сана ан тивтĕр йывăр хурлăх,
Инкек ан ӳктĕр пуç çине;
Ан тив, ылханмалла ан пултăр
Турра та мĕскĕн аннӳне.

*1847*

*Касаматра*

* * *

„Мĕн-ма масар ҫине ҫӳретĕн?—
Тет амăшĕ хĕрне йăвашшăн,—
Мĕн-ма ялан-ялан йĕретĕн,
Пăрах кусҫуль тăкма тархасшăн.
Выртса кансамччĕ, ман чĕкеҫĕм“.
— Каятăп эп, ан чар, аннеҫĕм.—
Хĕрĕ каять масар ҫине,
Кĕтме тивет-ҫке амăшне.

Ыйхă куракĕ сармасть-мĕн
Ҫеҫкине сĕм каҫхине;
Тĕмеске ҫине лартать-мĕн
Хĕр палан йывăҫҫине,
Кусҫульпе хĕр шăварать те,
Турăран ыйтать-мĕн:
Чĕрĕ сывлăм, ăшă ҫумăр
Ҫĕр ҫине яр, тет-мĕн.
Ҫак палан ҫӳле хăпартăр,
Чечеклентĕр, ӳстĕр.
Кайăк пултăр та савниҫĕм
Леш тĕнчерен килтĕр!
Ун валли эп йăва ҫаврăп,
Хам вĕҫсе хăпарăп.
Ҫак палан ҫинче унпа эп
Чĕвĕлтетĕп, ларăп.
Чĕвĕлтетĕпĕр хавассăн,
Йĕрĕпĕр тӳлеккĕн,
Вĕҫĕпĕр кăшт ҫутăлсассăн
Леш тĕнчене иккĕн...
Палан хăвăрт туратланчĕ,

Хушнине итлерĕ.
Хĕр масар ҫине, мăнтарăн,
Виҫĕ ҫул ҫӳрерĕ.
Ак, тăваттăмĕш... тухман-мĕн
Унта каҫ чечекĕ,—
Паланпа хĕр калаҫать-мĕн,
Каласса йĕрет-мĕн:
„Сарлака та ҫӳлĕ эсĕ,
Ман паланăмҫăм.
Ҫăл шывĕпеле ӳсмерĕн,
Эс ман йывăҫăм,
Куҫҫульпе сана шăвартăм
Эп ҫырма пекех.
Ҫын сăмахĕпе эп ҫитрĕм
Халь вилес патнех.
Юлташсем те хур кăтартрĕҫ,
Манчĕҫ тантăшне.
Хĕрлĕ палана хурларĕҫ—
Эпĕ лартнине.
Тăр умра, паланăм, ҫăвăн
Сывлăм шывĕпе;
Хĕвелтен мана эс хуплăн
Ху ҫулҫусемпе.
Ҫутăлсан мана кĕҫ курĕҫ,
Кулĕҫ тăлăхран.
Сан туратусене хуҫĕҫ
Ачасем унтан".
Ирхине ирех саркайăк
Уҫҫăн чĕвĕлтетрĕ.
Хĕр палан айне йăванчĕ,
Ҫывăрчĕ, тăмарĕ;
Ывăнчĕ хĕр, асапланчĕ,
Тек куҫне уҫмарĕ.

Ҫап-ҫутă шурăмпуҫ хăпарчĕ.
Вăранчĕҫ... Амăшĕ ҫаплах
Ҫĕрĕпеле куҫне хупмарĕ,
Мĕн ирччене куҫҫуль юхтарчĕ.
Кĕтет-ха вăл хĕрне татах.

*1847*
*Касаматра*

## ВИҪĔ ҪУЛ

Виҫĕ анлă ҫул таҫта-ҫке
Инҫете туртаҫҫĕ...
Украинăран ак виҫҫĕн
Ют ҫĕре каяҫҫĕ.
— Сывă пул, тăван аннемĕр!—
Ак пуҫ тайрĕҫ виҫҫĕн.
Кĕҫĕнни хуллен каларĕ:
— Сывă пул, савниҫĕм!
Хире тухрĕ ватă амăш,
Лартрĕ виҫĕ кавраҫ;
Ҫамрăк кинĕ упăшкишĕн
Лартрĕ тирек йываҫ.
Вĕренесем чипер йăмăк
Лартрĕ — ўсчĕр виҫҫĕн!
Савнă хĕрĕ палан тĕмĕ
Лартрĕ кĕҫĕннишĕн.
Ах, паланĕ хăрса ларчĕ,
Вĕренисем пĕтрĕҫ,
Йăрăс тирек ҫитĕнмерĕ,
Кавраҫсем те типрĕҫ.
Виҫĕ паттăр таврăнмаҫҫĕ,—
Амăшĕ йĕрет-ҫке;
Тăлăх арăм ачисем те
Хурланса ўлеҫҫĕ.
Йăмăкĕ тăвансене ак
Шырамашкăн тухрĕ.
Кĕҫĕннин савнийĕ-тусĕ
Вилчĕ, куҫне хупрĕ.

Виҫ тӑван киле килмеҫҫӗ,
Тӗнчере ҫӳреҫҫӗ.
Тал-пиҫенпе виҫӗ ҫул та
Йӑлтах витӗнеҫҫӗ.

*1847*

*Касаматра*

## Н. КОСТОМАРОВА*

Çурхи хĕвел, йăлтăртатса,
Йăл ылттăн пĕлĕтпе хупланчĕ.
Ак сăнчăрлисене пухса,
Ĕнтĕ каçхи апат—чей пачĕç,
Ак улăштарчĕç хурала;
Хыт питĕрнĕ алăкпала
Çак решеткеллĕ кантăка та
Пĕчĕккĕнех эп хăнăхатăп...
Тўссе ирттернĕ хĕн кунçул
Хыçа юлса асран та тухнă,
Тăлăх уя хисепсĕр юхнă,
Юнпа хĕрелнĕ йўç куççуль
Мана кăштах та халь шел мар-и.
Тырри пулмарĕ ман уйра,
Черченкĕ курăк та шăтмарĕ.
Çапах асилтĕм эп яла...

Мана камран-ши туртса илчĕç?
Атте-аннем те çук ман,—вилчĕç.
Никам, никам та çук-çке манăн...
Анчах та ак, кĕтмен çĕртен,
Кама куратăп эп, тăванăм:

---

* *Костомаров,* Николай Иванович (1817—1885 çç.)—Украина писателĕ тата либераллă буржуази йĕрĕпе пыракан историк пулнă, вăл малтан Киеври, унтан Питĕрти университетсенче профессор пулса ĕçленĕ. Кириллпа Мефодий туслăхĕ текен ушкăна организацилекенсенчен пĕри тесе айăпласа ăна суд тунă, Шевченкопа пĕр вăхăтра касаматра тытса усранă.

Аран утса пырать хуллен
Ҫӗртен те хурарах хӗрарӑм—
Вӑл санӑн ват аннӳ, мӑнтарӑн...*
Мухта пуҫларӑм эп турра.
Хам асапа ман никампа та
Пайламалли ҫукне кура,
Ӑна эп мухтӑп-ха татах та.

*1847*
*Касаматра*

* Костомаров амӑшне, малтан помещик аллинче тӑнӑ хӗрарӑм пулнӑ Татьяна Петровнӑна, Шевченко чӗререн хисепленӗ. Поэт унпала хӑй Киевра пурӑннӑ чухнех паллашнӑ пулнӑ. Шевченко ссылкӑран таврӑннӑ вӑхӑтра Костомаров амӑшӗ Саратовра пурӑннӑ, поэт ҫул май 1857 ҫулта ун патне кӗрсе курнӑ.

* * *

Çурт умĕнче чечен чие-çке,
Чие çинче нăрри сĕрлет;
Сухаçă сухаран килет,
Хĕрсем юрла-юрла иртеççĕ,—
Килте атте-анне кĕтет.

Çурт умĕнчех апат тăваççĕ,
Каçхи тŭпе йăл-йăл çиçет.
Пике-хĕр апатне кŭрет,
Вăрçасчĕ амăшĕн пăртакçă,—
Анчах та шăпчăк кансĕрлет.

Ват амăшĕ шырарĕ канăç,
Вырттарчĕ вăл ачисене,
Хăй тĕршĕнчĕ вĕсем çумне.
Тавралăх шăп... Хĕрсем выртмарĕç,
Итлерĕç шăпчăк юррине.

*1847*
*Касаматра*

## ÇАВА

Хир-хир урлă пырать,
Паккус мар сапалать,
Паккус мар — çӳлĕ ту купалать вăл.
Хирсене вăл хырать, тинĕсе хумхатать вăл,
    Леш йĕрет, макăрать.

    Уй-хирте сĕм çĕрле
    Тăмана ӳхĕрет;
Çава пĕртте канмасть,
Никама уямасть —
    Ан та ӳкĕтле;

    Ӳкĕтле, тархасла,
    Вăл ĕçлет урасла;
Е хула-и, е сала —
Вăл касать ывтăнмалла,
    Сулать те çулать.

    Мужике, шинкаре,
    Тăлăха — кобзаре;
Юрлать ватă, çулать,
Паккус ту пек юлать,
    Уямасть патшине,

    Ни мана — мĕскĕне:
    Çич ютрах пĕтерет.
Пăвса хурать тĕрмере, —
Никам хĕрес лартас çук,
    Асăнас та çук.

*1847*

*Касаматра*

* * *

Хӗвел анса ларчӗ, ту-сӑрт хуралчӗ,
Чӗмсӗр пур кайӑк, хир шӑпӑртланчӗ,—
Кӑмӑллӑ халӑх, кан ӗнтӗ, ҫывӑр.
Эпӗ пур — манщӑн ҫеҫ... ҫав тери йывӑр:
Кил! тет Украйна, савнӑ ҫӗршывӑм.
Шухӑшӑмпа вӗҫейсе эп каятӑп,
Чунӑм-чӗремӗмҫӗм каннӑн туятӑп.
Пур тӗме-йывӑҫ сӗмлӗхе йалт путрӗ,
Ҫӳл тӳпене ав йалтӑр ҫӑлтӑр тухрӗ.
Ҫӑлтӑрӑм манӑн!.. варттӑн макратӑп.
Тухрӑн-ши эсӗ Украинӑра та?
Унта сана халь тупрӗҫ-ши савнӑ
Хӑмӑр куҫсем? Е вӗсем манса кайнӑ?
Маннӑ-тӑк,—ҫывӑрччӑр, ан пӑшӑрханччӑр,
Манӑн шӑпам ҫинчен ан шухӑшлаччӑр.

*1847*

*Орск крепоҫӗ*

* * *

Ун чух вунвиççĕреччĕ эпĕ,
Кĕтӳ кĕтеттĕмччĕ хирте.
Хĕвел лăпкаччĕ-и пит çепĕç,
Е урăххиччĕ ман тĕлте,—
Чĕрем таппи хĕрӳн çĕкленчĕ,
Телей çывхарнă евĕрех.
Мана телей — хисеплĕх сĕнчĕ;
Пĕр хускалми эрĕмлĕхре
Эп кĕлтăвап турра. Пĕлместĕп:
Мана, çап-çамрăк ачана,
Мĕскер хаваслăн пуççаптарчĕ,
Мĕн савăнтарчĕ-ши мана?
Çӳлти çут пĕлĕт те, сала та,
Умри кĕтӳ те хавасланать,
Хĕвел те саврĕ лăпкаса.
Хĕвел нумаях савмарĕ,
Кĕлĕ пĕтрĕ часах;
Шăрăх хыт хĕртме пуçларĕ,—
Райăм ĕнсе кайрĕ.
Алчăрарĕç куççем манăн:
Ялăм тĕксĕмленчĕ,
Туррăн çут-кăвак тӳпи те
Хăвăрт тĕтреленчĕ.
Путексем çине эп пăхрăм —
Вĕсем манăн мар,
Пӳртсем-çуртсем çине пăхрăм—
Пӳртĕм те çук ман.
Мана ним памарĕ турă.
Йӳç куççуль çеç кушăмран
Шăпăртатса юхрĕ.

Инçе мар ман патăмран
Хĕр пуса tатачĕ,
Эп йĕнине илтсенех—
Çак хĕр пычĕ, ачашларĕ;
Куççулĕме типĕтсе
Мана вăл чуптурĕ...

Хĕвел пăхнă пекех пулчĕ,
Каллех ак маншăн пулчĕç пек
Уйсем, садсем, çăра вăрман...
Çав хĕрпе иксĕмĕр вара
Ют кĕтĕве хăваласа
Кайрамăр эпир тапăра.

Ку ĕнтĕ ним те мар!
Анчах, ăна асилсенех,
Чĕрем пуçлать йăшма:
Мĕн-ма ачалăх вăл кĕске-ши?
Вăя уя-хире парса,
Пурнайăттăм эп тертсĕр...
Вара турра та, çынсене те
Тек ылханса çӳреместтĕм!

*1847*

*Орск крепоçĕ*

* * *

Шухăшăмсем, тăванăмсем,
Тăлăх ан хăварăр!
Манăн хаяр кунçулăма
Çăмăллăх парсамăр.
Çак çеçенхир варрине—
Йытлĕр мана, итлĕр!—
Кăвакарчăн пек вĕçсе
Днепр урлă килĕр.
Килĕр кăркăс çĕршывне,
Кăркăс мĕскĕн, çĕтĕк,
Пуç усмасть вăл пурпĕрех,
Çĕрĕ унăн ирĕк.
Килĕр, килĕр, шухăшсем,
Лăпкăн калаçар-и!
Ача пек сире ачашлăп,
Макăрса та ярăп.

*1847*

*Орск крепоçĕ*

* * *

Эп курнине никам ан куртăр,
Çук, никама та тур ан хуштăр.
Эп — ютра, ирĕксĕрлеççĕ,
Кăлăхах çулсем иртеççĕ.

Уялла тухса çӳресчĕ,
Хуйхă-суйхăма сиресчĕ.
Анчах ирĕке ямаççĕ,
Уçăлмашкăн калармаççĕ.

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Ман пулинччĕ мăшăр аттăм—
Мĕнлерех эп те ташлаттăм...
Ată çук-çке ман!
Кĕвĕ ян каять хавассăн—
Эп пушшех сывлатăп ассăн,
Чунăм савăк мар!
Уй-хире çарран эп тухăп,
Телее шыраса пăхăп,—
Эй, тискер шăпам!
Çуралман-çке эп илемсĕр,
Мана ĕмĕр хĕрхенмесĕр
Хĕн ан кăтартсам!
Вăйăра пур хĕрупраçĕ
Савăнса-кулса ташлаççĕ,—
Пĕчченех пĕр эп.
Тарçăрах пĕтет пуль пуçăм,
Сӳнет пуль ман хура куçăм,
Хуйхăрсах пĕтет!

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Пурлăхлă та эп,
Илемлĕ те эп,
Савнă тусăм çеç çук манăн,
Пит телейсĕр эп

Йывăр мана пурăнма,
Савма çукшăн никама,
Пĕччен пусăн çўремешкĕн
Укаланă тумпала!

Юратасчĕ-çке ман,
Пĕрлешесчĕ-çке ман
Хура куçлă тăлăхпа халь,
Анчах çук телейĕм ман.

Килтисем çывăрмаççĕ,
Мана шав хураллаççĕ,
Пĕр-пĕчченĕн çўремешкĕн
Сада кăлармаççĕ.

Кăларсан та, унпа—
Чун туртман ват çынпа,
Эп савман пуянпа-çке,—
Ман тискер тăшманпа!

*1948*

*Кос-Арал*

* * *

Эп тӗл пултӑм унпа,
Эп пӗрлешрӗм унпа,—
Тӑлӑх ҫын вӑл, телейсӗр—
Акӑ манӑн шӑпа!

Ун пуҫне хырса янӑ,—
Мӗн тӑвас-ха,—салтак!
Салтакран таврӑнма ун
Шанчӑк пур-ши пӑртак?

Салтак арӑмӗ эп,
Пӗр-пӗччен юлтӑм эп.
Ҫын панче пуранатӑп,—
Ман шӑпам ҫавӑн пек!

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Мăшăра çула ăсатрăм
Ирхине ирех эп.
Урăххи патне васкарăм
Хупахран тӳрех эп.
Кума патне кайса килтĕм,
Вир кĕрпи эп илтĕм;
Ачасене тăрантартăм,
Аран лăплантартăм.
Сивĕ пӳртрех ăшшăн
Çывăрмашкăн хушрăм;
Хам—течук патне вара,
Укçа кирлĕ-çке ара!
Çавăнтах çĕр каçрăм.
Çитрĕ упăшка Крымран,
Урине сĕтрет аран;
Вăкрисем хавшанă,
Урапи те ваннă,
Чăпăркаллă чумаксенĕн
Чукĕ хаярланнă.
Упăшка пӳрте кĕрет те:
Пӳртĕмре, курать, сĕм тĕттĕм;
Ачасем çĕрте йĕреççĕ:
„Хырăм выçă",—теççĕ.
Вăл ыйтать: „Ăçта-ха аннĕр?"
Лешсем тавăраççĕ:
„Пирĕн анне пире маннă,
Хупахра ларать-çке".

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Кĕпепе анне çуратнă,
Çутă кил-çуртра йăпатнă
Пĕчĕкрен мана.

Пурçăн бархат тумлантарнă,
Ют çын куçĕнчен пытарнă, —
Ӳс чипер кăна!

Вăхăт шурĕ, эпĕ ӳсрĕм,
Чечек пек хитре те хӳхĕм, —
Пĕлĕр эп камне!

Анчах канăçа çухатрăм,
Чухăна чунтан юратрăм,
Чăркăшрĕ анне.

Пуяна качча вăл пачĕ,
Тертленетĕп ирĕн-каçăн,
Ыйхă та килмест.

Хирти курăк пек типетĕп,
Кунĕ-кунĕпе йĕретĕп,
Хатĕр эп вилме.

Çут тĕнче çине пăхмастăп,
Никама та ăмсанмастăп...
Аннене кăна —

Каçармасăр ылханатăп,
Усалпа çеç астăватăп
Виличчен ăна.

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Лаштра юман ҫине ларать те
Авăтать куккук.
Макăрса ярать пĕр тăлăх —
Юратакан ҫук.

Ҫамрăк та хаваслă вăхăт
Тинĕс хумĕ пек
Ярăнса иртет-ҫке хăвăрт
Хăйĕн ҫулĕпе...

Атте-анне пурăнсассăн,
Пуян ҫын пулсан,
Юратакан тупăнатчĕ,
Упăшкам та ман.

Ҫук ҫав, ҫук. Телейсĕр ҫын эп
Ҫакă тĕнчере.
Ак ҫаплах эп вилĕп-выртăп
Пĕр-пĕр кĕтесре.

*1848*

*Кос-Арая*

* * *

Ой, анмасть сăра та, пыл та,
Шыв та эрĕм пек;
Чумака килсе хупларĕ
Çул çинче инкек:
Ыратать-çке пуçĕ унăн,
Тем касать варта.
Урапи çумнех вăл тӳнчĕ,
Тăрайми выртать.
Мухтавлă Одессăран-мĕн
Сарăлнă чума;
Тусĕсем пăрахса кайнă,—
Пĕтетех чумак!
Вăкрисем те шалт аптранă,
Тăраççĕ сĕнксе;
Пуç çинех вĕссе пыраççĕ
Выçă çăхансем.
„Кайăксем, вилле ан тивĕр, —
Мĕншĕнне пĕлетĕр:
Ман ӳте сăхса илсессĕн,
Манпалах вилетĕр.
Кайăксемĕр, вĕçĕр, вĕçĕр,
Инçете ăсанăр;
Манăн аттене курсассăн
Асăнмашкăн калăр.
Ырăпа псалтырь вулаччăр,—
Савнă тусăма та
Тĕл пулсассăн, калăр, хушăр
Ман ята вăл мантăр".

*1848*
*Кос-Арал*

* * *

Леш хай Катя-Кĕтерукăн
Пӳрчĕ—кермен, тейĕн.
Казаксем çӳре пуçларĕç
Унта кунĕн-çĕрĕн;
Çарура Çеменĕ,
Ярханах Иванĕ,
Виççĕмĕшĕ—Ярошенко,
Çурма-тăлăх ывăл,
Питĕ паттăрскер вăл.
„Эпир йăлт çӳренĕ—
Польша та Украйнă.
Сан пеккине, Кĕтернемĕр,
Ниçта та тупайман".
„Эп пуян пулас-тăк,—
Тет пĕри сасартăк,—
Мĕнпур ылттăна параттăм
Катя йăл кулнишĕн,
Кăшт пĕрле пулнишĕн".
Тепри хушать: „Улăп
Эпĕ пулнă пулăп,
Мĕнпур вăйăма параттăм
Катя йăл кулнишĕн,
Кăшт пĕрле пулнишĕн".
Виççĕмĕш каларĕ:
„Эпĕ паттăр мар-и?
Темĕн те тупма пултарăп
Чипер Кĕтерукшăн,—
Мĕн кăна эс хушăн".
Кĕтерук кăшт шухăшларĕ,
Шухăшларĕ те каларĕ:

„Ман тăван пиччемçĕм пурччĕ,
Халĕ тыткăнра вăл.
Вăл Крымра, хĕн-хур тӳсет-çке,
Кам ăна халь çăлĕ,
Казаксемĕр-тăвансемĕр,
Çав ман мăшăр пулĕ".
Хăнасем çĕкленчĕç,
Утсем йĕнерлерĕç,
Катя пиччĕшне çăлмашкăн
Кăнтăра вĕçтерчĕç.
Пĕри часах вилĕм тупрĕ —
Днепра вăл путрĕ.
Козлова çитсен тепри те
Шалча çинче пĕтрĕ.
Виççĕмĕшĕ, Ярошенко,
Çурма-тăлăх ывăл,
Бахчисарая çитсессĕн,
Тăшмана тустарчĕ,
Кĕтерукăн пиччĕшне вăл
Тыткăнтан хăтарчĕ.

Ирхине хапха шалтлатрĕ,—
Çынсем пӳрте кĕчĕç:
„Тăр-ха, тăр-ха, Кĕтернемĕр,
Санăн пиччӳ килчĕ".
Пăхрĕ те леш калла чакрĕ,
Унтан йĕрсе ячĕ:
„Чеелентĕм, пичче мар ку,
Ку ман савнă каччă!"
„Чеелентĕн!" Кĕтерукăн
Пуçĕ кусса кайрĕ.
„Усал пӳртре—усал сывлăш,
Ирĕке тухар-ха!"

Запорожецсем ăсанчĕç,
Çил вĕçрĕ вăр-варрăн.
Хура куçлă Катьăна хай
Уй варне пытарчĕç.
Запорожецсем мухтавлăн
Хирте тăванлашрĕç.

*1848*
*Кос-Арал*

* * *

Çырмана шыв ăсма эпĕ антăм,
Ой, кунта йăлтах куртăм, ăнлантăм:
Урăхне тупнă манăн
Савнă тусăм Иванăм,
Урăххи ку—аскăн кӳршĕ,
Пуян хусах арăм.
Ĕнер çеç унпа эп
Ĕçлерĕм пит лайăх,
Çав çĕленпе йĕтĕн татрăм,
Чунтанах каларăм:
Иван савать, терĕм,
Евчĕ ярать, терĕм.
Çав анчăка хам туя та
Чĕнсе хыпар ятăм.
Тусăмçăм Иванăм,
Хăлатăм, тăванăм!
Эс мĕнлине турă куртăр,
Пуçна çапса çуртăр!

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Мăйăра пĕрре эп кайрăм
Уçалмалăх.
Мелнике унта эп саврăм
Йăпанмалăх.
Мелник лайăх авăртать вăл,
Ыталать те чуптăвать вăл
Йăпанмалăх.

Кăмпана пĕрре эп кайрăм
Ӳркенмесĕр.
Сӳсменçе унта эп саврăм
Тӳсеймесĕр.
Тир-сăран аван тăвать вăл,
Ыталать те чуптăвать вăл
Тӳсеймесĕр.

Вăрмана вутта эп кайрăм
Çын хушмасăр.
Пичкеçе унта эп саврăм
Вăтанмасăр.
Пичкесем хитре тăвать вăл,
Ыталать те чуптăвать вăл
Вăтанмасăр.

Эй, аннеçĕм ан ятла эс:
Халăх кулĕ!
Виççĕрен халь хăшĕ ĕнтĕ
Кĕрӳ пулĕ?
Вырсарникун виççĕшĕ те
Санпа ыррăн килĕшĕç те
Кĕрӳ пулĕç!

*1848*
*Кос-Арал*

* * *

Ту-сăрт урлă пасара
Утмаçул
Хыврăм эпĕ, савнă тус,
Пĕлнĕ пул!
Шушкă сутрăм пасарта,
Пĕр хусах
Илчĕ пилĕк пус парса
Савăнсах.
Тăват пуслăх ĕçрĕм эп,
Савнă тус,
Тата патăм шăпăрçа
Тепĕр пус.
Шăпăрçă, эс шăпăрна
Каласам,
Хамăн хуйхă-суйхăма
Эп манам!

Ак мĕнле хĕр эп, анчах
Санăн мар!
Эс илсессĕн—эп пырап,
Евчĕ яр!

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

„Никама та çураçмастăп,
Ĕмĕр авланмастăп,
Тĕркĕш ача-пăчапа та
Эп аппаланмастăп.
Кăмăл çук, тăван аннемçĕм,
Плуг хыççăн утма та.
Бархат жупан тăхăнса эп
Уй-хире тухмастăп!
Эпĕ кайăп, тăванлашăп
Ĕмĕр пурăнмалăх
Запорожьери туспа та
Çеçенхирпе лайăх.
Хортицăра—атте çурчĕ,
Унта пан пек пурнăп.
Жупанпа эп шукăль çӳрĕп,
Эрех ĕçĕп, юрлăп“.

Ăссăр йĕкĕт тухса кайрĕ:
Çапăçать, ĕçет вăл.
Карчăк тăлăха-çке юлчĕ,
Пурăнать пит тертлĕн.
„Ах,—тесе яшка çакать вăл,
Чĕрĕлмест кăварĕ,—
Çуккă ывăлăм Иванăм,
Çуккă ун хыпарĕ“.

Ик çултан мар, виççĕрен те,
Тваттăран та мар-тăр,
Запорожец килсе кĕчĕ

Пĕр хăрăк туратăн!
Йăлт хавшанă та аманнă,
Сÿннĕ çутă куçĕ...
Ак сана халь Запорожье,
Акă аçу çурчĕ!
Пĕр-пĕр çынпа калаçасчĕ,
Чуна йăпатасчĕ!
Çамрăклах-мĕн, яш казакăм,
Сан авланмаллаччĕ!
Çамрăк вăхăт иртсе кайрĕ
Шавлă çурхи шывăн...
Кам чунна халь лăплантарĕ,
Кам сана куç хывĕ?
Пуш пÿртре сана никам та
Кăвайт чĕртсе памĕ.
Чăлаха халь шыв курки те
Пĕр никам тыттармĕ.

*1848*

*Кос-Арал*

* * *

Вилсе выртрĕ ват атте,
Вилчĕ-ҫке аннем те.
Хĕрхенмерĕҫ кӳршĕсем,
Манчĕҫ ялйышсем те.

Мĕн тăвас халь, тăлăхăн,
Мĕн тума пĕлес-ха?
Те тарҫа кайса кĕрес,
Те килтех йĕрес-ха?

Вăрмана ҫитсе пăхам,
Рута йывăҫ лартăп:
Тымарне чипер ярсан,
Ют ҫĕре эп каймăп.

Савнă тусăм килĕ те
Пурăнăпăр ыррăн.
Килмесен, телейĕме
Ют ҫĕрте эп шырăп.

Рута йывăҫ, лартсанах
Ашкăрса ҫĕкленчĕ...
Тăлăх хĕр ҫеҫ тарҫăра
Макăрчĕ, тертленчĕ...

*1848*

*Кос-Арал*

# ПЕТРУÇ

## ПОЭМА

Пӗр хуторта арăмӗпе
Пуянах мар улпут пуранчӗ.
Пӗртен-пӗр хӗрӗ çитӗнсен,
Генералтан ак хăтасем
Вӗсем патне пырса çитеççӗ.
Хӗрӗ илемлӗ; мулӗсем
Çав генералăн шутсăр, теççӗ.
Çак чухăн хутора ыр турă
Телей кӳресшӗн пулӗ, тен?
Хӗре тумлантарам пек турӗç,
Вырсарникун ак венчете
Генералпа ăна тăратрӗç,
Ирпе мăн Киева ăсатрӗç.

Улпутăн пӗр тарçи те пур ак—
Кӗтӳ ачи Петруç; ăна,
Çара уралла, çӗтӗк-çурăк
Тумланнă тăлăх ачана,
Улпут парса ярать хӗрне—
Сысна пăхма кӗтӳç-парне.

Чăнах пуян-мӗн генерал:
Кунсеренех бал хыççăн бал.
Илемлӗ, чаплă çамрăк пани,
Ăна такам пăхса сăхланӗ.
Яш улпутсем ун умӗнчен
Кайма пӗлмеççӗ, ыр пуласшăн.
Çапах йӗрет вăл хăй каç-каçăн.

— Анне мана телейсĕр турĕ,
Пуянлăхра пĕтет мĕнпурĕ—
Ман çамрăк ĕмĕр, ман илем...
— Мĕншĕн йĕретĕн эс, пикем?
— Кам? Эпĕ-и? Çук...—Итлесем:
Хула тулли халь эрменсем,
Хăвна валли пĕр ÿркенмесĕр
Чечеклĕ шел туян-ха эсĕ.
Ан пăшăрханччĕ—ан хурлан.
— Çук, кирлĕ мар нимĕнле шел те!
— Çут кăвакарчăнăм, туян,
Мана ан хуйхăрт, ÿкĕтлетĕп!
Кăмăлăма ан хуç манне.
Пулайтăр çеç ак çуркунне—
Париж курмашкăн санпала
Каятпăр, е—чуну туртсан—
Кайма пултарăпăр яла,
Унта именийĕм пур ман.
Ху кăмăлу...
Часах хĕл иртрĕ.
Яла кайсан, çĕн хурлăх ак
Маруçăн яш чĕри урлах,
Çĕлен пек, тăсăлчĕ те выртрĕ,—
Ял çыннисем йăлт асăрхаççĕ.
Анчах туймасть-çке генерал:
Ун ĕçĕ—кунсерен çĕн бал,
Именире ĕçме хавас-çке!
Килте кичем. Ак тÿсеймесĕр
Тухать те пани пĕр пĕччен,
Пырсан-пырсан, ял хапхинчен
Иртсех каять хăй те сисмесĕр.
Пăхать: сар хăмăлла хирте
Палланăскер кĕтÿ кĕтет.
— О, хуйхă—кам-ши ăна манĕ?
Туй пулнăран варах эп канăç
Курмастăп!.. Эсĕ-и, Петруç?
— Эпех çав,—тавăрать кĕтÿç.
— Атя, Петруç, манпа пĕрле;
Усадьбăра та пур кĕтес,
Хуторти евĕр пурнăн эс.—
Хăй кăвакарчĕ, темĕнле,

Ытла та хурлӑн пӑхса илчӗ...
Хӗр ӗмӗрӗ асне-ши килчӗ?
Пӗччен ирттерчӗ ҫав ӑна.
Качча та ват генерала
Ирӗксӗр пачӗҫ—укҫалла,
Виҫ кун хушши ӗҫсе. Чуна
Хуҫать ҫав хурлӑх... Тӳсеймерӗ —
Пӗчӗк ача пек ӗсӗклерӗ:
— Атя, Петруҫ, пирӗн пата.
Тухатпӑр иксӗмӗр сада.
Сана ялан хавас.
— Чӗнетӗн,
Анчах кӗтӳ кам кӗтӗ, тетӗн?
— Кам кӗтес тет, ҫав кӗттӗрех!..
Пуян ҫурта илсе кайрех
Хайхи кӗтӳҫӗ ачине,
Йӑлт улӑштарчӗ ун тумне,
Унтан хӑйне те вӗренмешкӗн
Шкула ӑсатрӗ. Ӗненмешкӗн
Халь пур пӗр шанчӑк ун. Кайран
Мӗскер шӑтать ҫак вӑрӑран:
Пукра пулать е сарӑ тулӑ —
Каярахпа вӑл паллӑ пулӗ...
Халех ку вӑрттӑн туйӑма
Чӗри хӑрать-ҫке калама.
Хӑй хӗрӗн хурлӑхӗ ҫинчен
Халь амӑшӗ пӗлес пулсан,
Генерала памастчӗ, тен...
Анчах тӗрлӗ чӗреллисем
Пулаҫҫӗ ҫавӑ аннесем...

Кунсем иртеҫҫӗ ирӗкре—
Петруҫ шкула каять, килет,
Тем те пӗр вуласа пӗлет.
Яш генеральша—чечекре.
Мухтать ыр ӗҫшӗн пӗтӗм ялӗ,
Мухтать ӑна халь генералӗ.

Часах йӑлтах ак ирӗкри ҫын
Пулать хай Петӗр. Хелленe
Каллех ак Киев хулине

Ăна леçеççĕ вĕренмешкĕн.
Вĕрентрĕç. Ак ăна чĕнмешкĕн
Пуçларĕç ĕнтĕ çĕнĕлле:
Ăна халь панич темелле,
Хулсем таран ун кăтрисем,
Тути çинче—йăм майăхсем.
Тата... анчах та хальхинче
Ун ĕмĕт-туйăмĕ çинчен
Калаçар мар-ха. Хура куçлă
Яш генеральша епле пуçлĕ
Шухăшлама халь?..

Таса турамăш умĕнче
Çурта çунса ларать ирччен.
Куççулĕ пани юхтарать,
Ÿке-ÿке вăл пуççапать:
„Итле мана, таса турамăш,
Эс çылăха кĕме ан пар;
Чун тамăка ман туртăнасшăн,
Чуна эс сыхласа хăвар!"
Анчах вăл кăлăхах кĕлтурĕ.
Тăнне çухатрĕ-çухатрех:
Яш Петĕре-çке çав мăнтарăн
Юратнăçемĕн юратрех.
Лăпкăлăхне йăлтах çухатрĕ,
Мĕнпе çĕнтерĕн чĕрене!
Вăл тем тума та ĕнтĕ хатĕр.
Пĕччен пуçпа çак çулсене
Ун ирттерес-и? (Хурлăх, хурлăх!)
Иртсе кайсассăн, вĕсене
Çук, тавăраймăн!.. Çылăх урлă
Сиксе каçма пулатчĕ пулĕ,
Вара тăкмастчĕ, тен, куççулĕ,
Анчах чармарĕ туйăмне,
Юласшăн пулчĕ савăнса...
Ма пурăнас яшка сыпса,
Пăтă çиме май пур чухне!
Пăтти, паллах, пирĕнни мар,—
Пирĕн текех çитмест тăвар.

— Петруçăм! Ывлăм! Савнă тусăм!

Хӑтар мана! — тет вӑл пӗрре. —
Ой, ҫурӑлса тухать-ҫке пуҫӑм!
Пӗр пӗрчӗ вӑй ҫук чӗремре.
Турамӑш! Чунӑма ҫӑлсамччӗ,
Кичемлӗхрен эс хӑтарсамччӗ! —
Тесе йӗрет вӑл, ылханать
Ҫуратнӑ ашшӗ-амӑшне,
Хай пурнӑҫне, ҫут тӗнчене.
Петруҫӗ, киле кӗртнӗ ывӑл,
Пӗр хуйхӑ-суйхӑсӑр, сып-сывӑ,
Ир умӗн сӗм-тӗттӗм садра
Тек ӗнӗрленӗ пӗр юрра.
А пани пур—лӑпланаймасӑр
Асапланать:
— Мӗскер тӑвас?
Шыва сиксе шыва путмасӑр,
Е пуҫӑма ҫапса ҫурмасӑр
Епле юлас, епле чӑтас?..
Е Киева тухса каям-ши?
Каллех турра эп кӗлтӑвам-ши?
Тен, турӑ ҫӑлӗ ҫылӑхран?
Ҫӑлаймасассӑн... Ҫырантан
Чӑмам-ши пӗреххут Днепра, —
Ҫӑлех чун ҫуннӑ вӑхӑтра!

Пуҫҫапӑр пӳлӗхҫе, хӗрсем,
Ан пултӑрах пурнӑҫӑрта
Кун пек: ыйтмасӑр хӑвӑртан
Генерала е мӑн ҫурта
Сире ан сутчӑр аннӗрсем.
Ҫур кунӗнче юратса юлӑр!
Юратмалли ҫынсем пурах.
Укҫашӑн, тупӑшшӑн ан пулӑр.
Пӗчӗкҫӗ, тӑвӑр кил-ҫуртрах
Телейлӗ, ҫамрӑк та таса
Пулать ҫын — ыррӑн юратсан,
Вара ыр туйӑмӑр сиртен
Нихҫан та писмӗ ӗмӗрте.
Мӗскер курас-ха ӗнтӗ сан,
Превосходительство пики?
Ҫапла пулаҫҫӗ-и савсан?

Халь тин мӗн тутӑр сан пекки
Турамӑш пек илемӗпе?
Сан ыйхуна, сан яш пуҫна
Камах сыхлатӑр? Канӑҫна
Петруҫ вӑрларӗ пӗтӗмпех.
Сыхлаймӗ вӑл та тек сана.
Халь сан пулас шӑпу ҫинчен
Эп каламашкӑн та хӑратап...

Эс кайрӑн Киева. Кӗлтурӑн
Почаевски мӑнастырьте,—
Ҫук, ҫук, ҫӑлмарӗ сана турӑ,
Ҫӗлен пек туйӑм чӗрӳнтех.
Нумай кӗлтурӑн, йӗтӗн эсӗ.
Ҫапах та, лапланма пӗлмесӗр,
Кӑшт наркӑмӑш анчах калле
Эс илсе таврӑнтӑн киле.

Виҫ кун ҫимен, виҫ кун ӗҫмен,
Куҫна хупман шӑп виҫ каҫчен.
Хура шӑрҫа пек куҫусем
Йӑлт путса кӗчӗҫ; тутусем
Типсе шуралчӗҫ; ҫурҫӗрте
Пӑшӑлтатса ҫӳретӗн тем.
Эрне ҫапла асаплансассӑн,
Наркӑмӑшна эс ирӗлтертӗн,
Генерала ӑна ӗҫтертӗн,
Ху выртрӑн та сывларӑн ассӑн:
— Ҫӑва ваттишӗн хатӗр те!
Ҫамрӑккине халь йышӑнам,
Хавасӑ пурнӑҫпа пурнам
Чунтан юратнӑ Петӗрпе,—
Тесе йӑпатрӑн эс хӑвна.
Выртсан—ҫухатрӑн ыйхуна:
Ир пуласса кӗтнӗ ҫӗртех
Ҫутӑласран та ху шиклентӗн.
Ак чан сасси кӗрлет ирех—
Эс пытару кӗвви илтетӗн,
Туян—хӑрушӑ сас-хура
Ҫӳрет те ӗнтӗ халӑхра.
Пана курма пурте пыраҫҫӗ:

— Наркăмăшпа...—пăшăлтатаççĕ.
Суд таврашне пулас кĕтеççĕ,
Часах шăпланчĕç—ав çитеççĕ.
Касаççĕ панăн хырăмне,
Тупаççĕ наркăмăш шывне.
Пур халăхран та акăш-макăш
Хăруш тĕпчев пуçланчĕ акă:
— Ну, калăр, кам вĕлернĕ, э?..
Çынсем кĕрлеççĕ:—Пани! Пани!..
Петруç тухать пусма çине,
Пур халăха калать вăл:
— Ман ĕç.
Эсир пĕлместĕр нимĕн те.
Пĕччен вĕлертĕм эп ăна.—

Ак, сăнчăрларĕç йĕкĕте,
Тытса ăсатрĕç хулана.

Нумай тытмарĕç тĕрмере,
Тăсмарĕç вăрăма судне.
Хыт сăнчăрларĕç те тепре,
Хыртарчĕç кăтрашка çӳçне.
Ун çулĕ пулчĕ пит инçе,
Сăнчăр сасси çав çул çинче
Çĕпĕрелле янраса кайрĕ...

*1850*

*Оренбург*

* * *

Эсир, улпут ывӑлӗсем,*
Хресчен макӑрнине пӗлсен,
Пуш сӑмахсем ҫаптармӑттӑр,
Турра питех мухтамӑттӑр.
Эсир мӑшкӑлласа кулатӑр:
Сайралӑхри хресчен пӳртне
Райри пахча тесе калатӑр.
Пӗлетӗп эпӗ рай мӗнне,
Унта эп тӑкнӑ куҫҫульне
Ача чухнех. Унти пек тарӑх,
Унти пек терт курман пуль халӑх.
Эсир куҫран ав кӗл сапатӑр!

Ҫав шур пӳрте, эсир пӗлес-тӗк, —
Суя! — райри пахча теместӗп.
Ял вӗҫӗнчи пӗччен пӳртре
Ҫуралнӑ эпӗ хӗнлӗхре.
Анне кипкепеле чӑрканӑ,
Чун татмӑш юррине юрланӑ,
Вара ӑна мана пилленӗ,
Вара эп тамӑкра „киленнӗ",
Ҫӑтмахра мар. Пире асаплӑх
Ҫут кун паман лӑш сывламалӑх.
Турра ӳпкелесе илме
Е кӗлтума та май килмен.

---

* Ку сӑвва буржуалла-либералла писательсене хирӗҫ ҫырнӑ, вӗсем крепостла хресченсен пурнӑҫне илемлетсе, яла ҫӗр ҫинчи рай вырӑнне хурса ҫырса кӑтартнӑ. Шевченко, ҫав суяна хирӗҫ пырса, хресченсен пусмӑрлӑ пурнӑҫне тӗрӗс сӑнласа кӑтартать.

Хĕн-хур тӳссех аннеçĕм вилчĕ,
Чечен чунне нушах-çке илчĕ.
Вара... атте те чăтаймарĕ,
Ача пек пирĕнпе уларĕ.
Чуралăхрах вăл куçне хупрĕ,
Çĕре кĕрсен тин канăç тупрĕ.
Вара... айван тăлăх-турат
Курассине йăлтах курать...
Эп шкул валли тек шыв çĕклерĕм,
Пичемĕрсем тара çӳрерĕç
Улпут уйне-хирне. Унтан
Ăсатрĕç салтака ялтан.
Йăмăкăмсем, йăмăкăмсем!
Çап-çамрăк кăвакарчăнсем!
Эсир те хурлăх çеç куратăр,
Мĕнле кăна, мĕнле чăтатăр?
Çын сăмахне илтсе-çисе,
Пурнатăр çын çинче тӳссе,
Чуралăхрах вилсе выртатăр!

Эп çав пӳрте паян куна та
Сехĕрленсе çеç асăнатăп.
Çапла эпир—эй, атте турă!—
Кунти райра пурнатпăр тӳрĕ.
Таса, пуян çĕрӳ çинче
Халь тамăк тунă çут тĕнче.
Çăтмах—çӳлте, сан патăнта.
Аптăрамастăп-ха кунта:
Тăван тирне тăван сĕвет,
Этем ут вырăнне ĕçлет!
Çын тарĕпе хир шăваратпăр,
Тен, сан пилӳ çапла хушать-тĕр?
(Эс хушмасан, кунти райра
Тăкмастăмăр хура тара).
Эс хăвах мар-ши пĕлĕтрен
Саратăн тĕм-хура тĕтре?
Тен, эс пиртен, чăнах, кулмастни,
Улпутсемпе канашламастни
Çĕре тытса тăрас пирки?
Çапла-им-ха саккун йĕрки?
Сăна-ха, акă, пӳлĕх-турă,

Сайралăхра эс кӳлĕ курăн.
Вăл, тĕкĕр пек, çап-çутă, тикĕс,
Шыва кĕмешкĕн ан та—сик эс!
Хăвалăх пуç тайса ларать,
Мерчен ука эреш явать.
Чăнах та, туррăмăр, чăнах,
Кунта сăвап, кунта—çăтмах,
Анса курах, анса курах!
Тен, çыннусем сана ир-каçăн
Хĕрес хурса, савса мухтаççĕ?
Аюх! Кунта мăшкăл анчах!
Тар çеç! Юн çеç! Хĕн-хур пачах!
Сума сумаççĕ никама та,
Йĕреççĕ çеç кунта кун-каçăн.
Сисетĕп эп, çынсем сана та,
Сана, турра та, ылханаççĕ.

*1850*
*Оренбург*

* * *

Çап çутӑ, музыка янрать.
Е пĕр йĕрет вӑл, е кулать;
Таса алмаз пек йалтӑраççĕ
Хавас куççем хĕри-пӑраçӑн.
Телейлĕ шанчӑк вĕсенче,
Çав çылӑхсӑр чĕресенче!
Мĕн чуль хаваслӑх, вӑйӑ·кулӑ —
Пĕр эпĕ çеç кунта салхуллӑ,
Пĕр манӑн çеç куççуль тумлать,
Пуç усӑнать, пуç усӑнать...
Мĕншĕн тухать-ши ман куççулĕм?
Тухать—ман çампӑклӑх кунçулĕ
Мĕн ачаран, мĕн ачаран
Телейсĕр иртнĕ-кайнӑран.

*1850*

*Оренбург*

* * *

Ватă Днепр хĕрринче
Хăвапа палан ӳсет,
Хăвапа палан хушшинче
Вĕрене вĕлтĕртетет.

Хум пыра-пыра çапать,
Хум ун тымарне ватать,—
Ватă, тăлăх вĕрене
Тайăлать хумсем çине.

Калăн çавă: çуртсăр-йĕрсĕр,
Хура куçлă чипер хĕрсĕр
Пĕччене юлан казак вăл,
Ватăлса пыран казак вăл.

Вĕрене калать:—Тайăлам-ха,
Акă халь шыва чăмам-ха.
Казак калать:—Çӳрĕп, курăп,
Тен, эп савнине тĕл пулăп.

Паланпа яштак хăвийĕ
Шавлакан сенкер хум çийĕн
Çилпеле лăш тайăлаççĕ,
Пикесем пекех кулаççĕ:

Капăр тумлă, çут теветлĕ,
Телейпе вĕсем венчетлĕ,
Хурлăха-мĕне пĕлмеççĕ—
Иккĕш юрă кĕвĕлеççĕ.

*1860*
*Питĕр*

## ТĔЛĔК

Пĕр çамрăк, ывăннă хĕрарăм
Вырать улпутăн тыррине.
Тĕмсем çине ак пăхкаларĕ:
Ĕмĕртмелле ун ачине.
Вăл сулхăнта йĕрсе выртать,
Ун амăшĕ хуллен çывхарчĕ,
Чуптурĕ, саврĕ, кăкăр пачĕ,
Сисмерĕ, хăй ыйха путать.
Тĕлĕкĕнче курать: Иванĕ
Пуян, сăнран хитре, маттур.
Вăл—ирĕкре. Ун арăм пур,
Ăна та канлĕх, ирĕк панă.
Ани-çаранĕ те хăйсен,
Каçалăка тухаççĕ каррăн.
Апат кӳреççĕ ачисем...
Йăл-йăл кулса илет хĕрарăм.
Сасартăк тĕлĕк сирĕлет...
Чĕркерĕ ачине—ан пиçтĕр.
Хăй ахлатса çурла илет:
Сахал! тесе ятлать бурмистр.

*1858*

*Питĕр*

* * *

Пур-çке, пур-çке мăшăр хăмăр куçăм,—
Эх, аннеçĕм, кам çине пăхам-ши,
Эх, чĕремçĕм, кам çине пăхам-ши!

Пур-çке, пур-çке мăшăр çепĕç аллăм,—
Эх, аннеçĕм, кама ыталам-ши,
Эх, чĕремçĕм, кама çупăрлам-ши!

Пур-çке, пур-çке çăмăл урасем те,—
Эх, аннеçĕм, кампала ташлам-ши,
Эх, чĕремçĕм, кампала ташлам-ши!

*1859 ç. июнĕн 10*

*Пирятин*

* * *

Ман мĕскĕн тусăмçăм, тăванçăм,*
Манпа пĕрле тӳсен шăпамçăм,
Çырса çитмерĕ-ши пире?
Пăртаккăн вăрăм çул-йĕре
Урапана хатĕрлер мар-ши?
Каяр-ха, мĕскĕнĕм, канмашкăн
Леш тĕнчене çитех эппин.
Вăй та ĕлĕкхи мар халь тин,
Тусса та пĕтрĕмĕр, çапах та
Ăса та кĕтĕмĕр пуль, ахăр.
Çитет, каяр-ха çывăрма,
Чи юлашки пӳртре канма...
Ун пеккине эпир курман-ха...

Ах, халех сывпуллашмашкăн,
Тусăм, кирлĕ мар-ха;
Юнашар утса çӳресчĕ,
Çут тĕнче курар-ха.
Пăхса ил-ха эс, шăпаçăм:
Ха, мĕнле вăл аслă,
Аслă та вăл, сарлака та,
Çутă та хаваслă.
Юрĕ, çăлтăрăм, çӳрер-ха,
Хăпарар сăрта кĕç.
Çăлтăрсем—йăмăкусем пек
Тӳперен сутатĕç;
Пĕлĕт урлă çунса иртĕç,
Çиççе юлĕ çиçĕм...
Чим-ха, йăмăкăм, тăхтар кăшт,

* Ку—Шевченкон юлашки сăвви.

Ман таса савниçĕм!
Тӳрĕ сăмахпа, суймасăр,
Турра кĕлтăвар та,
Аякри çула каймашкăн
Ерипен тухар-тăр.
Тĕпсĕр те пăтранчăк Лета
Хĕррипеле иккĕн
Кайăпăр эпир, мана эс
Мухтавпа пехиллĕн!
Унччен-кунччен кĕрсе тухар-ха
Эпир кăшт Эскулап* патне,
Пуçа таяр-ха ун умне:
Вăл Харона**, тата леш Парка***
Текеннине улталĕ, тен?
Вара эпир, ват асатте
Эмелличчен, выртсах хăватлă
Пĕр эпопея çырăпăр,
Гекзаметрпа сывлăпăр,
Унтан мачча çине çав чаплă
Сăвăсене хăпартăпăр—
Шăши валли ирхи апатлăх.
Эпир нот тăрăх прозăна та
Тăсма пултарăпăр.
Тус-тантăш,
Инçе çулти чăн-чăн юлташ!
Кăвар сӳнмен-ха, ялкăшать кăшт,
Часрах Харон патне юртас.
Лета шывĕ тĕпсĕр тарăн,
Хумĕсем шавлаççĕ,—
Ишсе каçăпăр, мухтав та
Пирĕнпех, тен, каçĕ—
Çамрăк, вилĕмсĕр мухтавăм...
Тепĕр каласассăн—
Унсăр та пурнатпăр, тусăм!
Пăртак сывалсассăн,

* *Эскулап* — античнăй мифологинче чир-чĕртен тӳрлетекен турă.

** *Харон* — авалхи грексен мифологийĕ тăрăх, вилнĕ çынсен чунĕсене çĕр айĕнчи Стикс ятлă юханшыв урлă каçарса яракан.

*** *Парка* — авалхи грексен мифологийĕнче — пурнăç çиппине арлакан хĕрарăм-турă.

Ҫӑтмахра шӑп Флегетонӑн
Е Стиксӑн шывӗ хӗрринче
Хам анлӑ Днепрӑм патӗнчи пек
Асилӗп эп ҫӗршыв ҫинчен,—
Шур пӳрт лартса пахча эп ҫаврӑп,
Эс кӗрӗн манӑн пахчана;
Эп хирӗҫ алӑк уҫса ярӑп,
Пике пек лартӑп хам ҫумма.
Калаҫӑпӑр: тӗрленӗ Днепр,
Украйна, садсенчи пӳртсем,
Ҫеҫенхирти мӑн тӗмесем,
Унтан—юрра ярӑпӑр эпӗр...

*1861 ҫ. февралӗн 14—26*

*Питӗр*

## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*


Тарас Шевченко (*умсăмах*) . . . . . . . . . . . . . 3
Кĕрлет мăн Днепр, ахлатать вăл (*П. Хузангай куçарнă*) 25
Чăрсăр çил эс, чăрсăр çил (*С. Эльгер куçарнă*) . . . . . 26
Шухăш (*П. Чичканов куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 28
Шухăш (*П. Чичканов куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 29
Шухăшсем, пĕр вĕççĕр шухăш (*П. Хузангай куçарнă*) . . 31
Катерина (*Г. Ефимов куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 35
Тирек (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . . . . . . . . . . 55
Мĕнешкелччĕ куçхаршийĕм (*А. Малов куçарнă*) . . . . 61
Гайдамаксем (*А. Алга куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 63
Вăштăр-вăштăр вĕрет çилĕ (*С. Павлов куçарнă*) . . . . . 137
Гамалия (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 138
Тăмана (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 144
Тĕлĕк (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . . . . . . . . . . 151
Вырсарникун эп тухмарăм (*И. Иртышев куçарнă*) . . . 167
Мана ма пит йывăр (*С. Павлов куçарнă*) . . . . . . . 170
Н. В. Гоголе (*П. Хузангай куçарнă*) . . . . . . . . . 171
Ан ăмсанччĕ пуяна эс (*И. Иртышев куçарнă*) . . . . . . 172
Пуяна качча ан ил эс (*А. Артемьев куçарнă*) . . . . . . 173
Кавказ (*Н. Евстафьев куçарнă*) . . . . . . . . . . . 174
Кун хыççăн кун шуса иртет (*В. Алендей куçарнă*) . . . 180
Пехил (*П. Хузангай куçарнă*) . . . . . . . . . . . 182
Чечек (*С. Павлов куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 183
Вутăш (*Г. Ефимов куçарнă*) . . . . . . . . . . . . 186
Ах, пĕччен эп, пĕччен (*С. Павлов куçарнă*) . . . . . . 188
Вар, васан та вăрман (*И. Иртышев куçарнă*) . . . . . . 189
Пĕлместĕп, пурăнма тивет-и (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . 191
Эс аннӳне ан пăрахсамччĕ (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . 192
Мĕн-ма масар çине çӳретĕн (*В. Алендей куçарнă*) . . . . 194
Виçĕ çул (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . . . . . . . . 196
Н. Костомарова (*С. Эльгер куçарнă*) . . . . . . . . . 198
Çурт умĕнче чечен чие-çке (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . 200
Çава (*С. Павлов куçарнă*) . . . . . . . . . . . . . 201
Хĕвел анса ларчĕ, ту-сăрт хуралчĕ (*А. Кожанов куçарнă*) 202
Ун чух вунвиççĕреччĕ эпĕ (*М. Ястран куçарнă*) . . . . 203
Шухăшсем, тăванăмсем (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . . 205
Эп курнине никам ан куртăр (*Н. Александров куçарнă*) . 206

Ман пулинччĕ мăшăр аттăм (*А. Артемьев куçарнă*) . . . 20
Пурлăхлă та эп (*И. Ивник куçарнă*) . . . . . 20
Эп тĕл пултăм унпа (*Н. Александров куçарнă*) . . . . . 20
Мăшăра çула ăсатрăм (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . 21
Кĕпепе анне çуратнă (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . 211
Лаштра юман çине ларать те (*Н. Александров куçарнă*) . 212
Ой, анмасть сăра та, пыл та (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . 213
Леш хай Катя-Кĕтерукăн (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . 214
Çырмана шыв ăсма эпĕ антăм (*А. Эсхель куçарнă*) . . . 216
Мăйăра пĕрре эп кайрăм (*А. Артемьев куçарнă*) . . . . 217
Ту-сăрт урлă пасара (*А. Артемьев куçарнă*) . . . . . 218
Никама та çураçмастăп (*А. Эсхель куçарнă*) . . . . . 219
Вилсе выртрĕ ман атте те (*С. Шавлы куçарнă*) . . . 221
Петруç (*Н. Евстафьев куçарнă*) . . . . . . . . 222
Эсир, улпут ывăлĕсем (*С. Шавлы куçарнă*) . . . . . 229
Çап-çутă, музыка янрать (*П. Чичканов куçарнă*) . . . 232
Вата Днепр хĕрринче (*С. Павлов куçарнă*) . . . . 233
Тĕлĕк—„Пĕр çамрăк, ывăннă хĕрарăм“ (*С. Шавлы куçарнă*) 234
Пур-çке, пур-çке мăшăр хăмăр куçăм (*П. Чичканов куçарнă*) . . . . . . . . . . 235
Ман мĕскĕн тусăмçăм, тăванçăм (*П. Хузангай куçарнă*) . 236

---

87б5—
Пенсбиб... Державний ... Пенітрарній
ЕРМОЛ...

Редактор *Ал. Алга.* Худ. редактор *М. Силкина.*
Тех. редактор *Ил. Петров.* Корректора *К. Димитриева, Н. Деомидов.*

---

НТ 00903. Подписано к печати 22/III-1954 г. Объем 12,3 п. л.
Учетно-изд. 11,87. Бумага $84 \times 108^1/_{32}$. Тираж 3 000 экз. Заказ № 437.
Цена 5 руб. 60 коп.

---

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
*Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

чуваською

КМ-1462

ДМШ
N
N 568